К 83.39(=Чув)6
С76
Ч-43031

Чăваш халăх академийĕ
И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх
университечĕ

**Виталий СТАНЬЯЛ**

# 1941-1945 ÇУЛСЕНЧИ ЧĂВАШ ЛИТЕРАТУРИ

(Аслă шкул вĕренекенĕсемпе вăтам
шкул вĕрентӳçисем валли)

Национальная библиотека ЧР
4-043031

Обязат. экз. К83.3Ч(=чув)6 С76

Чăваш халăх академийĕ
И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ

## Виталий СТАНЬЯЛ

# 1941-1945 ÇУЛСЕНЧИ ЧĂВАШ ЛИТЕРАТУРИ

(Аслă шкул вĕренекенĕсемпе вăтам шкул вĕрентӳçисем валли)

Шупашкар
«Çĕнĕ Вăхăт»
2010

ББК 82.512.111.0
УДК 83.3(2Рос.Чув)
С 77

*Чăваш халăх академийĕн Канашĕ йышăннипе пичетленĕ «Вĕрентекене пулăшма» ярăмран*

**Станьял В.П.**
С 77 **1941-1945 çулсенчи чăваш литератури:** вăтам тата аслă шкулсем валли хатĕрленĕ тишкерӳ. – Шупашкар, «Çĕнĕ Вăхăт», 2010. – 112с.
**Станьял В.П.**
С 77 **Чувашская литература 1941-1945 годов:** для средних и высших учебных заведений (на чув. яз.). – Чебоксары, «Новое Время», 2010. – 112с.

Полувековой педагогический стаж автора брошюры В.П.Станьяла, продолжающийся без перерыва с 1959 года, тесно связан с изучением и преподаванием национальной культуры, фольклора и литературы. Студентам, педагогам и учителям предлагаются лекции, читаемые им с 1975-76 учебного года студентам факультетов чувашской филологии и культуры ЧГУ им. И.Н.Ульянова и ЧГПУ им.И.Я.Яковлева.

Проверено 07 НОЯ 2017

© Чувашская народная академия, 2010
© Факультет чувашской филологии ЧГПУ им. И.Я.Яковлева, 2010

Ч-43031
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
РЕСП

## XX ĔМĔРТИ ЧĂВАШ ЛИТЕРАТУРИН ИСТОРИЙĔ: 1941-1945 çç. çыравçăсемпе хайлавсем

*(Аслă шкулта вĕренекенсемпе вăтам шкулта ĕçлекенсем валли)*

*Кăтартусем:*


Пĕлÿ хапине палăртни .................................................. 4
Усă курма сĕннĕ ĕçсем .................................................. 5
Вăрçă çинчен çырнисем: асилÿсем, мемуарсем, чăнлавлă хайлавсем.
Пăрăнмасăр вуласа тухмалли хайлавсем ................ 5
Аслă вăрçă вăхăтĕнчи сăмахлăхăн шкул кĕнекисенчи вырăнĕ. .................................................. 7


*Тупмалли Кÿртĕм:*


**I. Паттăр вăхăт сăмахĕ**
1.1. «Пĕтĕмпех фронтшăн, Çĕнтерÿшĕн!» ................ 8
1.2. Фронтовик-çыравçăсен хастарлăхĕ .................. 12

**II. Тăван Çĕршыв аслă вăрçинче пуç хунă çыравçăсем:**
2.1. Вăрçă хирĕнче ÿксе юлнă çамрăксем ............. 18
2.2. Редакцие таврăнайман журналистсем ............. 21
2.3. Вĕçленмен юрă-сăвă; кĕнекесĕр тĕрленчĕк-калав ... 33

**III. 1941-1945 çулсенчи литературăн паттăрлăхĕ:**
3.1. Сыхлăха манмасса... ........................................ 38
3.2. Чăваш çыравçесен фронтри сăмахĕ ................ 41

**IV. Тăван çĕршыв аслă вăрçи вăхăтĕнчи чăваш поэзийĕ:** .. 50
4.1.Паттăрлăх лирикин тĕп жанрĕсемпе паллисем ....... 56
4.2. Вăрçă вăхăтĕнчи лиро-эпика ........................... 76

**V. Вăрçă вăхăтĕнчи çар прози** ........................................ 83
5.1. Чăваш çыравçисен хаçат-журналти публицистики .................................................. 84
5.2. Çырусен, тĕрленчĕксемпе очерк-калавсен, повеçсен тĕп паллисем .................................................. 90

**VI. 1941-1945 çулсенчи чăваш драматургийĕ**
6.1. Вăрçă вăхăтĕнчи пьесăсем ................................ 96
6.2. Пичетленнĕ тата лартса панă хайлавсен пĕлтерĕшĕпе пахалăхĕ ..........................................100

**VII. Вăрçă вăхăтĕнчи литература критики** ................... 105
Вăрçă вăхăтĕнче пичетленнĕ кĕнекесем ........................... 106

**Литература** .................................................................. 111

*Пĕлӳ калăпăшне палăртни.*

Тăван çĕршыв (Чалтан) аслă вăрçи çулĕсенчи (1941-1945) лару-тăрупа чăваш литературин пĕтĕмĕшле ӳкерчĕкĕ. Фронтри тата тылри çыравçăсем. Çапăçура пуç хунисем. Чăваш журналисчĕсемпе писателĕсен çар хаçатĕнчи ĕçĕ-хĕлĕ.

Вăрçă çулĕсенчи литературăн тĕллевĕсем, майĕсем тата шухăшпа илемлĕх мелĕсем çĕнтерӳ хавхипе çыхăнса тăни. Халăх сăмахлăхĕн витĕмĕ хăпарса кайни. Литературăра халăхлăх туйăмĕ, документлăх, тӳррĕн харкамлăх, лирикăллă-публицистикăллă шухăш-туйăм, паттăр та чăтăмлă çын сăнарĕ мала тухни.

Васкавлă жанрсем хăвăрт аталанни: çыру, чĕнӳ, тупа, такмак, кулăш, питлев, ылхан, юрă, мухтав, тĕрленчĕк, ĕлкĕ, очерк, новелла, калав, фельетон, памфлет, лирикăн паттăрлăхпа юрату тĕсĕсем, сценкăсем, инсценировкăсем, поэмăпа халай (повеç) кĕске тĕсĕсем. Хайлавсен тĕп ыйтăвĕсем, никĕсри хавхисем: салтаксен çапăçури паттăрлăхĕ, тăшмана курайманни, фронтпа тыл пĕрлĕхĕ, туслăхпа тăванлăх вăйĕ.

Сăмахлăхăн виçĕ ĕречĕ – эпика, лирика, драма – харăссăн талпăнса аталанни.

Публицистикăпа поэзи маларах пынин сăлтавĕсем. Сăвă-юрăра лирикăпа эпика пĕрлешсе вăйланни. Поэзири гражданлăхпа (элтешлĕхпе) çынлăх (гуманизм) витĕмĕсем, шанăçпа мăнаçлăх, юратупа курайманлăх, паттăрлăхпа çирĕплĕх, синкерлĕхпе чăтăмлăх, тунсăхпа туслăх, пĕрлĕхпе ĕмĕт кĕвви вăйланнин пĕлтерĕшĕ. П.Хусанкай, Я.Ухсай, А.Алка, И.Тукташ, К.Кольцов, В.Бараев тата С.Элкер, И.Ивник, С.Шавлы, Н.Шелепи хайлавĕсенчи хавха, кăмăл-туйăм, сăмах пуянлăхĕ.

Прозăра вăрçă чăнлăхĕ, документлăх мала тухни, хайлавсенче çивĕч публицистика сулăмĕ, психологи тӳрĕлĕхĕ, питлевпе тарăху туртăмĕ пуç пулса тăнин пĕлтерĕшĕ. Н.Илпек, М.Кипек, Хв.Çитта, М.Чалдун, Л.Агаков, С.Аслан, К.Пайраш, А.Талвир хайлавĕсен поэтика хăйнеевĕрлĕхĕсем.

Вăрçă вăхăтĕнчи чăваш драматургийĕн сюжетпа конфликт йĕрĕсем, сăнарсен тытăмĕ тата паттăрлăх хавхине тивĕç ăсталăхĕ. И.Максимов-Кошкинский, А.Кăлкан, Н.Айзман, А.Эсхель пьесисен пахалăхĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче пичетленнĕ кĕнекесем. Куçарусем. Вырăс литературин витĕмĕ.

Паттăрлăх хавхин ĕмĕр сӳнми хăвачĕ.

***Тĕпчевсем:***

Дедушкин Н.С. Аслă Çĕнтерӳ çулĕпе: Тăван çĕршыв аслă вăрçи чăваш литературинче. – Ш., 1985.

Дедушкин Н.С. Пăшалпа та, перопа та... Ш., 1970. (ç а в а х – вырăсла, Чувашская литература периода Великой Отечественной войны. Ч., 1962; ç а в а х – История советской многонациональной литературы, том 3, М., 1970, с.508-615; ç а в а х – Чăваш совет литератури.Ш.,1972, 209-277 енсем).

Сироткин М.Я. Очерк истории чувашской советской литературы. Ч.,1956, с.245-266.

Память солдатского сердца. Вып. 2. Сост. А. Николаев. Ч., 1980, (Очерки о Б. Шашкове – 9 с.; Ф.Ситта – 65 с.; В. Алагере – 98 с.; И. Алексееве – 105 с.; Н. Чурбае – 129 с.; К. Кольцове – 137 с.; П. Евгеньеве – 167 с.; И. Краснове – 189 с.). Вып. 3, 4. 6 (Н.Ильбек, М.Якимов, В. Долгов и др.).

**Хушса панă литература:**

Агаков Л.Я. Кĕнекесем вут-çулăмра çуралнă (аса илсе çырнисенчен). – «Тăван литература утăмĕсем» кĕнекере, Ш.,1974, 194-207 енсем.

Агаков Л.Я. Нихçан та манас çук. – «Салтаксем» кĕнекере. Ш., 1975. – 303-980 енсем.

Семенов Ю.С.. Çĕршывăн хастар ачисем. Ш.,1976.

Эсхель А.А. Чăваш литератури. Ш.,1948, 33-67 енсем.

Григорьев Н.Г. Вилĕме вилĕмпе çĕнтерсе. – Ялав, 1975, 5.

Никитин В.П. Ячĕсем чыслăн упранĕç. – Чăваш журналисчĕ. 1968 (ятарлă хаçат).

Вĕсем Тăван Çĕршывшăн çапăçса вилнĕ: (М.Митрофанов, А.Григорьев, С.Константинов). – Коммунизм ялавĕ, 1958, февралĕн 28-мĕшĕ.

Çапăçса вилнĕ поэтсем (В.Усли, М.Ястран, К.Кольцов, В.Бараев). – Ялав, 1946, 7-8.

Тăван Çĕршывшăн паттăррăн çапăçса пуçне хунă поэтсен сăввисем: А.Е.Алга. Ырă ят (статья): А.Петтоки, В.Бараев, В.Усли, К.Кольцов, М.Ястран. – Ялав, 1946, 6-7. – 33-37 енсем.

***Пĕрăнми вуламалла:***

Агаков Л.Я. Фронтри ачасем. – Тăван юншăн. – Çапăçу хирĕнче. – Пĕчĕк партизансем. Ялав. Медаль.

Айзман Н.С. Патриотсем. – Лиза Короткова.

Алга А.Е. Эпир – малтисемчĕ. – Юншăн-юн. – Бранденбург хапхи умĕнче.

Аслан С.С. Разведчик Комков. – Засадăра. – Гварди капитанĕ Кириллов. – Илейкинпа Парнейкин.

Васькин В.Н. Тăван çĕршĕн çĕклен.

Данилов-Чалдун М.Н. 34-мĕш атака умĕн.

Долгов В.А. Тăван Çĕршыв (прозăлла сăвă). – Тĕлĕнмелле винтовка.

Мучи И.И. Йĕтем çинче.

Кашкăр Микули. Тĕп пултăр фашист. Çĕнтерӳ юррисем. – Сехет çитет пĕтесси.

Кипек Д.А. Тăван Çĕршывшăн. – Ягуар.

Малгай И.Г. Манас çук эс ăна.

Петтоки А.Т. Тăшман çине (На врага!)

Саламбек И.Я. Иксĕлми шанчăк.

Çитта Ф.А. Фронтри паттăрсем.

Талвир А.Ф. Харсăр çынсем. Каçик.

Тукташ И.С. Хĕвел. Шурă кăвакарчăн.

Турхан К.С. Пулеметчик Иван Смирнов..

Уйăп М.Д. Салтак амăшĕ.

Ухсай Я.Г. Хурçă та çуннă чух.

Уяр Ф.Е. Куçукпа Хураçка.

Хусанкай П.П. Тупа. Таня. Аптраман тавраш.

Шавлы С.А. Йыхрав. Поэт сасси. Киев пионерĕ.

Шелепи Н.И. Чĕнетĕп!

Элкер С.В. Вăл вилĕмсĕр. Тĕп пултăр фашизм!

Эсхель А.А. Ăмăрткайăк. Вырăс хăярĕ.

Ястран М.Г. Çĕнтерӳ ялавĕ.

***Пĕлсе тăма:***

Михаил Петров. Михала салтак: пĕрремĕш тĕнче вăрçинче тӳсни çинчен. 1932 çулта çырнă асилӳ. – Ш.,1971.

Яков Муратов. Çапăçу хирĕнче: фронтра çырса пынисем, асилӳсем. – Ш.,1968.

Александр Парминов, Мухтав орденĕн тулли кавалерĕ. Сказание о прожитых годах. Ч., 2006.

Прохор Трофимов. Сталинград хирĕнче. Ш., 1996.

Георгий Орлов. Вут-тăвăллă çулсем: роман. – Ш.,2004.

Сергей Юшков. Вут-çулăмлă çил-тăвăл: роман. – Ш., 2000.

Иван Тенюшев. Виççĕн кăна юлнă: роман. – Ш., 2004,

***Шкул кĕнекисенче пурри:***

Чăваш литератури. 8 класс валли. 2003: Çĕршывăмăр, Тăван Çĕршыв. – 200-232 енсем; Н.Ф.Илпек 1915-1980). Госпитальте (калав). – В.А.Урдаш (1924-1973), Пурнас килет (поэма).

Чăваш литератури. 9 класс валли. 2003. XX ĕмĕр варринчи чăваш литератури (40-50-мĕш çулсем) – 163-228 енсем; А.Е.Алга (1913-1977) сăввисем; – П.П.Хусанкай (1907-1970), Аптраман тавраш (сăвăллă роман); – А.С.Артемьев (1924-1998), Симĕс ылтăн (халай).

Чăваш сăмахлăхĕ. 10 класс валли. 2-мĕш пай.1996. Вăрçă вăхăтĕнчи чăваш сăмахлăхĕ, 283-464 енсем (Çыравçăсен кĕске биографийĕсемпе хайлавĕсене панă).

Чăваш литератури. 10 класс валли. 2003. – Н.С.Айзман (1905-1967) – 244 ен. – Вăрçă вăхăтĕнчи поэзи – 254-256 енсем.

Чăваш литератури. 11 класс валли. Л.Я.Агаков (1910-1977) – Иккĕмĕш тапхăр, 75-77,86-94 енсем; – А.Е.Алга (1913-1977), 99-102, 106 енсем; Вăрçă вăхăчĕ – 142-144 енсем; 1941-1945 çç. уйрăммăн палăртман, 1930 – 1945 е 1935 – 1950 çулсем тесе пăхса тухнă.

***<u>Лайăххăн пăхса тухмалла:</u>***

Великая Отечественная война 1941-1945: Энциклопедия. – М., 1985.

История второй мировой войны 1939-1945. 1-12 тт. – М., 1973-1982.

# I. ПАТТĂР ВĂХĂТ СĂМАХĔ

Аслă шкулпа вăтам шкулăн литература программисемпе кĕнекисем Тăван çĕршыв Аслă вăрçи çулĕсенчи тата вăрçă хыççăнхи вунăçуллăхри çар сăмахне пысăка хурса палăртаççĕ. Ку тапхăра тĕпченĕ ĕçсем теçетки-теçеткипе тухрĕç, анчах чăваш литературин 1941—1945 çулсенчи утăмĕсене Н.С.Дедушкин тĕпчевçĕсĕр пуçне тĕплĕ тишкерекенĕ вăрах хушă пулмарĕ. Унăн «Аслă çĕнтерӳ çулĕпе» (1985) кĕнеки халиччен пичетленнисенчен туллиреххи, пĕтĕмлетӳллĕ каланă сăмах. Çав сăмахсене никĕсе хурса, эпир вăрçă вăхăтĕнчи сăмахлăха хушса, анлăлатса пăхăпăр.

Авалхи халапсемпе сĕрен вăййин сăмахĕсенче «отечество», «отчизна» сăмахсен пĕлтерĕшллĕ «чалтан» сăмах тĕл пулать. Çавăнпа «Тăван çĕршыв аслă вăрçи», «Аслă Аттелĕх вăрçи» вырăнне Чалтан вăрçи» теме те юрать.

Чăваш çыравçисем вăрçă вут-çулăмĕ витĕр çĕнтерӳпе тухрĕç. Фронтра тăшманпа хире-хирĕç тăрса, совет салтакĕсен вăрçăри паттăр ĕçĕсене хăйсен куçĕпе курса, вĕсем чăн пурнăçран илнипе шайлаштарса, вăрçă хыççăн та чылай сăвă-поэма, повеçсемпе романсем, пьесăсем пичетлесе кăларчĕç. Çав вăхăтрах фронтран таврăннă çамрăксем те литература ĕçне хастарлăн хутшăнчĕç. Юлашки çулсенче вара вăрçăра пулман çамрăксем çарпа патриотизм темипе самаях витĕмлĕ хайлавсем çырчĕç.

## 1.2. «Пĕтĕмпех фронтшăн, çĕнтерӳшĕн!».

Юлташăмăрсем, тăххăрмĕш хум —  
Юлашки хум — çапать хаяррăн,  
Тăрсамăр пурте вырăна,  
Вăрçма хатĕрленĕр патвăррăн!  
Чи юлаши таса вăрçа —  
Чăн çутăшăн, таса тĕнчешĕн!  
Çав тăххăрмĕш хума ватар!  
Васкар телей çĕрне çитмешкĕн.  
(Çеçпĕл Мишши. «Хĕрлĕ тинĕсре», 1919).

1941 çулхи çĕртмен 22-мĕшĕнче фашистла Германи Совет Союзĕ çине хурахла тапăнсан Тăван çĕршывăн аслă вăрçи - Чалтан вăрçи пуçланнă. Пайтах ĕмĕр иртĕ, анчах 1418 куна

пынӑ вӑрҫӑра халӑх тӗлӗнмелле паттӑрлӑх кӑтартнине, Аслӑ Ҫӗнтерӳшӗн ҫӗрне-кунне пӑхмасӑр ӗҫленине тӗнче историйӗ манса кайма пултараймӗ.

Вӑрҫӑ СССРти 28 милион ҫын пурнӑҫне татнӑ. Фашистла пуҫ касансем ҫӗршыври 1710 хулана аркатнӑ, 70 пин ытла яла ҫунтарса янӑ. Пайтах хура-шур курма лекнӗ халӑха, пурнӑҫпа вилӗм хушшинчен иртме тивнӗ. «Эпир нимӗнле йывӑрлӑха та парӑнмарӑмӑр, нимӗнле хӗн-асап умӗнче те пуҫа усмарӑмӑр. Вӑйлӑ хӗҫпӑшалланнӑ тӑшманпа Улӑп-паттӑр пек харсӑр ҫапӑҫса, чаплӑ ҫӗнтерӳ турӑмӑр. Гитлер хурахӗсем хӑйсен вилӗмне хӑйсен хура йӑвинчех тупрӗҫ», — тенӗ вӑрҫӑ вӗҫленсен.

Тӑван ҫӗршывӑн Аслӑ вӑрҫи малтанхи кунран пуҫласах пӗтӗм халӑх вӑрҫи пулса тӑнӑ. «Тӑван ҫӗршыв хӑрушлӑхра!», «Пӗтӗмпех фронт валли, пӗтӗмпех ҫӗнтерӳ валли!», «Пӗтӗм вӑя тӑшмана аркатма!» — ҫак лозунгсем ҫынсене ура ҫине тӑратнӑ, ялав вырӑнне пулнӑ.

1941—1945 ҫулсенчи вӑрҫӑ вӑхӑчӗ, ун хыҫҫӑнхи уралану ҫулӗсем калама ҫук йывӑр иртнӗ Вӑл вӑхӑт пирӗн куҫ умӗнчен кайман-ха. Ӑна ас тӑвакансем нумай.

Ҫав нушаллӑ, юнлӑ, вилӗмлӗ ҫулсенче чӑваш ҫыравҫисем тӑван халӑхпа пӗрле пулнӑ. Вӗсен тӗрлӗ сӑмахӗ йывӑрлӑха чӑтса irrterme пулӑшнӑ, шанчӑк панӑ, ӗненӗве вӑйлатнӑ. Паттӑр ҫынсен таса сӑмахӗсем паян та вилӗмсӗр» (Ч.Л., 8 кл. валли, 2003, 202 с.).

«Фашистсем пирӗн Тӑван ҫӗршыв ҫине ултавлӑн, сӗмсӗррӗн, вӑрӑ-хурахла тапӑнса кӗни совет ҫыннисене калама ҫук тарӑхтарса янӑ. Тӑнӑҫ ӗҫпе пурӑннӑ ҫынсем тӑшман эшкерӗсене хирӗҫ ҫӗкленнӗ, аякри тылри халӑх фронта туртӑннӑ. Салтак ҫулӗ ҫитмен яш-кӗрӗм ҫар комиссариачӗсене пырса тулнӑ. Хӗрупраҫ та фронта яма ыйтнӑ. Тӑванӗсем хаяр ҫапӑҫура пуҫ хуни ҫинчен пӗлсен, ватӑсем те чӑтса тӑрайман, фронта кайнӑ. Вӑтам шкулта вӗренекен Валентин Урдаш, ҫулне пысӑклатса кӑтартса, хӑйне салтака яма ыйтнӑ. Ӳпке чирӗпе аптӑракан Илле Тукташ поэт та, хӑй чирлине тухтӑрсенчен пытарса, тӑшманпа ҫапӑҫнӑ. Ывӑлӗ вилни ҫинчен хут килсен, ватӑ писатель, граждан вӑрҫи паттӑрӗ М.Данилов-Чалдун ҫар комиссариатне хӑйне ҫара илме ыйтса хут панӑ. «50 ҫула ҫитнӗскер, хам ирӗкпе вӑрҫӑ ҫынни пулса тӑтӑм... Виҫӗ хут вӑрҫӑра пулса, виҫӗ хут ҫӗнӗрен ҫуралса ӳсрӗм эпӗ, — тесе

çырнă вăл 1942 çулта Шупашкарти тусĕсем патне «34 атака умĕн» çырăвĕнче. — Фашистсем манăн пĕртен-пĕр юратнă ывăлăма вĕлерчĕç. Ун вырăнне эпĕ вĕсене çĕр хут тавăрăп! Эпĕ — ашшĕ. Манăн ватă алă чĕтресе тăмĕ».

Çук, чĕтремен совет çыннисен алли те, чунĕ те аслă вăрçă хирĕнче. Аптраса ӳкмен тылри ял-хула та. «Пурте — фронтшăн, пурте — çĕнтерӳшĕн!» — çапла пулнă ун чухнехи лозунг. Тăван çĕршыв пурне те ура çине тăратнă.

Вăрçă хирне кайма хăват çитерейменнисем — Пĕрремĕш тĕнче вăрçинчех аманса пĕтнĕ ватă Ç.Элкер, пач суккăр Н.Шелепи, асат хуçнă К.Чулкаç, йывăр чирленĕ И.Ивник, Стихван Шавли, Степан Аслан, В. Давыдов-Анатри, ялти шкулта ачасене вĕрентекен Марфа Трубина, ватăлса пăшал тытасран иртнĕ П.Осипов, И.Мучи, йывăр аманса таврăннă Хветĕр Уяр хăйсене фронтри пек туйнă. Вĕсем сахал йышпа хаçат-журнал, кĕнеке те брошюра кăларнă, фронтпа тылра аманнă салтаксемпе, ялти ватă-вĕтĕпе çыхăну тытнă. Вăрçă çулĕсенче вĕсем пурте хăйсен чи паха хайлавĕсене çырма хăват çитернĕ.

Тăван çĕршыв ирĕкĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пынă хаяр вăрçă тĕнче историйĕшĕн пĕчĕк самант кăна. Этемлĕх историйĕн çав тăвată çулĕ çине малашнехи çынсем те чарăна-чарăна тăрса пăхĕç, унта мĕн пулни çинчен çырнине тимлесе вулама тăрăшĕç. 1941—1945 çулсенче асар-писер çаврăннă вăрçă историне тĕрĕссĕн çырса пĕтерейймен-ха. Совет Союзĕ пăшал айне 34 млн салтак тăратнă. Вĕсенчен 11 млн салтак çеç сывă юлнă. Унăн халиччен паллă пулман страницисем çулсерен тупăнаççĕ, фашизм тискерлĕхне хирĕç паттăррăн çапăçнă çынсен ячĕсем тĕрĕс-тĕкеллĕн таврăнаççĕ.

Вăрçă пуçланнă чухне 18 çула пуснă каччăсенчен (1923 çулта çуралнисенчен) вунă çын пуçне иккĕшĕ кăна аманса-сусăрланса вăрçă хирĕнчен таврăннă, ыттисем вара юнлă вут-çулăмра — çын çӳремен шурлăхра, кайăк ларман ту хысакĕнче, кашкăр кĕмен вăрман чăтлăхĕнче, суха касси витмен пăрлак тăвайккире — Тăван çĕршывăн кашни утăмĕнче — тискер тăшманпа çапăçса, выртса юлнă.

Совет халăхĕ питĕ лайăх пĕлсе тăнă: Тăван çĕршыва вăл хăй кăна хӳтĕлесе хăварма пултарать, ăна аякран никам та пулăшаймĕ те, пулăшас та темĕ. Фашизма çĕнтерсе, аслă ăру Тăван çĕршыва, Раççее, унăн ирĕкĕпе малашлăхне сыхласа

хăварнă. Çавăнпа пирĕн паттăрсен ĕçне-хĕлне нихçан та манмăпăр, ăна хамăр хастарлăхпа пуянлатса пырăпăр.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи (авалхи сăмахпа каласан – Чалтан вăрçи) çулĕсенче ытти халăхсемпе пĕрле чăваш халăхĕ Тăван çĕршыва юнпа, тарпа хӳтĕленĕ, паттăрлăх, чăтăмлăхпа хăюллăх, çирĕп кăмăл кăтартнă. Ахальтен мар вăрçăра Совет Союзĕн Геройĕ ятне илнисем хушшинче пирĕн ентешсем 76 çын, 54 пин чăваша орденсемпе, медальсемпе наградăланă. 19 çын Мухтав орденĕн тулли кавалерĕ пулса тăнă.

Фашизма хирĕç кĕрешнĕ çулсенче публицистикăпа литература пархатарлă пысăк ĕç тунă. «Совет çĕршывĕн писателĕсем çак татăклă çапăçура хăйсен вырăнĕ ăçтине пĕлеççĕ. Пирĕнтен нумайăшĕ алла хĕçпăшал тытса çапăçаççĕ, нумайăшĕ алла перо тытса çапăçĕ. Пирĕнтен, совет интеллигенцийĕн малти отрядĕнчен, хальхи вăхăтра Тăван çĕршыв калама çук пысăк ĕç тума ыйтать», — тенĕ А.Фадеев вăрçă пуçланнă кун писательсен митингĕнче. Митингра йышăннă резолюцире çапла каланă: «Совет писателĕ хăйĕн пĕтĕм вăйне, хăйĕн пĕтĕм опычĕпе талантне, кирлĕ пулсан – хăйĕн пĕтĕм юнне те халăхăн Тăван çĕршыв тăшманĕсене хирĕç пыракан таса вăрçин ĕçĕшĕн парĕ!».

Тăван çĕршыв умне тухса тăнă йывăр кунсенче писательсен вичкĕн сасси пĕр самантлăха та шăпланман. Вĕсем тăшманпа çапăçнă вăхăтрах хыпарсем, очерксемпе статьясем çырнă, сăвăсемпе юрăсем хывнă, калавсемпе повеçсем пичетле-пичетле кăларчĕç. «Кăшт кăна лăпкăрах самантсем пулсанах, вĕсем блиндажсенче, траншейăсенче ларнă çĕртех, пуç тăрринче вĕçĕм «юнкерссемпе» «мессершмитсем» кĕрленине, бомбăсемпе снарядсем çурăлнине пăхмасăр, чĕре тĕпĕнчен тухакан сăвăсемпе калавсем тĕрленĕ. Пĕр-пĕр лутăрканнă кăвак хут çине, татăк-кĕсĕк кăранташпа... Калама та çук васкавлă та оперативлă ĕçлеме тивнĕ вĕсен», — тесе çырнă писатель-фронтовик Леонид Агаков вăрçă кунĕсене аса илсе.

Чăваш çыравçисен хайлавĕсенчи таса ĕмĕт — çĕнтерӳ ĕмĕчĕ, чи пысăк шанчăк — çĕнтерӳ шанчăкĕ. Çав ĕмĕтпе çав шанчăк пирĕн халăха унăн ывăлĕ-хĕрĕсене усал тăшмана хирĕç пĕтĕм вăя хурса çапăçма хавхалантарнă.

Чăваш каччисемпе хĕрĕсем Гитлер вăрă-хурахĕсене хирĕç хĕç-пăшалпа та, перопа та паттăррăн çапăçнă. Фронта кайнă писательсенчен М.Н.Данилов-Чалдун, Владимир Бараев, Василий

Васькин, Илья Думилин, Ефрем Еллиев, Кĕçтук Кольцов, Кăтра Мишша, Арсений Орлов, Андрей Петтоки, Николай Пиктемир, Федот Çитта, Николай Чурбай, Максим Ястран çапăçу хирĕнче выртса юлнă. Поэт, драматург, журналист пулнă Иван Викторова фашистсем концлагерьте асаплантарса, шартлама сивĕре пуç тăрăх шыв юхтарса шăнтса лартнă.

Вĕсен ячĕсене чăваш писателĕсен Союзĕн çуртĕнче мрамортан тунă асăну хăми çине ылтăн сас паллисемпе ĕмĕр асăнмалăх çырса хунăччĕ.

Çулсерен икĕ пысăк уявра — февралĕн 23-мĕшĕнче тата майăн 9-мĕшĕнче — пĕтĕм халăх Тăван çĕршывăн шанчăклă хуралçисене чыслать. Граждан вăрçинче паларнисене, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче юн тăкнисене, Афганистанра пулнă воин-интернационалистсене, паянхи çĕршыв хуралĕнче тăракансене пуç таять аслă патшалăх. «Çĕнйĕркелӳ» тапхăрĕнче çĕршыв хӳтлĕх хатĕрĕсене — çар ракетисемпе хими хĕç-пăшалне — сахаллатрĕ. Анчах çакă вăл салтак йăваш та шанчăксăр пулмалла тенине пĕлтермест. Этемлĕх нумай вăрçăра çĕнтернĕ. Анчах вăрçă хăйне яланлăхах тĕп тумасăр та çĕршыв салтак ӳстерме пăрахмĕ. Усал вăя сăмахпа кăна çĕнтерме çук. Ăна хирĕç ăслă вăй кирлĕ. Сывă, маттур, шанчăклă пулма пилленĕ çамрăксене аслă ăру. Çак пил яланах асра пулĕ. Аслă Çĕнтерӳ 50 çул тултарнă ятпа Чăваш Енре салтаксен Асăну кĕнекине хатĕрленĕ. Ăна çырма çамрăк йĕрлевçĕсем нумай пулăшнă. Вĕсем салтаксен вил тăприсене тупса тирпейленĕ, тăванĕсемпе çыхăну йĕркеленĕ. Çыравçăсене, сăн ӳкерчĕкĕсене, докуменчĕсене пухнă. Ветерансене тĕл пулусене чĕннĕ, каласа панисене çырса илнĕ. Çак пархатарлĕ ĕç часах вĕçленмĕ.

## 1.2. Фронтовик-çыравçăсен хастарлăхĕ

Пирĕн паттăр ентеш салтаксен ретĕнче чăваш çыравçисем йышлă. Чăваш писателĕсем пурте тенĕ пекех çапăçу хирĕнче пулнă. Чылайăшĕ - ахаль салтак, командир е политработник, хăшĕ-пĕри дивизи е çар хаçачĕсенче, политпайсенче, госпитальсенче ĕçленĕ. Вĕсем хушшинче П.П.Хусанкай, Я.Г.Ухсай, Л.Я.Агаков, А.Е.Алка, В.О.Алагер, И.А.Вашки, В.А.Долгов, Г.И.Краснов-Кĕçĕнни, Илпек Микулайĕ, Д.А.Кипек, Н.Ф.Мранькка, К.И.Пайраш, В.Т.Ржанов,

М.Я.Сироткин, А.Ф.Талвир, И.С.Тукташ, Тихăн Петĕркки, Г.Д.Харлампьев, Х.Е. Уяр, А.Н.Яндаш, Г.Ф.Орлов, Н.Ф.Евстафьев, В.А.Урдаш, Ф.Хĕлкей (Андреев) тата ытти нумай-нумай çыравçă ячĕ тăрать.

Писатель вăл — халăхăн малти ретĕнчи çынни, тĕрĕс те чăн сăмах ăсти. Урăхла пулма тивĕç çук унăн. Хаяр кунсенче фронтра та, тылра та тĕрĕс те çивĕч сăмах пăшалпа танах кирлĕ пулса тăнă. В.Маяковский сăмаха штыкпа танлаштарма чĕнни тӳрре тухнă. Кам кĕскен те уççăн, чуна лăплантармалла е вут тивмелле ăнлантарнă вăрçăн малтанхи çулĕсенчи питĕ йывăр лару-тăрăва? Сăмах та çук — партие парăннă политĕçченĕсем, журналистсемпе писательсем. Фронт пичетĕнче журналистсемпе писательсен ыйхăсăр çĕрĕсемпе канăçсăр кунĕсем хутпа кăранташ тытнипех иртмен. Вĕсен тăшманпа куçа-куçăн тăма тивнĕ, чылайăшĕ малти ретре салтаксемпе пĕрле çапăçнă.

Çар пичетĕнче Л.Агаков, В.Алакер, В.Долгов, Илпек Микулайĕ, В.Ржанов, Ф.Çитта, А.Талвир, А.Тукташ, Ухсай Яккăвĕ, П.Хусанкай, Н.Чурпай, А.Янташ тата ытти çамрăк журналистсемпе писательсем вăй хунă. Вĕсем Шупашкарта чăвашла тухса тăнă «Чăваш коммуни» («Хыпар») хаçата, «Илемлĕ литература» («Тăван Атăл») журнала тăтăшах çырса тăнă.

Çар хаçачĕсен редакцийĕсенче ĕçлемен писательсем те çырма пăрахман. Рота командирĕсем А.Петтоки, А.Алка, Т.Петĕркки, взвод комиссарĕсем И.Вашки, К.Краснов-Кĕçĕнни, çар врачĕсем К.Пайраш, Н.Евдокимов кăранташ тытма вăхăт тупнă.

1941—1945 çулсенче пысăк хапаллă произведенисем сахал пичетленнĕ. С.Асланăн «Аслати», Л.Агакова «Партизан Мурат», «Вилĕмрен те вăйлăрах», Илпек Микулайĕн «Ирена», Иван Салампекăн «Иксĕлми шанчăк» тата ытти хăш-пĕр хайлавсене палăртса хăвармалла. Ку çулсенче прозăн пĕчĕк жанрĕсем малта тăнă. Тĕрленчĕкпе очерк ăстисенчен В.Алакер, В.Долгов, Ф.Çитта, А.Янташ, И.Тукташ нумай çырнă. Л.Агаков статья та, очерк та, калав та пичетлесех пынă.

Мĕн çинчен çырнă-ха вĕсем? Пуринчен ытларах — фронтри тата тылри паттăрлăх çинчен. Писательсен Тăван çĕршывăн паттăр ывăл-хĕрĕсене мухтанă. Йывăр самантсенче те совет çыннисем шикленсех ӳкменнине, чыса пурнăçран мала хунине кăтартнă. Вăрçă çулăмĕнче халăхсен туслăхĕ

нихҫанхинчен пиҫĕрех ҫирĕпленнĕ. Ҫавна та писательсем хăйсен куҫĕпе курса, чунĕпе туйса ҫырса хăварнă. Тăван ҫĕршыв ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн ачасем те паттăр кĕрешнĕ. Вĕсем ҫинчен ҫырнă калавсемпе повеҫсене хумханмасăр вулама ҫук.

Жанрсем енчен вăрҫă прози пуян. Юмахсемпе халапсем, очерксем, тĕрленчĕксемпе репортажсем, калавсемпе новеллăсем паттăрлăх пафосĕпе, унччен литературăра пулман сăнарсемпе пуянланнă. Вăрҫă вăхăтĕнчи прозăра документлăхпа публицистикăлăх хытă палăрса тăнă. Ку вăл унăн вăйлă енĕсенчен пĕри.

Хаяр вăрҫă кунĕсенче драматургсемпе артистсем те тăшманпа кĕрешнĕ, вирлĕ сăмахсемпе халăх кăмăлне ҫĕкленĕ, чăваш халăхĕн историри кун-ҫулне, кĕрешĕвне аса илтерекен, тăшманпа нихҫанхинчен вирлĕ ҫапăҫма чĕнекен пьесăсем (трагедисемпе драмăсем, сатирăллă комедисем) ҫырнă.

Никифор Мранькка писатель «Юншăн — юн», Н.Айзман драматург «Патриотсем», «Лиза Короткова», А.Ĕҫхĕл поэт «Ҫĕрпе кăвак тӳпе» пьесăсем пичетленĕ, ватă писатель, чăваш театрне никĕсленĕ И.Максимов-Кошкинский тăвата пьеса ҫырнă: «Сенкер иккĕ», «Ачамăрсем», «Савнисем» драмăсемпе «Телейлĕ ҫуркунне» комеди. Вăрҫăччен пуҫласа хунă «Ăру вĕҫĕ» драмăна 1942 ҫулта пичетлесе кăларнă. Унта 1917 ҫулхи ĕҫсене кăтартнă, чухăнсем совет влаҫĕ майлă тăнине ĕненмелле те хавхаланмалла сăнарласа панă. Истори темипе А.Кăлкан «Иван Кадыков» драма ҫырнă. Ăна совет влаҫĕшĕн 1918 ҫулта пуҫне хунă Иван Кадыков революционер паттăрлăхне халалласа хайланă.

И.Максимов-Кошкинскипе А.Кăлкан драмисенчи ĕҫсем совет влаҫĕн малтанхи ҫулĕсенче пулса иртеҫҫĕ пулсан та, хаяр ҫапăҫусем пынă вăхăтра вĕсем пирĕн халăхăн шухăш-туйăмне ҫывăх тăнă: вăрҫăра совет ҫыннисем революци ҫĕнтерĕвĕсене хура ҫĕлен-калтаран юн тăкса хӳтĕленĕ, хĕрлĕ ялавне тăшмана ҫапса ӳкерме паман.

Вăрҫă хыҫҫăн комеди вăйлăрах аталанать. Н.Айзман, А.Ĕҫхĕл, А.Кăлкан комедийĕсенче ĕҫсем час-часах туйпа вĕҫленеҫҫĕ, вĕсенче пĕревĕрлĕхсем пур пулсан та, «Кай, кай Ивана», «Виҫĕ туй», «Хаваслăх» комедисем чăваш драматургине ҫирĕп кĕрсе юлчĕҫ. Драматурги ăнăҫлăхĕ историллĕ драмăсенче палăрчĕ. Ҫ.Элкерĕн «Вун саккăрмĕш ҫул», Г.Харлампьевăн «Юрату вилĕмсĕр», Н.Айзманăн «Иван Новиков», А.Ĕҫхĕлĕн

«Вут чулӗ», И.Максимов-Кошкинскин «Константин Иванов» драмисем театрсемпе кружоксен репертуарӗнче чылайччен тытӑнса тӑчӗҫ. Вӗсене халӗ те час-часах лартаҫҫӗ.

Вӑхӑт иртнӗҫемӗн ӗлӗк мӗн лайӑххи, мӗн япӑххи пулнине уҫҫӑнрах курма пулать. Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи вунӑҫуллӑхра тата каярахри тапхӑрта чӑваш классикӗсем панӑ тӗслӗхсем («Пӑва ҫулӗ ҫинче», «Таната», «Салампи», «Аптраман тавраш», «Ҫӗр» тата ыттисем) пичетленсе тухни чӑваш сӑмахлӑхӗ ӳсӗм ҫулӗпе талпӑнса пынине кӑтартать (Чӑваш литератури, ... 163—170).

Фронтра юн тӑкнӑ писательсем ҫапӑҫури паттӑрлӑхӗпе, литературӑри пултарулӑхӗпе пысӑк хисепе тивӗҫ. Вӗсен сӑнарӗсем, вӗсен сӑмахӗсем, шухӑшӗпе туйӑмӗсем тӑван ҫынсен вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи паттӑрлӑхне ӗмӗрсенче мухтаса тӑраҫҫӗ.

Сӑвӑҫсем халӑхӑн паттӑр ывӑлӗ-хӗрӗ ҫинчен пайтах ҫырнӑ. Вӗсен геройӗсем авторӗсемпе юнашарах ҫапӑҫнӑ. П.Хусанкайӑн «Пулчӗ вӑрҫӑ» ярӑмӗнче «Ахмет Делиевӑн маттурлӑхӗ», «Ширшов комсомолецӑн паттӑрлӑхӗ», «Арам Петросян» сӑвӑсем пур. Вӗсем — вӑрҫӑ паттӑрӗсем ҫинчен, 1941 ҫулта ҫырнӑ сӑвӑллӑ репортажсем. Узбек ачи Ахмет кавалерист нимӗҫ ефрейторӗпе офицерне вӗлерет, тыткӑнран тухса тарать, тӑшман складне сирпӗтет. Паттӑр-и вӑл? Паттӑр.

Ухсай Яккӑвӗн «Чӑваш дивизийӗ ҫинчен каласа паракан поэминче» Чапаев пек маттур чӑваш салтакӗсене нумай асӑннӑ: Элӗксем — В.Антонов, Шӑхасан ачи Николаев, Патӑрел ачи Энтри Гаврилов, дзота хӑйӗн ӳчӗпе хупланӑ Гена Вавилов, Канаш чӑвашӗ Павел Ильиных, Шӑмӑршӑсем — Васлей Можаев, Елчӗкрен — Н.Фролов сержант, Вӑрмар енчен — Петюк Яковлев... Вӗсем паттӑр ҫапӑҫса поэмӑна ӗмӗрлӗхех кӗрсе юлнӑ.

Ҫап фашиста урараn —
Вӑл малалла ан уттӑр!
Хӑйӗн юнлӑ урипе
Пирӗн ҫӗре ан пустӑр! —

тесе ӑсатнӑ салтаксене ватӑ юрӑҫӑ Кашкӑр Микули. Вӑрҫа Хӗвеланӑҫ Украинӑра кӗтсе илнӗ Уйӑп Мишши стройри ҫамрӑксене вӗрентсе каланӑ:

Сан пӗр ӗҫ: нимӗҫе вӗлер!
Ӑна аркат, ҫунтар, пӗҫерт,
Ӑна эс чӗррӗн ан вӗҫерт.

Çĕршывăн çурçĕр енче çапăçнă Кĕçтук Кольцов сăвăç-командир салтаксен юратнă юлташĕ пулнă. Ăна Карелире халĕ те астăваççĕ. Унăн вирлĕ сăмахĕсене гранит çине касса çырнă:

Юншăн — ют!

Ирсĕр вилĕмшĕн — вилĕм!

Малалла, тăшмана çĕнтерме!

Поэт 1943 çулта çапăçура вилнĕ. Халĕ Канаш хулинче ăна халалласа ятарласа музей йĕркеленĕ.

Сталинград фронтĕнче чăвашсен паллă поэчĕ Владимир Бараев çапăçнă.

Çак вăрçăра пуçа хурсассăн —
Пĕр ĕмĕт çех чун таппинче:
Таса сăмах илсе çӳретĕр
Ыр ятăма чăваш çинче! —

тенĕ вăл 1942 çулта.

Вăрçă çулĕсенче чăваш поэчĕсем 16 поэма çырнă. Петĕр Хусанкайăн «Таня», Уйăп Мишшин «Салтак амăшĕ», Çемен Элкерĕн «Вăл вилĕмсĕр», Ухсай Яккăвĕн «Шăллăм», «Вырăс ачи», Стихван Шавлин «Киев пионерĕ», «Матур Якур», Аркадий Ĕçхĕлĕн «Ăмăрт кайăк» поэмисем лиро-эпикăн паллă хайлавĕсем, поэзин ылтăн фончĕ.

Совет Союзне Аслă Çĕнтерӳ патне çитме питĕ йывăр пулнă. Вăрçă синкерĕ кашни киле, кашни урама, кашни ял-хулана кĕрсе тухнă. Пайтах çын куççулĕ, юнĕ, тарĕ тухнă, пин-пин пурнăç вăхăтсăр татăлнă. Майăн 9-мĕшĕ — Çĕнтерӳ уявĕ — пирĕн халăхăн аслă, мăнаçлă, куççульлĕ уявĕ. Ăна халăх калама çук хаклă хакпа туптанă. Капитализм тĕнчи ĕмĕтленекен «çăлтăрсен вăрçи» те пирĕн çĕр çинчи çĕнтерĕве, çирĕп утăмсене хавшатма пултараймĕ.

1941—1945 çулсенчи пек вăрçăсем Çĕр чăмăрĕ çинче урăх пулма та пултараймаççĕ. Мускав патĕнчи, Ленинградри, Сталинградри, Курск пĕккинчи хаяр çапăçусем хӳтĕлевçĕ салтаксен тĕлĕнмелле хăватне ĕмĕрсем валли çар историне çырса хăварĕç.

Тепĕр 45 çултан арканса каяс ССР çĕршывне 1945 çулта юн тăкса хӳтĕлеме кирлĕ пулнă-и? Кун пек ыйту вăрçă вăхăтĕнче çуралма та пултарайман. Вăл вăхăтăн таппи, хавхаланăвĕ, шăнăрĕ никама пăхăнманлăхпа, ирĕкпе, Тăван çĕршыв чысĕпе çыхăнса тăнă. Ирĕкпе танлăхшăн халăх хăйĕн пурнăçне шеллемен.

Кашни саманан тĕп шухăшĕсем, тĕп паллисем пур. Паттăрлăх вăхăчĕ паттăрсем ӳстернĕ. Харкашу вăхăчĕ пусăвăтмăшсем ҫуратать. Вăрҫă хыҫҫăнхи вунăҫуллăхра паттăрлăхĕ те, тискерлĕхĕ те пайтах тупăннă. Ҫĕнтерӳпе таврăннă пин-пин салтака питĕ йывăр килнĕ. Тыткăнра пулнисене, хирĕҫ калаканнисене, тĕрĕс маррине тăрă шыв ҫине кăларакансемпе халăхшăн тăракансене тĕрмесене хупа-хупа лартнă, лагерьсенче ҫĕртнĕ. Ялсене чăтма май ҫук пысăк налуксем пусса тăнă. Колхозсен тырри-пуллине патшалăх тĕпрен шăлса тухса кайнă. Сăмах ăстисем, паллах, кĕнекесенче ҫакăн ҫинчен ҫырма пултарайман. Вĕсем паттăрсене мухтанă. Малашлăхшăн тăрăшнинчен пархатарли урăх нимĕн те тупăнмасса ҫирĕплетнĕ.

Вут-ҫулăмран чĕррĕн тухнă писательсем ҫак тĕрĕслĕхе ҫĕнтерӳ юррисемпе паттăрлăх калавĕсенче кăтартнă. Вăрҫă хыҫҫăнхи вунăҫуллăхра халăх пурнăҫĕ ҫăмăл пулман. Юхăннă, ишĕлнĕ, ĕҫ вăйĕсĕр юлнă хуҫалăха ура ҫине тăратма фронтри пек хастарлăхпа, чăтăмлăхпа ĕҫлеме тивнĕ. Ҫакăн ҫинчен те литература халăха тӳррĕн калама пултарнă, ҫĕнĕ ҫĕнтерӳ тума вĕрентнĕ. Уйрăм ҫынна пысăка хунă ҫулсенче литературăпа искусство ҫыннисемшĕн пултару ĕҫĕнче пăтăрмахлă йывăрлăхсем те сахал мар сиксе тухнă. Литература вĕсене сирсе яма пулăшнă.

Вăрҫă хыҫҫăнхи вунăҫуллăхра проза лайăх калавсемпе пуянланнă. А.Артемьев, В.Сатай, А.Талвир, Хв. Уяр, Илпек Микулайĕ, М.Кипек, И.Тукташ, К.Пайраш фронтра пулса иртнĕ ĕҫсем, хăйсем ҫывăх пĕлнĕ ҫынсем ҫинчен хавхаланса ҫырнă. Калавсемпе новелласем, тĕрленчĕксемпе очерксем совет салтакĕсен чиксĕр паттăрлăхне кăтартнă. С.Аслан, К.Турхан, А.Ĕҫхĕл, Н.Мранькка, Ҫ.Элкер ял ҫыннисемпе хула рабочийĕсем ҫинчен повеҫсемпе романсем ҫырнă. Истори тапхăрĕсем те писательсене хумхантарнă Хв. Уярăн «Таната», С. Асланăн «Ахрат», А.Талвирăн «Пăва ҫулĕ ҫинче» романсемпе повеҫĕ вулакансене тӳрех килĕшнĕ.

Поэзире лирикăпа лиро-эпика жанрĕсем аталанса пынă. Сăвăсенче ҫĕнтерӳҫĕсене чысланă, тăнăҫлăхшăн кĕрешме чĕннĕ. Поэмăсем, сăвăлла повеҫсем, сăвăлла романсем тухнă. П.Хусанкай, «Аптраман тавраш», Я.Ухсай, «Ту урлă ҫул», «Ҫĕр» романсем ҫырнă. С.Шавлин «Ватă салтак», «Тăван кĕтес», К.Евстафьевăн «Паттăр ывăлĕ», М.Хурин «Ҫĕнĕ хушамат» поэмисем поэзин эпикăлла туртăмне вăйлатнă.

И-43031



Национальная библиотека
Чувашской

## II. Тăван çĕршыв вăрçинче пуç хунă çыравçăсем

### 2.1. Вăрçă хирĕнче ӳксе юлнă çамрăксем

Тăшман урать. Тăшман хурахланать.
Ĕçесшĕн вăл ĕçчен этем юнне.
Чĕрем çунать те ал кăварланать,
Часрах ватас килет шăлне унне! —

тесе çырнă 1941 çулта çамрăк сăвăç Варфоломей Энжей.

...Хаяр вăрçă мĕнпур халăх, пĕтĕм çĕршыв пурнăçне улăштарса хунă. Писательсемпе журналистсем вăрçăн малтанхи кунĕсенчех çар ретне тăнă. «Ĕçхĕрарăмĕ», «Хатĕр пул», «Сунтал», «Ленин çулĕпе» журналсем, «Пионер сасси», «Çамрăк большевик», заводсемпе колхозсенчи нумай тиражлă хаçатсем хупăннă. Редакцисем пушанса юлнă.

Вырăс литературине вăрçăран 355 писатель таврăнман. Вĕсем хушшинче – Гайдар, Крымов, Петров, Алтузен, Ставский, Уткин, Коган, Павел Васильев, Майоров, Кульчицкий, паллă поэт ывăлĕ Сева Батрицкий...

Украина литературинче 30 çын – Олекса Десняк, Яков Качура, Микола Шпак, Петр Радченко...

Тутар çыравçисем – М. Джалиль, А. Кутуй, Ф. Карим...

Çармăссенчен – В. Элмар, Шадт Булат, Пет. Першут, А. Айзенворт...

Вĕсен ячĕсем тăванла масарсен палăкĕсем çинче.

Чăваш çыравçисем – писательсемпе журналистсем – сахаллăн ӳксе юлнă-и вăрçă хирĕсенче! Нумайăн! Вĕсен йĕрĕсемпе эпир халĕ те çӳресе çаврăнайман-ха ... Шырамалли тем чухлех. Шыранăçемĕн халиччен паллă пулман ĕçсем, ятсем тупăнса пыраççĕ.

Тутарсен паллă поэчĕ Муса Джалиль вăрах вăхăт сутăнчăк ячĕпе витĕнсе тăчĕ. Тĕпчесе пĕлсен ăна Совет Союзĕн Геройĕн ятне пачĕç, Хусан Кремлĕ çумĕнче чаплă палăк лартрĕç. Джалиль тантăшĕсем чăваш халăхĕн те сахал мар.

Иван Викторов, Василий Усли, Вениамин Туртуш, Николай Чурпай тата ытти пуç хунă çыравçăсен кĕнекисем халăх умне тухса çитеймен-ха. Вĕсем пурте пĕр шăпаллă салтаксем, пĕр шăпаллă çыравçăсем. Вăрçă паттăрĕсем. Пурте литература çӳлĕкĕ çине таврăнма тивĕç.

Вырӑс ҫыравҫи Борис Васильев хӑй вӑхӑчӗ ҫинчен ҫапла каланӑ, «Эпир тӗпчевҫӗсем, инженерсем, колхозниксем пулаймарӑмӑр. Эпир упӑшка та, ача ашшӗ те, аслашшӗ-кукашшӗ те пулаймарӑмӑр. Эпир никам та мар пулса юлтӑмӑр. Ҫӗр пултӑмӑр. Мӗншӗн тесен эпир салтаксем пултӑмӑр...»

«Война переехала и через меня, и, если не запахала, не искалечила, не задушила, тяжесть ее все равно невозможно сбросить с плеч. Она во мне, часть моего существа, обугленный листок биографии...» – тенӗ вӑл вӑрҫӑ витӗр тухнисен ячӗпе.

Ҫыравҫӑсем литература пирки ҫапла калани те вырӑнлӑ. «Перед писателем стояли труднейшие проблемы, которых не знали наши предшественники, удержать нравственные высоты. Есть разные виды искусства и разные произведения. И лучшие из них говорят, нужно верить, что и утраченное можно вернуть, нужно работать». Ҫак сӑмахсенех Валентин Урташ, Александр Артемьев тата ытти теҫетке-теҫетке чӑваш ҫыравҫи каланӑ пулӗччӗ.

Кашни ҫын е кашни ӑру пурнӑҫа пӗтӗмпех хӑйне килӗшнӗ пек суйласа илме, хӑй пурнас тенӗ пек кӑна пурӑнма пултараймасть. Этем хӑш саманара тата хӑш вырӑнта пурӑнассине малтанах палӑртса ҫуралмасть. Анчах истори тапхӑрӗ кирек мӗнле ҫаврӑнсан та, ҫын ҫӗр ҫинче чыслӑ е нӗрсӗр пурнасси, самана уйӑрса панӑ ҫӑмӑл е йывӑр ҫулпа мӗнле утасси ҫынран хӑйӗнчен килет.

Ырӑ сӑмах кӑна юрӑхлӑ – Тӑван ҫӗршывшӑн пынӑ хаяр вӑрҫӑ синкерне хӑйсен ҫан-ҫурӑмӗ ҫинче тӳссе иртгернӗ, тӑван халӑх йывӑрлӑхне хӑйсен чун-чӗри витӗр кӑларнӑ, фронтра паттӑрлӑх кӑтартнӑ аслӑ ӑру ҫинчен. Ӗмӗрсем иртӗҫ, ӑрусем улшӑнӗҫ, этем пӑхӑнтарнӑ тӗнче уҫлӑхӗ урӑх планетӑсем ҫине илсе кайӗ, анчах ҫӗршыв ирӗклӗхӗшӗн пуҫ хунӑ паттӑрсен ячӗсем нихҫан та манӑҫа юлмӗҫ. Вӑхӑт иртнӗҫемӗн те ҫӗнӗрен те ҫӗнӗрен ятсем тупӑнаҫҫӗ, ҫакӑ вӑл Аслӑ Ҫӗнтерӳ пӗлтерӗшӗ вӑхӑт иртнӗҫемӗн нимӗн чухлӗ те чакманнине кӑтартса тӑрать. Пысӑк япала ҫывӑхран мар, аякран ҫеҫ, пӗтӗм кӳлепипе курӑнать. Аслӑ Ҫӗнтерӳ те малашлӑхран пӑхсан ҫеҫ тӗплӗнрех курӑнӗ. Асар-писер вӑхӑтра асӑрхамасӑр хӑварнӑ ҫынсене, пулӑмсене мирлӗ вӑхӑтра пурӑнакансем шыраса тупӗҫ, чӑваш хаҫачӗсемпе журналӗсенчен фронта тухса кайнӑ салтак-журналистсен фронтри шӑпи те ҫулсеренех уҫӑмлӑрах палӑрса пырать.

Тăшмана хирĕç арăслан пек сикнĕ Варфоломей Энжей хаяр çапăçура пуçне хунă. Вăл пĕччен мар. Икĕ Теçетке ытла çамрăк сăвăç пуçланă йĕркисене çырса пĕтереймен. Вăрçăра паттăрла вилнĕ Елизар Абакшин, Николай Митта, Николай Пиктемир, Пракка Сатур, Семен Элем, Вениамин Туртуш тата ытти тантăшсен (пурĕ 21 сăвăçăн) сăнне халĕ «Вĕçлеймен юрăсем» (1973) кĕнекере курма пултаратпăр. Кĕнекене кĕменнисем татах сахал мар, Тăхăрьял чăвашĕ Николай Сенкер, Шупашкар районĕнче ӳснĕ Аркадий Васильев, Дмитрий Егоров, Михаил Степхим, Самар облаçĕнчи Похвиçнĕ-Вăрманхĕрринчен — Семен Назаров, Куславкка районĕнчен — Николай Мишин, Вăрнарсем — Николай Юманкка, Тутар Республикинчи Çĕпрел районĕнчен — Захар Иссан, Тăвайĕнчен — Александр Пермек...

Вутра сахал-и пĕтрĕ Çеçпĕл,

Миçе талантлă Иванов... — тесе хурланнă вăрçăран йывăр аманса таврăннă Алексей Воробьев.

Ятран асăннă сăвăçсемсĕр пуçне вăрçа каиччен икĕ-виçĕ е ытларах калав пичетленисем 20 çын ытла çапăçу хирĕнче выртса юлнă. Вĕсене пурне те, вĕсемпе пĕрле Василий Васькин, Марк Аттай, Илья Думилин, Ефрем Еллиев, Кĕçтук Кольцов, Кăтра Мишши, Арсен Орлов, Федот Çитта, Василий Усли, Николай Чурпай, Иван Викторов писательсене пирĕн халăх хисеплĕн асăнса пурăнать. Чылай шкулсенче хăйсен районĕнче çуралса ӳснĕ, вăрçăра паттăр çапăçнă писательсене те — паллисене те, çамрăккисене те — манмаççĕ. Вĕсене халалласа альбомсем, кĕтессем йĕркелеççĕ. Чăвашсем пурăнакан пĕр район та вăрçăра пулнă писатель-ентешсĕр мар. Çапла вăл кирек хăçан та: вăхăт иртет, çынсем улшăнаççĕ, çапах та паттăрлăх ватăлмасть, лайăх произведенисем кивелмеççĕ.

## 2.2. Редакцие таврӑнайман журналистсем

> Что гибель нам! Мы даже смерти выше.
> В могилах мы построились в отряд
> И ждем приказа нового. И пусть
> Не думают, что мертвые не слышат,
> Когда о них потомки говорят.
> *Николай Майоров (1919-1972)*

Шупашкарта, Пичет ҫуртӗнче, чӑваш хаҫачӗсенче ӗҫленӗ журналистсене асӑнса ҫапнӑ хӑма пур:

Николай Базанов, Анисим Григорьев, Петр Жданкин, Иван Моисеев, Савва Константинов, Илья Семенов... Ячӗсене ылтӑнпа ҫырнӑ.

Канӑҫ паман ятсем... Пӑшалпа та, перопа та ҫапӑҫнӑ вӗсем тискер те хаяр тӑшмана пӗтерес тесе. Чылайӑшӗ дивизи, арми, фронт хаҫачӗсенче ӗҫленӗ, вӗсем час-часах малти линире – окопсенче, танксем ҫинче, тупӑ хыҫӗнче, пулемет ҫумӗнче выртнӑ. Чӑваш журналисчӗсемех фронтра ҫӗр ҫинчи, сывлӑшри, шыв ҫинчи пур йышши подразделенисенче те пулнӑ. Ҫӗнтерӳ ҫӑмӑллӑн туптанман, тӑван киле таврӑнма пурне те телей пӳрмен. Паттӑрла вилнисен ячӗсем паян мрамор хӑмасем ҫинче ылтӑнланаҫҫӗ, вӗсем ҫинчен юлташӗсем ҫыраҫҫӗ, кӗнекесем вӗсен паттӑрлӑхне мухтаҫҫӗ.

Паттӑрсенчен пӗри – Мускав патӗнчи хаяр ҫапӑҫура вилнӗ ҫамрӑк сӑвӑҫ, 1931-мӗш ҫулта ача-пӑча валли «Колхоз ачисем» ятлӑ кӗнеке кӑларнӑ Николай Пиктемир.

Николай Никитич Пиктемир (Никитин) Шупашкар районӗнчи паллӑ ялта – Шемшерте 1906 ҫулхи декабрӗн 3-мӗшӗнче ҫуралнӑ. Кам пӗлес, вӑрҫӑ-харҫӑ инкекӗ пулман пулсан, хаваслӑ, хӑюллӑ, ҫирӗп кӑмӑллӑ Николай Никитич, шурӑ сухалне шӑлкаласа, уяв кӗрекинче те ларӗччӗ. Ҫамрӑксене хӑйӗн чаплӑ ентешӗ Никита Бичурин ҫинчен поэма вуласа е халап каласа кӑтартнӑ пулӗччӗ. Вӑл яш чухне, хутла пӗли-пӗлми хресчен колхоз ҫулӗ ҫине те шикленсе пӑхнӑ вӑхӑтра, ял ҫыннисем хӑйсен «тӗнче касса ҫӳрекен» ӑслӑ ывӑлӗ – Иакинф тӗпчевҫӗ-писатель ҫинчен пӗлме пултарайман. Ҫавӑнпа Николай, Шупашкарти педагогика техникумӗнчен вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн хӑйсенчен аякра мар Ольтикассинче учительте ӗҫлекенскер, ял ҫыннисене Иакинф ҫинчен «Сунтал» журналта тухнӑ статьяна савӑнса вула-вула панӑ. Сӑвӑ ҫырма тытӑннӑ вилӗмсӗр ентешӗ ҫинчен. Николай

Пиктемирăн йăмăкĕ упранса юлнă кĕнекисемпе, кăранташпа паллă туса вуланă журналсемпе паллаштарчĕ, сăнÿкерчĕксем кăтартрĕ. Вĕсенчен иккĕшне архива илтĕмĕр. Пĕрин çинче – виçĕ тантăш, виçĕ сăмахçă юнашар ларççĕ: сылтăмри – чăвашсен паллă профессорĕ пулса тăнă Михаил Сироткин литературовед, варринчи – Куçма Наманкан журналист, сулахайри – çара пуçли – Николай Пиктемир. Теприн çинче – Николай Пиктемир пĕччен, салтак карттусĕпе. Ÿкерчĕксем иккĕшĕ те 30-мĕш çулсен варринче тунăскерсем. 1934-35 çулсенче Пиктемир Хĕрлĕ Çарта хĕсметре пулнă, унтан таврăнсан «Канаш» хаçат редакцийĕнче ĕçленĕ – тăлмач, литература сотрудникĕ, пайпуçлăхĕ. Каярахпа редакцин ответлă секретарĕ. Хаçат-журнал ĕçне сăвăç-журналист чунран юратнă. Унччен вăл, пĕрремĕш кĕнекине кăларсан, çирĕм пилĕк çулхискер, «Сунтал» журналăн ответлă секретарĕнче ĕçлесе курнă.

Вăрçă умĕнхи пилĕк çул Николай Пиктемиршĕн – литература хирĕнче ирттернĕ пархатарлă вăхăт. Тĕрленчĕксемпе очерксем, сăвăсемпе статьясем çырнă. Рецензисемпе тишкерÿсем илĕртнĕ ăна. Вырăс классикĕсене чăвашла куçарма юратнă. Вĕт-шакăр ача валли И. Крылов юптарăвĕсене, А. Купринпа А. Чехов калавĕсене, М. Лермонтовпа В. Гюго произведенийĕсене тăрăшса куçарнă. Вĕсене чăваш ачисем халĕ те савăнса вулаççĕ. А. Купринăн «Слон» калавне Чăваш кĕнеке издательстви тепĕр хут 1959 çулта пичетлесе кăларнăччĕ. Поэтăн «Тĕнчен мĕн чул илем канать!» сăвви 1973 çулта «Вĕçлеймен юрăсем» кĕнекере тухрĕ, унтах – виççĕн пĕрле ÿкерĕннĕ фоторан уйăрса илнĕ сăнĕ. «Киле килетпĕр выртмаран». Хăватлă юн, выля та пурăн!.. Итле, епле хăвалăхра янрать илемлĕ кайăк хорĕ», – хавасланать вăйпитти каччă. Хăватлă юн, выля та пурăн! Пурнăçа таса чунпа, уçă кăмăлпа савакан сăвăç кăна çапла çĕкленÿллĕ калама пĕлессĕн туйăнать. Николай Пиктемир сăввисем юлашки хут 1980 çулта «Юлашки юн тумламĕччен» кĕнекере пичетленчĕç. Унта уйрăм сăвăсемпе пĕрле «Делегатка», «Хирте», «Сатур Куçук» тата ытти поэмăсен сыпăкĕсем те вырăн тупнă.

Çăлта шăвартăм лашана,
Сулхăн шывпа пите чÿхерĕм.
Чĕрем таçта хыпаланать,
Çак ир эп питĕ хĕпĕртерĕм! –

кивелми янӑрать Николай Пиктемир сӑвӑҫ сасси. Хаяр вӑрҫӑ ҫӗнтерӳҫӗсен сассине хуплаймарӗ!

Чӑваш хаҫачӗ пӑхса ӳстернӗ талантлӑ журналист-юптаруҫӑ Марк Атай, хаҫатри тӳрлетӳҫӗ (корректор) пулнӑскер, Тӑван Ҫӗршывӑн Аслӑ вӑрҫинче пуҫне хунӑ. Пӗрле ӳснӗ тантӑшӗ, Марк сӑвви-юптарӑвӗсене тишкерсе статьясем ҫырнӑ ҫамрӑк критик-журналист Танкки Петӗрӗ те (Петр Жданкин) фронтран таврӑнайман. Илле Думилин, хаҫат валеҫекен (экспедитор) пулнӑскер, Владимир Бараевпа Иван Викторов – хаҫата вӗҫӗмсӗр ҫырса тӑнӑ поэтсем. Паттӑрлӑх кӗнекине нихҫан тӗксӗмленми кӗрсе юлчӗҫ. Максим Ястран, «Чӑваш коммуни» хаҫатӑн районсене тухса ҫӳрекен хыпарҫи (корреспонденчӗ), Максим Данилов-Чалдун, хаҫатра ӗҫлесех паллӑ писатель пулса тӑнӑ паттӑр салтак ячӗсем хаҫат историйӗнчен шкул кӗнекисене кӗме тивӗҫ пулчӗҫ.

«Ҫилҫунат» пӗрлешӗве ҫӳрекен студентсем чӑваш хаҫачӗсемпе журналӗсенчен фронта кайса пуҫ хунӑ салтаксен ячӗпе пысӑк стенд тата алҫырусем хатӗрлерӗҫ. Унта Федот Ҫитта, Кӗҫтук Кольцов, Борис Шашков, Николай Базанов, Николай Бусыгин, Илья Сорокин, Михаил Митрофанов (Хурнай Мишши), Савва Константинов, Илья Семенов, Анисим Григорьев тата ытти хаҫатҫӑсен сӑнӗсем, вӗсем ҫинчен ҫырнӑ статьясем, хӑйсен ӗҫне-хӗлне кӑтартакан библиографи пулчӗ. Студентсем хаҫатҫӑсен хайлавӗсене пухрӗҫ. Лайӑххисене суйласа илсе кӗнекесем хатӗрлерӗҫ. Вӗсем хаҫатҫӑсен тӑванӗсемпе курса калаҫрӗҫ, ҫуралса ӳснӗ ялӗсене ҫитсе курчӗҫ.

Паллах, вӑхӑт ҫыравҫӑсен еткерне шелсӗррӗн тустарса пӗтернӗ. Анчах шырав ӑнӑҫсӑр мар. Илья Семенов, Савва Константинов, Хурнай Мишши, Иван Моисеев тӑванӗсем фотоӳкерчӗксемпе ҫырусем тупса панӑ, каласа кӑтартнӑ. Чӗлхе ӑсти, пуҫне хурсан та, йӗрсӗр вилмест. Вӑл каланӑ ҫулӑмлӑ сӑмах пин-пин чӗрене вутлантарса тӑрать. Ҫавӑнпа ҫыравҫӑсене чылайӑшне вилнӗ хыҫҫӑн Писательсен Союзӗн ретне илнӗ, ячӗсене Мускаври тата Шупашкарти писательсен тӗп ҫурчӗсене асӑну хӑмисем ҫине ҫырса хунӑ. Пысӑк ӗмӗтлӗ, хастар, ҫирӗп кӑмӑллӑ ҫынсем пулнӑ вӗсем. Йывӑр вӑхӑт уйӑрса панӑ хаяр ҫула пур чӑтӑмлӑхпа, вилӗмрен хӑрамасӑр, ҫӗнтерӳшӗн утса тухнӑ.

Вӑрҫӑччен Савва Константинов «Чӑваш коммуни» хаҫатра редакцин яваплӑ секретарӗ пулнӑ. Красноармейски районӗнчи

Вăрманкасра çуралса ӳснĕ вăл. Çамрăклах халăх сăмахлăхне пухнă (ЧПГĂИ ĂА).

Шупашкар районĕнчи Мăнпӳкасси çынни Анисим Григорьев редакцире чылай вăхăт партбюро секретарĕнче ĕçленĕ, ялхуçалăх пайне ертсе пынă. 1942 çулта, сентябрĕн 28-мĕшĕнче Сталинград патĕнчи Фастов поселокĕшĕн пынă çапăçура паттăррăн вилнĕ. Тăванла масар çинче Фастов çыннисем 260-мĕш стрелковăй дивизи минометчикĕн, чăваш журналисчĕн Анисим Григорьевич Григорьевăн ятне çырса хунă. Вĕсем ăна манмаççĕ, миниметчикăн хĕрĕ патне – «Советская Чувашия» хаçатри паллă журналистка Зоя Григорьева патне çырусем çырсах тăчĕç.

Хурнай Мишшине – Михаил Иванович Митрофанова – Комсомольски ачине – Йĕпреç районĕсем те лайăх пĕлеççĕ. Вăл районти малтанхи комсомолецсенчен пĕри. 1929 çулта Йĕпреç райкомĕнче ĕçлеме пуçланă, 1931 çулччен районти ача-пăча бюровĕн председателĕ пулнă. Унтан «Пионер сасси», «Çамрăк большевик», «Чăваш коммуни» хаçатсенче ĕçленĕ, калавсем çырнă. Вăл вăрçа информаци пай заведующийĕнчен кайнă, рота политрукĕ пулнă. 1942 çулхи хĕл кунĕнче Михаил Митрофанов атакăна малтан çĕкленнĕ. Вĕри чунлă политрука Калуга çĕрĕ ĕмĕрлĕх хăй ытамне илнĕ.

Жданкин Петр Афанасьевич – Танкки Петри – 1934 çулта Чăваш радиокомитетĕнче ĕçленĕ, унтан Первомайски райхаçачĕн «Коммунар» редакторĕ пулнă (1935-1937, №№ 1-116). Кайран – «Чăваш коммуни» хаçатра. Хушамачĕ «Периодические издания ЧАССР» (1975) кĕнекере пур (178 ен). Горькире 1932 çулта тухнă «С волжских берегов» сборникре «Обновленному краю» сăвви пичетленни Танкки Петри пултаруллă, çунат сарма пуçланă ăста иккенне çирĕплетет.

«Çамрăк большевик» хаçатра ӳкернĕ сăнсем. Çӳлти ретре, сулахайри – Глеб Васильевич Марушев. «Çамрăк большевик» хаçатра физкультура пайне ертсе пынă. Варринче – 383-мĕш полк агитаторĕ, фронтран таврăнсан «Чăваш писателĕсем» кĕнеке пухса палăрнă Михаил Юрьев (Нямань). Юнашар – фронтовик-журналист, десант бригадинче, танксен шкулĕнче, хаçат редакторĕнче ĕçленĕ Степан Иванович Минеев. Вăл, вăрçăчченхи, вăрçă вăхăтĕнчи пекех, вăрçă хыççăн та журналист калемне алăран яман.

Иккĕмĕш ретре чĕлĕмпе лараканĕ Леонтьев Петр Леонтьевич – хаçат калăплакан редактор, Муркаш районĕнчи Турай каччи. Вăл тăван Атăла калама çук юратнă. Шупашкарта ун пек маттур пулăçă урăх пулман теççĕ юлташĕсем. Юнашар – Анатолий Иванов, Шăхасан çынни, комсомол пурнăçĕн пай ертӳçи пулнăскер. Елчĕксем, паллă журналист-писатель Павел Щипцов.

Виççĕмĕш рет варринче çапăçура вилнĕ тепĕр фронтовик – Константин Михайлович Бабаев. Ирçе каччи.

«Советская Чувашия» тата «Коммунизм ялавĕ» хаçатсем 1968 çулта пĕр кунлăх хаçатсем кăларнă. «Чăваш журналисчĕ» хаçат фронтра вилнисем çинчен «Ячĕсем чыслăн упранĕç» статья пичетлерĕ. «Журналист» хаçатра «Они не вернулись» кĕтес пур.

«Красная Чувашия» хаçатра пичетленнĕ Михаил Алексеев, Николай Базанов, Борис Шашков ячĕсене ыттисемпе танах асăнатпăр. Вĕсем çапăçу хирĕнче паттăрлăх кăтартса вилнĕ. Борис Шашков поэт-летчик çинчен Е.В. Владимиров профессор тĕплĕ тĕрленчĕк пичетлерĕ («Прерванный взлет».- Дружба, 1988, № 1, с. 235-247). Вĕсем иккĕшĕ те çар летчикĕсем, иккĕшĕ те сăвăсем çырнă.

Шупашкар районĕнче Мемешре çуралса ӳснĕ Илья Сорокин, Платка ялĕн каччи Иван Моисеев журналистсем литературăри малтанхи утăмĕсене çеç тума ĕлкĕрнĕ. («Сунтал», 1931, № 10-11; 1932, № 6-7; «Паттăрсем» кĕнеке, 1941).

«Ку çырăва эпĕ фронтран çыратăп. Умра каллех нимĕç – пĕтĕм этемлĕх тăшманĕ. Вăл манран 50-70 метртра тăрать. Çапла, каллех эпĕр малтанхи вырăнта. Алăра – пистолет, çĕршывпа пурнăçа сыхлатăп. Телей пулсан, эпир çĕнтерӳпе киле таврăнăпăр. Вăл телее çĕнсе илесси инçе мар: 1943 çул çĕнтерӳ çулĕ пулма тивĕçлĕ.

Эпĕ вырăна чиперех çитрĕм. Кунта хамăн малтан палланă çынсене тĕл пултăм. Вĕсенчен хăшĕсем ман пекех аманса госпитальсенчен тепĕр хут фронта таврăннă.

Фронт вăл çынна нумай шухăшлаттарать. Ачаран ку таранччен мĕнле пурнăçпа пурăннине тепĕр хут аса илсе пăхса тухатăп. Çак шухăшсене çырса хурасшăн-ха эпĕ – вăл питĕ интереслĕ пулмалла пек туйăнать...» – çапла çырнă январĕн 3-мĕшĕнче Иван Порфирьевич Моисеев. Конверчĕ çинчи адресĕ: Полевая почта, 1469, 760-мĕш часть.

Иван Порфирьевич редакцие таврӑнайман. Окопра ҫырса пынӑ повеҫӗ ҫухалнӑ.

«Вӑл редакцие таврӑнаймарӗ...» статьяра Павел Щипцов журналист-ҫыравҫӑ вӑрҫӑра пуҫ хунӑ Илья Семенов командирӑн (Муркаш райончи Ваҫкасси каччи) юлашки кунӗсене аса илсе каланӑ.

Подольскри Ҫар училищипе артиллери училищи курсанчӗсем Малоярославец патӗнчи ҫапӑҫӑва пӗрле кӗнӗ.

«Хӑйне пытанмалӑх окоп чавнӑ Илле Семенов, кӑвак хуплашкаллӑ тетрадьне кӗреҫе ҫине хунӑ та, тем ҫырать.

— Манран та салам ҫырма ан ман эсӗ унта, — асӑрхаттаратӑп тусӑма.

— Ҫыру мар-ха ку, дневник. Курни-иртнине виҫ сӑмахпа та пулин паллӑ туса хурас тетӗп. Чипер ҫӗнтерсе таврӑнсан, тен, пӗр-пӗр пысӑк япала ҫырма май пулмӗ-и? — сӑмахланӑ хушӑра пиртен сылтӑм енчи аслӑ ҫул еннелле пӑхса илчӗ Илле Семенов.»

Ҫар офицерӗсем пулма вӗренекен ҫап-ҫамрӑк курсантсем Мускавшӑн пынӑ хаяр ҫапӑҫусенче чи йывӑр самантра паттӑррӑн вилнӗ. Урӑх ҫар пулман пирки тӑшман танкӗсем айне вӗсен выртма тивнӗ.

«Сулахайран сасартӑк пулемет пеме пуҫларӗ. Сылтӑмра теприн сасси илтӗнсе кайрӗ. Пӗр курсант пынӑ ҫӗртех малалла ӳпӗнсе аллинчи пӑшалне ӳкерчӗ. Ун хыҫҫӑн ыттисем те тӑсӑла-тӑсӑла выртрӗҫ. Тӑшман пире ывӑҫ тупанӗ ҫинчи пек курса тӑрать.

— Ман хыҫҫӑн тӑшман пулеметне пӗтерме! — команда пачӗ те малалла упаленчӗ Семенов.

Эпир те командиртан юлмарӑмӑр. Хырӑмпа шунӑ хушӑра автоматран персе тата граната пӑрахса, хамӑр валли ҫул уҫса пыратпӑр. Акӑ Семенов пире тӑшман пулемечӗн хыҫне ертсе тухрӗ.

Фриц хӑйне хупӑрласа илнине туйрӗ пулмалла. Пулемечӗпе сиксе тӑчӗ те Семенова тӗллерӗ. Анчах ӗлкӗреймерӗ. Пирӗн командир хӑй ӑна автоматпа ҫулса пӑрахрӗ.

Тӑшман вилӗм акакан пулемечӗ шӑпланчӗ. Сулахайран перекеннине танк гусеницине таптаса лачӑртаттарчӗ. Ейӳ тухнӑ ҫурхи шыв пек ҫӗмӗрсе пыракан курсантсене тек нимӗн те тытса чараймарӗ. Автоматне тулли диск лартсан, И. Семенов та урра кӑшкӑрса малалла чупрӗ.

Йĕтре çурăлса чавнă лупашка урлă сиксе каçнă чухне вăл сулăнса кайрĕ. Автоматне вĕçертсе ячĕ. Икĕ аллине малалла тăсса, ĕннĕ курăк çине тăрăнчĕ.

Эпĕ ун патне чупса пытăм. Унăн сăнĕ сывă çынăнни пекехчĕ. Ăна курсан, ку çын йывăр çапăçу хыççăн канма выртнă темелле. Çамки варринче шăна пек курăнакан пульă йĕрне курсан вара, пурне те ăнланса илтĕм, вăрçă тăванлатнă юлташăма, çĕлĕке хывса, чуп турăм.

Вăл çĕнтерсе вилчĕ.

Юратнă командира чыслăн пытартăмăр».

Фронтовик-журналистсем И. Семенов тата Вл. Бараев çинчен фронтовик-журналист Яков Муратов 1968 çулта кăларнă «Çапăçу хирĕнче» (Фронтра çырса пынисемпе асаилӳсем) кĕнекери «Вĕсем Мускава хӳтĕлерĕç» очеркра (29-31 енсем) лайăх каласа хăварнă. Вĕсем пурте – Подольск курсанчĕсем.

«Кăвар чĕреллĕ те паттăр кăмăллă Павел Шипцов курсантăн 1941 çулхи октябрь кунĕсем йывăр та тумхахлă пулчĕç. Нумай асап тӳсме тиврĕ ăна кунта. Анчах хăй вăл çакăн çинчен аса илме питех юратмасть. Çывăх пĕлекен юлташĕсем хистесен те, кĕскен çеç çапла каласа парать:

– Малоярославецра пуйăс çинчен ансан, эпир вунсакăр километр хĕвеланăçнелле утрăмăр, унта оборона йышăнтăмăр. Окоп чавса вырнаçнă вăхăтра пуç тăрринче тăшман разведчикĕсем явăнса вĕçме пуçларĕç.

Çапла ĕçленĕ вăхăтра умри çырман тепĕр енчи вăрман хĕрринчен ракета вĕçсе хăпарчĕ. Çавăнтах тăшман енчен тупă, миномет кĕрлеме, пулемет вĕçĕмсĕр такăлтатма пуçларĕ. Йывăр снарядсемпе минăсем сывлăша çурса вĕçсе килеççĕ те пирĕн позици çине ӳксе шартлатса çурăлаççĕ. Тӳпере хура хĕреслĕ бомбардировщиксемпе штурмовиксем хуçаланаççĕ. Хăватлă моторсем улани бомба ӳксе çурăлнă сасăпа пĕрлешсен, таврара ним те илтĕнми пулчĕ. Пирĕн позицие хура тĕтĕмпе тусан карса илчĕ».

Ку сыпăка вăрăм илтĕмĕр, мĕншĕн тесен Подольск курсанчĕсен паттăрлăхĕ çинчен ятарлă романсемпе фильмсем ӳкерсен те йăлтах каласа пĕтерес çук. Эпĕ сире «За нами Москва» (Виктор Белоусов. «Правда», 30 сент. 1986) тата А. Никитинăн «Подольские курсанты» («Советская Чувашия», 14 окт. 1981) статьясен сыпăкĕсене вулама сĕнесшĕн.

Подольскри пехотăпа артиллери училищи курсанчĕсем хушшинче, Я.Т. Муратов шутласа кăларнă тăрăх, 1965 çулта 32 çын пурăннă. Вĕсенчен пирĕн Ст. Я. Жарков, Е.Е. Варламов ячĕсене аса илмеллех – вĕсем Чăваш педуниверситетĕнче вĕрентнĕ, хăйсем çинчен ырă ят хăварнă. (Подольские курсанты. – «Советская Чувашия», 14 октябрь, 1981).

Варшава çулĕ çинче Лелюшенко генералăн корпусĕ Гудериан армадине хирĕç пĕр танкпа! хирĕç тухнă. Танкĕ Тула артиллери училищин пулнă, вăл мотоциклистсемпе пĕрле çӳренĕ. «У мотоциклистов и был тот единственный танк. С ним столкнулся головной дозор гитлеровцев: пять танков, бронетранспортер, мотоциклисты. Кто кому уступает дорогу при таком соотношении, у фашистов сомнений не было. Но русский танк ринулся на них. Хотя не мог командир не знать, что за дозорными следуют другие. На что он тогда рассчитывал?

В том-то и дело, что лейтенант Новичков, командир «тридцатьчетверки», не рассчитывал. Знал: не на кого. За ним нет второго танка. Вся броня на этой длинной дороге пока – он один, его экипаж...

Когда «тридцатьчетверка» подбила два танка, остальные поспешили убраться. Вышколенный мозг гудериановских танкистов не допускал, что за дерзостью и упорством русского не стоят новые танки со звездами. Должно быть, они так и доложили начальству, и то не решилось соваться дальше без разведки авиацией.

Были выиграны драгоценнейшие часы. Тем временем к Мценску подошел состав с первой партией танков. Сразу с платформы они отправились в разведку к Орлу». («Правда», 1981, 30 сент.).

Ростова нимĕçсем илнĕ хыççăн 1942 çулхи июлĕн вĕçĕнче Сталин алă пуснă 227-мĕш (кашни фронтовик пĕлекен) приказ тухнă.

Ку вăхăтра, Ник. Тихонов 1944 çулта каланă пек, «Бывали дни, когда листовка была важнее рассказа, важнее любой поэмы, причем нужно было, как говорил один генерал на фронте, «исполнить немедленно, а если можно, то и ранее».

Фронтра «служебная публицистика» термин çуралнă. «Служебными жанрами были: корреспонденция с поля боя,

репортаж, письмо, листовка, памятка бойцу, короткая подпись, лозунг-двустишье».

Çак «хĕсмет публицистики» çарта ĕçлекен чăваш хаçатçисене пурне те паллă – вĕсене П. Хусанкай, Л. Агаков, Я. Ухсай, А. Талвир, Н. Ильбек пайтах çырса пичетленĕ.

Аслă Арапуç каччи – матрос карттусне тăхăннă Николай Горшков. Патăрел районĕнчен, райхаçатра ĕçленĕ.

Тăван çĕршыв – анне! Сана хам вăйăмпа
Тивĕçлине парса пахалаймарăм.
Сан мухтавна çĕклетĕп кăкăрпа,
Вăрçа кĕретĕп. Ку вăл – манăн парăм!

Исливан Тавлы (Лисков: 1918-1941). Ульяновск облаçĕнчи Чăвашкассинчен. Фронта Вăрнар райхаçатĕнчен тухса кайнă (Тĕплĕрех «Исливанпа Имет Лисковсем» статьяра пăхăр - А. Юманăн «Хамăр ялсем» кĕнекинче, 2008, 50-56 енсем).

Порфирий Лукоянов, Мургаш районĕнчи Мишер каччи. Художника вĕреннĕ, сăвăсем çырнă, çамрăксен хаçатĕнче ĕçленĕ. Çапăçури паттăрлăхшăн ăна Ленин орденĕ панă.

Митта тесен, пурте Митта Ваçлейне е Петĕрĕпе Иванне аса илеççĕ. Кунта сăмах вĕсен шăллĕ – Николай пирки. Вăл 1943 çулта хыпарсăр çухалнă. Çара кайиччен райхаçатра ĕçленĕ, тĕрленчĕксемпе сăввисене пичетленĕ. Вăрçăччен вăл «Дети капитана Гранта» кĕнекене чăвашла куçарнă. Николай – паллă Миттасен çемьинче вăталăххи пулсан та, ăсталăхĕпе кайра тăман. Анчах пуçланă юрра вĕçне çитерме вăрçă чăрмантарнă ăна. Кĕçĕннине – ултăмăшне, Иван Ара сăвăçа та – фашизм касса кайнă.

Тăван Çĕршыв! Манран сана тавах!
Эп сан ытамунта кăна телейлĕ.
Пĕр санра çеç тупса юратăва
Пĕр санпа çеç эп сывă та кĕрнеклĕ.

Анчах ман телее тăшман тĕллет
Ĕмĕрлĕхех манран туртса илесшĕн,
Вăл ман аннен хавас ватăлăхне
Вăхăт çитмесĕрех тискер вĕçлесшĕн.
Вăл ман вунсаккăрти çамрăклăха
Ирсĕр атти айне хурса таптасшăн,
Вăл ман савни çине асса пăхать,
Ăна та хăйĕн мăшкăлĕ тăвасшăн.

Ман пурнăç вăл, Тăван Çĕршывăм, сан,
Сана юратнă эп, ялан юратăп.
Мĕнпур юна тăкап саншăн пулсан,
Сан пурнăçшăн кăкăрпала тăратăп.

Тупа сăмахне Миттасем пăсман. Паттăрла вилĕмĕсем – вĕсен вилĕмсĕрлĕхĕ. Ан тив, паян та, ыран та сăввисем çапла янăраччăр. Ку вăл пирĕн ылтăн та хурçă çынсен чун-чĕрийĕ, ку вăл – халăхăн нихçан чакми пуянлăхĕ.

Çакăн пекех Аркадий Васильев (П. Ялгирăн «Сăваплă ĕç» статьи; «Ленинец», 1976, 26 авг.) поэт сăввисем, Василий Романов – Курск облаçĕнчи Саломено ялĕшĕн вилнĕ чăваш ачин произведенийĕсем, Патăрьелĕнче çуралса ӳснĕ Пракка Сатур, Тăвай ачи Александр Пермяк, Вăрмар районĕнчи Кавалта пурăннă Вениамин Туртуш сăввисемпе кулăшла калавĕсем вулакан умĕнчен таталмĕç.

«...Эпир Тăван Çĕршывăн Аслă Отечественнăй вăрçă фронтĕнче пуç хунă сăвăçсен сăвви-юррисене пухса сахал кăларатпăр е вуçех те кăлармастпăр. Икĕ съезд хушшинче Василий Васькинăн «Сăвăсем», Арсен Орловăн «Сăвăсем» ятлă кĕнекисемпе Владимир Бараевăн «Сӳнми хĕлхем» ятлă сăвăсен пуххи кăна тухрĕ» (Г. Ефимов, «Ялав», 1963, 5).

XX ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче «Çилçунат» студире вĕренекен студентсем хăйсен ентешĕсен кĕнекисене пухрĕç. Валериян Ильдер тăрăшнипе Кĕçтук Кольцовăн «Фронтра» (1979) кĕнеки пичетленнĕ. Паттăрсенчен пĕрин – Максим Ястранăн кĕнеки («Сăвăсемпе поэмăсем», 1986) Надежда Иванова тăрăшнипе кун курчĕ (Н.Г. Иванова халĕ – паллă меслетçĕ, Вĕрентӳ институчĕн доценчĕ). Галина Раевская Туртуш çинчен тĕплĕ статья кăларчĕ. Герольд Никифоров студент Иван Викторов пултарулăхне пухрĕ, Ираида Община – Федот Ситта, Владимир Рыбкин – Илле Думилин поэтсен кĕнекисене хатĕрлерĕç.

1943 çулта Курск пĕккинче çапăçса пуçне хунă чăвашсен паллă поэчĕ Андрей Петтоки. Анчах унăн çырăвĕсем, сăввисем, поэмисем манăçа тухмаççĕ. Муркаш районĕнчи йĕрлевçĕсем поэтăн Самарăра пурăнакан тăванĕсемпе тачă çыхăну тытрĕç. Геннадий Дегтярев тĕпчевçĕ хăй ентешĕн Андрей Петтокин паха кĕнекине пичетрен кăларчĕ (2005).

Хăйсем пуранна пулсан çак хастар çынсен кĕнекисене кăларас тесе студентсен нушаланса çӳрес пулмастчĕ. Анчах мĕн тăвăн – чăваш тĕнчин икĕ енлĕ пичĕ çинче кĕвĕçӳ кĕсенĕ, çаврăнăçусăрлăх, кайнисене картманни палăрчĕ.

Теçетке çулсем пичетлесе кăларасса кĕтсе выртаççĕ Кăтра Мишша калавĕсем, Гаврил Мыскар сăввисем, Марк Аттай юптарăвĕсем, Борис Шашков куçарăвĕсем, черетре – Ф.Ситта, Ф. Ванин, В.Усли, В.Туртуш... Хаяр вутра пуç хунă журналистсен суйласа илнĕ хайлавĕсен кĕнеки те черетре выртать...

Паттăрсем макăрмаççĕ... Самана темле çаврăнсан та – паттăр вăл паттăрах.

Пĕринче, совет влаçĕ арканиччененхи вăхăтра, Литвари Таборишки ачисем Чăваш Республикинчи Хĕрлĕ Чутай патĕнчи Хăмăркка ялне çыру янă, хăйсем патĕнче 1944 çулта пуç хунă Николай Колюшкин капитан çинчен тĕплĕнрех çырса яма ыйтнă. Хаваспах пурнăçларĕç ачасем çамрăк литовецсен ыйтăвне. Николай Колюшкин çинчен лайăх пĕлеççĕ вĕсем. Мăн Хăмăркка ялĕнче çуралнă вăл. Чухăн хресчен килйышĕнчен. Етĕрнери педагогика техникумĕнче пĕлӳ илет. Тăватă çул Çĕмĕрле районĕнчи Юманай ялĕнче вĕрентсе пурăнать. 1934 çулта, кĕркунне Шупашкарти педагогика институтĕнчи истори факультетне кĕрет. Çав вăхăтра калавсемпе фельетонсем çырма тытăннă, Н. Чурпай тесе алă пуснă. Çак псевдонима ахальтен илмен вăл. Хăмăрккапа юнашар Чурпай текен çырма пур – хитре те анлă вăл. Пĕчĕк Коля сахал мар çӳренĕ унта, кĕтӳ те кĕтнĕ.

Институтран вĕренсе тухнă хыççăн Н. Чурпай «Ленин çулĕпе» хаçатăн ответлă секретарĕ пулнă. Каярахпа Чăваш кĕнеке издательствинче ĕçленĕ, «Капкăн» журналта нумай пичетленнĕ.

Вăрçă пуçланнă кунах хăй ирĕкĕпе фронта тухса кайнă. Николай Чурпай дивизи хаçачĕн редакторĕ, рота командирĕ пулнă, Днепр хĕрринчен Балтика тинĕсĕ хĕррине çапăçусемпе çитнĕ.

Николай Колюшкин арăмĕ патне янă юлашки çырусенчен пĕринче çапла çырнă: «... Кĕрешӳре хавшак пулма çуралман эпир. Çавăнпа ĕнтĕ ирсĕр тăшмана пĕтĕмпе пĕтерсе тăкиччененех хăюллă пуласчĕ. Ан тив, эпир хăюллă пулнинчен тăшмансем ĕмĕр-ĕмĕр тĕлĕнсе пурăнччăр. Халĕ пирĕн пурин те пĕр тĕллев: тăшмана çапса аркатса, каллех мирлĕ те телейлĕ пурнасси».

Вăрçăра вилнĕ журналистсен ячĕсене ĕмĕр асăнмалла тăвас тесен ятарласа кĕнеке кăлармалла. Унта: Хурнай Мишши, Иван Андреев (Виногради), Елизар Абакшин, Михаил Аркай, Иван Ара, Федор Ванн, Исливан Лисков, Николай Горшков, Борис Шашков, Семен Елем, Ар. Захаров, Пракка Сатур, С. Савир, Илле Сорокин, Савва Константинов, Аркадий Хараç, Порфирий Лукоянов, Порфирий Калинин, Михаил Калай, Иван Каратай, Геннадий Хурзай, Ник. Юмангай, Вас. Юманкка,Тимеркке Куçми хайлавĕсем пулсан аванччĕ.

Аркадий Иванович Хараç – Я.Г. Ухсай ентешĕ – Пушкăрт республикинче Соловьевка ялĕнче çуралнă. 1940 çулта танк училищинче вĕреннĕ, фронта кайнă. Ун çинчен Ф. Вуколов-Эрлик поэма çырнă.

Т. Петров-Каштан «Вĕсем редакцине таврăнаймарĕç» статьяра («Çутă çул» хаçат, 1971, сент. 28) Хараçа мухтаса асăнать. Хараçăн Ёпхӳре 1936 çулта тухнă «Ăсану каçĕ», «Çумăр хыççăн» сăввисем «Хĕрлĕ Урал» сборникре пичетленнĕ (12 катрен). Аркадий Хараç хаçатçă Ухсай Яккăвне Мускава вĕренме кайма çул кăтартса янă.

Вăрçăра вилнĕ çамрăк çыравçăсене Петĕр Ялгир фронтовик хисеп турĕ. Вăл вĕсем çинчен хаçат-журналта çырчĕ, ячĕсене «Литературный мир Чувашии» (2005) кĕнекене кĕртрĕ.

«История русской советской литературы» тĕпчевĕн 3 томĕнче (М., 1968), «Журналистика и критика 40-х начала 50-х годов» (448-471), «Советские писатели во фронтовой печати» (1941-1945) – 472-498 с. пур. Ун пек тĕпчев чăвашла çырманха. Центрти хаçат-журналсенче фронт, арми, дивизи, çар хаçачĕсене, чăваш хаçачĕсене те тĕплĕ тишкерсе чăваш писателĕсемпе журналисчĕсен ĕçĕсене шута илмен, лайăххисене суйласа урăхран пичетлемен. «В редакцию не вернулись» ятпа вырăсла 3 кĕнеке тухрĕ. «Литературное наследство» ярăм ятарласа темиçе том кăларчĕ (т. 78, кн. 1, 1966: «Советские писатели на фронтах Великой отечественной войны»).

«Стихи, корреспонденции, очерки, рассказы, поэмы, повести и романы, пьесы – такого жанровго многообразия не знала газетная периодика в мирные дни... Обычно газетный материал быстро стареет, но литература военных лет не только летопись или памятник, она живет, обладая подлинно эстетической ценностью, живут произведения, рожденные

правдой своего времени, несущие пафос героической борьбы народа» (История русск. сов. литературы, 3, 454-455 с.).

1944 çул тĕлне Хĕрлĕ Çарта наци хаçачĕсем 22 дивизире тухнă: азербайджанла, узбекла, грузинла, казахла, туркменла, армянла, тутарла. Азербайджан тата узбек чĕлхисемпе 2 армире хаçатсем тухса тăнă.

Фронт хаçачĕсем те темиçе чĕлхепе тухнă – сăмахран, «За честь Родины» хаçат (I Украина фрончĕ) 4 тĕрлĕ чĕлхепе тухнă: украинла кашни кун, узбекла, казахла, тутарла – эрнере 2 хут (Вопросы журналистики, МГУ, 1959).

Мускав 1964 çулта виçĕ томлă «В редакцию не вернулся» пухчă кăларчĕ. Чăваш публицисчĕсен ĕçĕсене XX ĕмĕрте пухса пĕтĕмлетесси пулаймарĕ, малашне тумалли ĕç пулса юлчĕ.

Çапах та, лайăх тĕслĕхсем сахал мар. Александр Пермяк сăввисене шăллĕ пухса пичетлерĕ. Василий Васькин сăввисен кĕнекине тăванĕсем – Андрей, Александр, Валериан Никитинсем «Çамрăклăх кĕвви» (2002, 148 ен) ятпа, лайăх умсăмахпа тата «несĕл йывăçĕсемпе» пичетлесе кăларчĕç.

## 2.3. Вĕçленмен сăвă-юрă, кĕнекесĕр тĕрленчĕк-калав

Шырав чарăнас çук. Ĕçе çĕнĕрен тытăнакансене пулăшас тесе прозаиксен библиографи кăтартăвне кĕскен пичетлĕпĕр.

*Пуç хунă çамрăк çыравçăсен тĕрленчĕкĕсемпе калавĕсем:*

Абакшин Е. Юнлă тапхăр – «Хатĕр пул», 1935, № 9; Пурнăç сыпăкĕ – «Сунтал», 1938, № 12; Тимĕркке. – «Хатĕр пул», 1938, № 12; Костер патĕнче. – «Хатĕр пул», 1939, № 6;

Ара И. Мĕскĕн Мĕкĕте. – Капкăн, 1939, № 1-2. Яккупа асламăшĕ.– «Пионер сасси», 1940, сент. 13-мĕшĕ; «Сарă сăмавар». – «Йĕплĕ калавсем».

Атрак (Карцев) С. Ăмăртури кунсем. – «Коммунар», 1933, окт. 16-17.

Ахтубай В. Укçине. – «Сунтал», 1940; Савăнăç куççлĕ.– «Сунтал», 1940, 3 8.

Бадеман Петĕрĕ. Тапăрта. – «Хĕрлĕ Урал» кĕнекере, Ĕпхӳ, 1936.

Бараев Вл. Таврăнсан. – «Сунтал», 1939, № 6 е Проза антологийĕ, 1940 ç.

Викторов И. Юн тăкăннă вăхăтра (повесть сыпăкĕ).- «Чăваш илемлĕ литератури» кĕнекере. – М., 1926.

Воробьев С. Чаплă хăна.- «Чăваш коммуни», 1939, апр. 23.

Думилин И. Самоедсем патĕнче.- «Трактор», 1931, № 1; Вĕсенчен пĕри.- «Канаш», 1934, окт. 27; Мĕншĕн савăнать Абдул.- «Канаш», 1935, февр. 18; Иккĕмĕш пурнăç.- «Канаш», 1933, июлĕн 16; Ĕç кĕвви.- «Канаш», 1933, сент. 12; Кĕрхи чечексем.- «Канаш», 1933, сент. 28; Пирĕн герой (сăвă).- «Комсомолец» сб. Ш., 1933; Шурилин герой (поэма).- «Трактор», 1932, № 3.

Захаров Ар. Тинĕс тыткăнĕнче.- «Сунтал», 1936, № 4; Лейтенант.- «Сунтал», 1938, 3 5.

Исливан (Лисков). Йентти.- «Сунтал», 1937, 3 5; Тĕттĕм каç.- «Колхозник», 1935, дек. 15.

Калинин П. Саплăклă сăхман.- «Колхозник», 1934, дек. 6, 8; «Вăтам Атăл», 1935, № 4; Телейсĕр музыкантсем. – «Колхозник», 1935, дек. 2; Ванькkапа аслашшĕ – «Вăтам Атăл», 1935, № 4.

Кăтра Мишша. Уйăх ансан.- «Сунтал», 1932, 5-7; 6-7; Виçĕ алă. - «Сунтал», № 5-8; 1932; Урăх чĕре.- «Сунтал», 1933, № 8; Çтаппан бригадир. - «Канаш», 1935, авг. 9; Чĕмпĕр шкулĕ.- «Канаш», 1935, авг. 29; Кăмăл аван. - «Канаш», 1935, апр., 4; Ĕç укçи.- «Канаш», 1935, май, 27; Юлашки йăран. - «Канаш», 1936, авг. 4; Татăлнă ĕмĕт. - «Колхозник», 1936, февр. 29; Туслăх.- Сисĕм.- «Канаш», 1937, июль, 22, «Канаш», 1936, февр. 14-мĕшĕ.

Комиссаров (Киремет) П. Хура вăй. - «Сунтал», 1933; Исаев Мĕтрие – Мускаври ача çуртĕнче ӳснĕ юлташран.- Трактор, 1933, № 7.

Константинов С. Пекарь.- «Канаш», 1935, июлĕн 12.

Марушев Г. Стахановка кун-çулĕ (очерк). - «Ĕçхĕрарăмĕ», 1938, № 8, 14-15 енсем.

Орьев Г. Комсомолецсем (повесть). - М., 1929, 64 с.; Кама суйлас. – «Чăваш хĕрарăмĕ», 1928, ноябрь 30; Мăнкун каçхине.- «Чăваш хĕрарăмĕ», 1928, апр. 13 тата «Канаш», 1928, апр. 15; Ялкор пĕри. - «Чăваш хресченĕ», 1928, апр. 27; Сурхури мыскари. - «Чăваш хресченĕ», 1929, янв. 11; Отчет. - «Капкăн, 1932, № 1.

Павлов П. Таварӑ.- «Сунтал», 1938, № 11; Йӑнӑш пурнӑҫ вӗҫӗ.- «Канаш», 1936, фев. 14; Матви мучи.- «Канаш», 1936, июнь 20; Тантӑшсем.- «Сунтал», 1940, № 4.

Пиктемир Н. Кирпӗч тунӑ ҫӗрте.- «Сунтал», 1930, 3 10-11.

Петӗр Хветукӗ. Лява — хӗрлӗ салтак.- «Сунтал», 1933, № 8.

Туртуш В. Разведчиксем.- «Сунтал», 1941, № 2.

Сатур Пракка. Каласа пӗтерейменӗ (калав).- «Сунтал», 1935, 9.

Сорокин Ил. Боецсен — батарея командирӗ.- «Чӑваш коммуни», 1942, май, 10.

Ҫитта Хв. Мария Гордеева (очерк). - «Ӗҫхӗрарӑмӗ», 1936, № 4, 16-18 енсем. Ҫураки. Савӑтра (Ҫӗктер завочӗ).- «Комсомол», Ш., 1933; Паттӑр салтак.- «Илемлӗ литература», 1944, 17.

Усли (Сотнезов) В. 45 пин.- «Ҫамрӑк хресчен», 1928, ноябрь 7; Ула кӗсре. - «Канаш», 1928, окт 11; Чӗлӗмҫӗ.- «Канаш», 1928, сен. 2; Ял мар — юлташлӑх (Услӑ Пукаш ялӗ).- «Канаш», 1929, июль, 23. Ударлӑ колхозра. - «Коммунар», 1931, окт. 22; Манӑн сӑмах.- Комсомоли, Шупашкар, 1933; Ӗҫ пуҫламӑшӗ.- «Илемлӗ литература», 1941, № 3.

Филиппов А. Картус.- «Сунтал», 1938, № 6.

Чӗкеҫ Митти. Ҫур пӑт — Вӑтам Атӑл, 1934, № 3.

Янгас Н. Паттӑр хӗр.- «Канаш», 1935, сент. 22; Праскипе Петӗр.- «Канаш», 1936, янв. 5; Тыткӑнра.- «Сунтал», 1938, № 9. Катя — уйрӑм кӗнеке. (ЦГА ЧАССР, ф. 236, оп. 5 и 6 — Чурпай, Юмангай, Янгас).

Ястран М. Ҫулма тухнӑ кунсем.- «Канаш», 1935, июль 3.

Кӗнекесем кӑларма ӗлкӗрнӗ Н. Пиктемир, Н. Чурпай, И. Викторов, Ф. Ванин, В. Усли, Н. Калай тата фронтра пуҫ хунӑ ытти ҫыравҫӑсен биографийӗсем харкаммӑн пуян.

Вӑрҫӑччен студент е учитель пулнӑ ҫамрӑк ҫыравҫӑсене хӑйсене тепӗр ӑстрӑм пухса кӗнекелемелле. Вӑл шута кӗмеллисем, Елчӗксем — Алексей Ралек (1918-1942), Борис Альбор (1918-1941) тата Степан Арланов (1921-1942) Елчӗкри Кив Арланкассисем, «Ҫамрӑк большевик» хаҫатра, «Сунтал» журналта пичетленнӗ. Смоленск патӗнче вилнӗ.

Даниил Егоров (1919-1945) Шупашкар районӗнчи Анаткасси ачи. Толиккасси шкулӗнчен тӳрех вӑрҫа кайнӑ сӑвӑҫ.

Илле Илем (1923-1943), Канаш районӗнчи Кив Шелттем учителӗ. Канашра педучилище пӗтернӗ.

Иван Михайлов (1912-1941) юптаруçă, кулăш ăсти, ТР Течче патĕнчи Çĕньял каччи (Н. Розов. Нихçан манас çук... Ш., 2008, 155-156 енсем).

Николай Мишин (1918-1944), Куславкка районĕнчи Кĕнер ялĕнчен. Хусанти пединститутран çара илнĕ.

Гаврил Мыскар (1920-1942), Тăвай, Еншĕх Нăрваш. Учителе вĕренсе тухнă.

Иван Пименов (1914-1942) – Ĕренпур облаçĕнче ӳснĕ, сăвăç.

Чăваш пединститутĕнче вĕреннĕ. Нурăсра педучилищĕре вĕрентнĕ.

Вархуш Энжей (1920-1941), Трак енĕн поэчĕ. Çĕрпӳри педучилищĕрен вĕренсе тухнă.

Константин Энзер (1918-1944), учитель, Етĕрне районĕнчи Карикас каччи. Сăвăçă.

Кам чĕрлĕх тавăрса парайĕ.
Шута илес тесен ятран,
Çук пирĕн хушăра Бараев,
Петтоки, Чалтунпа Ястран...

Хусанкайпа пĕрле тăмалăх,
Ларса тухма Ухсай тавра,
Çырма çуралнă çамрăк халăх
Сахал-и пулнă Чăвашра?

Пурин ятне те астăватпăр.
Нихçан та манăçăн хурри
Вĕсем пулмаççĕ.
Янрасах тăр,
Вĕсен вĕçленеймен юрри!

*А. Воробьев. «Шута кайса хурланнă майăн.*

Хаяр вăрçăра пуç хунă çамрăксем хушшинче СССР писателĕсен ретне илнисем 18 çын:

Марк Аттай (1905-1945)
Владимир Бараев (1906-1942)
Николай Бусыгин (1906-1942)
Василий Васькин (1917-1942)
Иван Викторов (1901-1944)

Максим Данилов-Чалдун (1894-1944)
Илья Думилин (1911-1942)
Ефрем Еллиев(1907-1942)
Константин Кольцов (1916-1943)
Кӑтра Мишши (1911-1944)
Федор Николев-Сергеев (1881-1941)
Арсен Орлов (1918-1941)
Андрей Петтоки(1905-1942)
Николай Пиктемир (1906-1944)
Хветӗр Ситта(1911-1944)
Вениамин Туртуш (1912-1943)
Василий Усли (1912-1941)
Николай Чурбай (1908-1944)
Максим Ястран (1916-1942)

«Халӑх тӑшманӗ» тесе тӗрӗс мар айӑпланисенчен хӑшпӗрисене тӳрех персе пӑрахман. Анчах вӗсен те пурнӑҫран вӑрҫӑ ҫулӗсенче уйрӑлма тивнӗ. 1937 ҫулта айӑпсӑр айӑпланисем те пирӗн хисепе тивӗҫ:

Емельян Захаров-Маден (1893- 1941)
Аркадий Золотов-Арис (1901-1942)
Петӗр Митта (1910-1944)
Николай Патман (1895-1945)
Николай Шупуҫҫынни (1889-1942)
Нестер Янгас (1909-1942)

Пуҫа тайса ҫапла калатпӑр:
«Вилсе – вилӗме парӑнтарнӑ
Пире ыр пуласлӑх сунса.
Кашнин ячӗ халь пархатарлӑн
Ҫиҫет, ҫутӑ ҫӑлтӑр пулса.

*Юрий Петров. Асӑну хӑми умӗнче.*

## III. 1941-1945 çулсенчи литературăн паттăрлăхĕ

### 3.1. Сыхлăха манмасса

1933 çулта кăрлачăн 30-мĕшĕнчĕ Германии президенчĕ ватă фельдмаршал Гинденбург çапкаланчăн Гитлера правительство пуçлахпе лартнă, вăрçă çулне суйласа илнĕ. Пĕтĕм Союзри çыравçăсен пĕрремĕш съездĕнче (1934) вырăссен паллă поэчĕ Алексей Сурков питĕ уççăн асăрхаттарса каланă: «Давайте не будем забывать, что не за горами то время, когда стихи со страниц толстых журналов должны будут переместиться на страницы фронтовых газет и дивизионных полевых многотиражек...» Паллă сăвăçă-ăсчах лирика пăшалне авăрласах тăма чĕннĕ.

Чалтан вăрçи умĕнчи вунăçуллăхра хаяр тытăçусем килсе çитессине ăнланакан çыравçăсем çар ыйтăвне тĕплĕнрех ăнкарма чĕннĕ. 30-мĕш çулсенче вăрçă аслатиййĕ йĕри-таврах кĕрлесе тăнă. «Перед нами неибежность нападения врагов, перед нами небывалая по размаху война...» тенĕ М. Горький. Вăл хаяр фашизма хирĕç тăма чĕнсе çырнă статьясем тĕнчипех саланнă.

М. Горький сăмахне чăваш çыравçисем тăван ашшĕн сăмахне итленĕ пекех итленĕ. Элтешлĕх (граждан) вăрçи çинчен, çар паттăрĕсем çинчен сăвă-юрă хывнă, паттăрлăх хайлавĕсене пухса кĕнекесем кăларнă.

1929 çулта Н.В. Шупуççынни пухса тӳрлетнипе «Юнлă самана» пухчă тухать. Ăна валли чăваш çыравçисен хайлавĕсем çителĕклех пулман-ха. Кĕнеке валли вырăс тата ют çĕршывсен литературине куçарнă. Анри Барбюс, Иоганнес Бехер сăвви-калавне пичетленĕ. Н. Шупуççынни хăй «Дезертир» калавне кĕртнĕ.

И.Е. Ахахпа Г.В. Тал-Мăрса элтешлĕх вăрçи çулĕсенчех хастаррăн пуçланă ĕçе 30-мĕш çулсен варринче чăваш çыравçисем малалла тăснă. «Сыхă тăр» пухчăра (Самара-Мускав, 1933) Н. Янкасăн сăвăллă калавĕ, П. Абросимовăн «Шуррисен аллинче», Хв. Уярăн «Партизансем» калавĕсем, И. Тукташăн хăйĕн ентешĕ В.Н. Малов вартă салтак каласа панипе «Румынии чиккинче» асаилӳ пичетленĕ.

А. Сурковпа М. Горький каланисене чăваш çыравçисем манăçа хăварман. 1935 çулта «Сыхă пул» кĕнеке кăларнă. Унта кĕнĕ хайлавсем шухăшпа илем шайĕ самаях çӳллĕ пулни курăнать. И. Тукташăн «Çул çинче» калавĕ, М. Юманăн «Хĕрлĕ

çар пурнăçĕнчен» тĕрленчĕкĕсем (çиччĕ таран), М. Чалдунăн «Лубков отрячĕ», Митта Петĕрĕн «Кĕркури», «Хĕрлĕ Мĕкĕте», «Пакшапа Кирук», «Командир калавĕ», С. Ялавинăн «Поль тата Палюк» калавĕсем пурте сыхлăх, çар, хурал ыйтăвĕсене çутатнă.

1937-1940 çулсенче «Сунтал», «Илемлĕ литература» журналсенче шпионсемпе разведчиксем çинчен, çарти паттăрлăх çинчен сăвă-калав кашни кăларăмрах пичетленсе пынă.

Тĕнче тăнăçлăхĕпе ăс-пурлăхне хӳтĕлесе, 1935 çулта Парижра, 1937 çулта Валенсипе Мадридра пысăк конгрессем туса ирттернĕ. Унта хутшăнакан çыравçăсенчен хăшĕ-пĕри Испанири интернаци бригадине çырăннă. И. Эренбург «Известия» хаçатра, М. Кольцов «Правда» хаçатра Мадридпа Барселонăри çар чаçĕсенчен çырса тăнă, А. Фадеев, А. Толстой тата ытти çыравçăсем Испанире пулнă. 1933 çулта Шупашкарта çул-йĕр ăстисен пухăвĕнче пулса вĕри сăмах каланă, хитре очерк çырнă венгр Матэ Залка çыравçă Испанире Лукач генерал ячĕпе çапăçнă. Унăн паттăр вилĕмĕ чăваш çыннисене те хытах хумхантарнă.

Хĕвелтухăç енче Хасан кӳлли, Халхин-Гол патĕнче тытăçусем пулса иртнĕ, унта В.П. Винокуров ентешĕмĕр Совет Союзĕн Геройĕ ятне илнĕ. Карели каçминче çапăçусем пынă. Ку вăл Хĕрлĕ Çаршăн та, çыравçăсемшĕн те хаяр тĕрĕслев пулнă, çар ĕçĕ çинчен тарăнрах та тимлĕрех çырма хистекен хушу пекех янăранă.

М. Кипекĕн «Тăван çĕршывшăн» (1941), А. Медведевăн «Юлташ йĕрĕпе» (1941), К. Турханăн (Сергеевăн) «Атакăра» (1941), Ф. Çиттан «Фронтри калавсем» (1941) кĕнекисем фин, Хĕвеланăç Украинăпа Белорусси чиккисенчи çапăçусен материалĕсенчен Тăван Çĕршыв вăрçичченех çуралнă. Вĕсенче Чалтан вăрçи чăнласа хăрушлăхне çыравçăсем ăнланса пĕтерейменни те курăнать.

Литература критики сыхлăхпа çар ыйтăвне хускатсах тăнă. Тĕслĕхе, Леонид Агаковăн «Больше произведений на оборонную тематику» статьйине асăнăпăр («Красная Чувашия», 1941, 20 март).

«...Тема гражданской войны нашла значительное отражение в нашей литературе. Здесь, бесспорно, первое место занимает по количеству написанного писатель М. Данилов-Чалдун. Гражданская война как бы является сквозным лейтмотивом всего его творчества.

Кроме М. Чалдуна тему гражданской войны затронули такие писатели, как С. Ялавин, Н. Янгас, П. Хузангай, Н. Пименов, частично М. Исаев, В. Алакер, А. Калган, А. Петтоки и другие, но мы считаем, что эта огромная тема в настоящей литературе отражена совершенно недостаточно.

Еще плачевнее обстоит дело с показом Красной Армии и флота в последующие годы. (О флоте у нас не написано ни одной строчки!)... Положение, разумеется, неудовлетворительное».

Çапла вара, Аслă вăрçă литератури 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче мар, чылай маларах тапранса тухнă. Ыран вăрçă пуласси пирки совет литератури июнччченех çырнă.

Вăрçă тĕнче тăрăх унччченех алхаснă. Муссолини янă танксем Эфиопире йăраланнă, Франко бомбисем Мадрид çинче храплатнă, самурайсем Хасан кўллипе Халхин Голра харакири туса кăтартнă. Гитлер вĕшлисем Париж урамĕнче шăршласа чупнă, Польшăна çавăрса илме хапсăннă. Ку вăл пирĕн историшĕн, пирĕншĕн «вăрçăчченхи» тапхăр. Анчах литература ун чухнех вăрçă темипе чăнласа кĕрмешнĕ.

Июнĕн 23-мĕшĕнче «Правда» хаçатра А. Сурковăн вăрçă тухнă кун çырнă «Присягаем победой», Н. Асеевăн «Победа будет за нами» сăввисем, Л. Соболевăн «Отстоять Родину» статйи пичетленнĕ. «Красная звезда» хаçат Вс. Вишневскин «Немцев били, бьем, будем бить» статьйине çаптарса кăларнă.

Июнĕн 24-мĕшĕнче В. Лебедев-Кумачăн «Священная война» сăвви, «Известипе» «Красная звезда» хаçатсенче тухать. – Эмблемаюрă теççĕ ăна. Çак кунах «ТАСС чўречи» йĕркеленет, поэтсене С. Кирсанов ертсе пырать, художниксем хушшинче – Кукрыниксысем. Виçĕ. Кукрыниксыран пĕри – Теччĕри ырăсланнă чăваш Куприянов. Кĕçех вĕсен плакачĕ тухать. (С. Маршак сăвви):

Бьемся мы здорово,
Рубим отчаянно,
Внуки Суворова,
Дети Чапаева.

1941 çулхи декабрьте Н. Тихоновăн «Киров с нами», К. Симоновăн «Сын артиллериста» поэмисем пичетленнĕ.

1942 çулхи январĕн 27-мĕшĕнче «Правдăра» П. Лидовăн «Таня» очеркĕ, февралĕн 18-мĕшĕнче «Кто была Таня» очеркĕ тухать. П. Хусанкай тўрех «Таня» поэма çырма ларать.

Аслă вăрçă ветеранĕсем пурнăçран кайса пĕтнĕ ĕнтĕ. Вĕсен асаилĕвĕсем, документлă хайлавĕсем тăрса юлнă тăхăмĕсем валли. Прохор Трофимов, Георгий Орлов, Иван Тенюшев фронтовиксен романĕсемпе повеçĕсем – чăн пулнă ĕçсене кăтартакан хайлавсем – салтаксен чăтăмлăхне, паттăрлăхне мухтаççĕ. Хĕç-пăшал хăватлă, унтан та хăватли – чĕрĕ салтак.

«Во всякой войне, – тенĕ В.И. Ленин, - победа, в конечном счете, обуславливается состоянием духа тех масс, которые на поле брани проливают свою кровь. Убеждение в справедливости войны, сознание необходимости пожертвовать своею жизнью для блага своих братьев поднимает дух солдат и заставляет их переносить неслыханные тяжести...» (Çырнисен пуххи, 41 т, 121 ен).

Ку сăмахсем паян та тĕрĕсех, Аслă вăрçăра та тĕрĕс пулнă. Кам ăнлантарнă салтака ун чухнехи йывăр лару-тăрăва? Кам унăн чунне шанчăкпа, хастарлăхпа çĕкленĕ? Сăмах ăстисем – политработник, журналист, писатель.

## 3. 2. Чăваш çыравçисен фронтри сăмахĕ

Писательсен хĕрӳллĕ сăмахĕ халăха, унăн ывăл-хĕрне ирсĕр тăшмана хирĕç пурнăçа шеллемесĕр кĕрешме чĕннĕ, тачă пĕтĕçме пулăшнă. Пирĕн пĕтĕм литературăра, çав шутра чăваш литературинче те, вăрçăн малтанхи кунĕсенчех героика пафосĕ, чĕнсе калани тĕп вырăн йышăннă, хаяр тарăхупа курайманлăх вĕренĕ.

Çивĕч сăмах çивĕч пăшалпа танах кирлĕ пулса тăнă. В. Маяковский калани тӳрре килнĕ: вăхăт çыраткăна штыкпа танлаштарма ыйтнă.

Пин-пин çыравçă фронта боец, командир, комиссар, хыпарçă е «çыравçă» (хаçатсенче «писатель» должноçĕ те пулнă) тухса каять. Чалтан (Отечество) вăрçи Н. Тихоновшăн – тăваттăмĕш, А. Прокофьевпа А. Сурковшăн – виççĕмĕш, М. Аруйпа М. Чалдуншăн, Ф. Çиттапа унăн тантăшĕсемшĕн – виççĕмĕш хаяр вăрçă.

Чăваш çыравçисем пурте пекех вăрçăри утăмсене ахаль салтакран пуçланă. Каярахпа çеç, пултарулăхне кура, штабсене, дивизипе çар хаçачĕсене куçнă. Малти ретре салтаксемпе йĕпе блиндажра выртнă чухне паха япаласем çырма пултарни çеç чăваш çыравçисене хаçат ĕçне туртса кăларнă.

Тихӑн Петӗркки, Александр Алга, Андрей Петтоки фронтра «писатель» должноҫне лекмен. Вӗсем рота командирӗсем пулнӑ.

Хут ӗҫне фронтра тӳррӗн кӳлӗннисем – А. Талвир, В. Алатырцев, П. Хусанкай, В. Долгов, Г. Краснов-Кӗҫӗнни, М. Илпек, Мӗтри Ваҫлейӗ, А. Тимпай, И. Тукташ, А. Яндаш, А. Чистяков.

А. Алга, И. Пайраш, Тихӑн Петӗркки, М. Кипек, Н. Мранькка, М. Сироткин, М. Уйӑп, Хв. Уяр тата ытти ҫыравҫӑсем ҫар хаҫачӗсене ҫырса тӑнӑ. Хӑйсем курнӑ-пӗлнӗ паттӑрсене мухтанӑ, ҫирӗп пулма чӗнсе сӑвӑланӑ, чӑтма, кӗтме, шанма хавхалантаракан калавсемпе статьясем ҫырнӑ.

1952 ҫулта П. Хусанкай хӑйӗн автобиографийӗнче ҫапла палӑртнӑ:

«Я начал войну рядовым солдатом Донского фронта, который затем соединился со Сталинградским, окружив армию фельдмаршала Паулюса... События Великой Отечественной войны помогли мне осознать по-новому роль поэта-гражданина. Из всех наград за участие в войне высшей считаю для себя медаль «За оборону Сталинграда».

Сталинградшӑн пынӑ ҫапӑҫура поэтсем пӑшал тытса ҫапӑҫнӑ. Унта Владимир Бараев, Иван Михайлов, Илле Думилин, Михаил Степхим, Максим Ястран ӳксе юлнӑ. Унта Петӗр Хусанкай, Алексей Воробьев хытӑ аманнӑ.

Петӗр Хусанкайӑн чӑваш сӑмахлӑхӗнчи хӑюллӑ хастарлӑхне кӑйттӑ тупалаҫӑсем паянччenex пӗчӗклетсе е тиркесе пурӑнчӗҫ. «Саркел» поэма пирки турткалашса ҫырниех чӑваш тантӑшӗсене ӗмӗрлӗх намӑс туса тӑрать. Пур енчен те ҫирӗп, йӗркеллӗ, чӑнласа поэзи хайлавне идея енчен кӑлтӑклӑ тесе, ҫӗнтерӳпе таврӑннӑ поэта алла пӑшал тытса курман критиксем Мускав виҫипе хак пама тапаҫланаҫҫӗ.

Вӑрҫӑ вучӗ Илпек Микулайӗн пултарулӑхӗнче ӗмӗр тӑршшӗпех тапса тӑрать. Владимир Бараев ҫинчен ҫырнӑ «Тимӗркке», «Вӑрҫӑпа ҫӗнтерӳ» (Ш., 1973) кӗнекесем – фронтра пуҫланӑ хайлавсен тӑсӑмӗ.

Салтак кутамккине ҫакса ҫӳренӗ Илпек хаҫат тӗременне (редакторне) ларсан та «окоп тӗрӗслӗхне» ҫирӗп тытса пынӑ. Чӑваш литературин «лейтенантсен прози» вӑрҫӑ ҫулӗсенчех пуҫланнӑ. Ӑна Илпек Микулайӗ, Василий Алентей, Леонид Агаков тата ытти ҫыравҫӑсем аталантарнӑ. Чӑваш литератури

хăватне пурнăçран илнĕ, кĕнекесенчен мар. Аслă вулавăшсенче ларса Куçма Турхан пек çыракан чăваш çыравçи ун чухне мар, XXI ĕмĕрте те çук-ха...

Йăлтах – чăтса ирттернĕ хура-шурри. Çавăн пекех Леонид Агаков калавĕсем, повеçĕсем, «Шанчăк» романĕ.

1941-1942 çулсенче писатель взвод, унтан рота командирĕнче çӳренĕ. Каярахпа çеç дивизин «Советский патриот» хаçачĕн секретарьне илнĕ ăна. Фельетон, чĕнӳ, хыпар, статья, тĕрленчĕк – хаçат жанрĕн çар хаçатне юрăхлă кирек хăш жанрĕпе те çырнă чăваш çыравçи. Ку вăхăтран – 22 калавпа новелла унăн. Миçе статья, тĕрленчĕк – никам та шутламан. Л.Я. Агаков очеркĕсем çинчен çырнă диссертацинчен те паллă мар вăл. «Партизан Мурат», «Вилĕмрен вăйлăрах», «Юрă пурпĕр янăранă», «Салтак ачисем» – чăваш çар прозин классики. Вĕсене шкул программине кĕртнĕ.

«За советскую Родину» хаçат редакторĕ çумĕнче тăрăшнă Василий Алагер редакцие лекиччен саперсен ушкăнĕнче çӳрет. Сапер ĕмĕрте пĕрре çеç йăнăшать, тенĕ. Василий Осипович темиçе хутчен те хаяр çапăçăва кĕрсе тухнă, разведкăна кайнă, шыв-шур урлă малти ушкăнсемпе пĕрле каçнă. Пĕрре те йăнăшман. Тыткаларăшĕпе, тимлĕхĕпе В.О. Алагер сапер пулмах çуралнă темелле.

Вăрçă хирĕнче çырнă листовкисем, тĕрленчĕкĕсем, çырăвĕсем, калавĕсем питех те тĕл лектернĕрен ăна Хĕрлĕ Çăлтăр, Хĕрлĕ Ялав орденсемпе палăртнă. Çакă вăл çыравçă чăнах та курăмлă, витĕмлĕ журналист пулнине кăтартать.

Хаçатăн вăрçăри тĕллевĕ питех те тӳрĕ те уçăмлă. Унта психологиллĕ эссесем пичетлеме вырăн пулман. Чĕнӳ, чыслав, йыхрав, йăпату, тупа сăмахĕ мала тухса пынă. Вĕсене чуна тивмелле калама пĕлни – В.О. Алагер таланчĕ.

Ухсай Яккăвĕ – хăйне расна фронтовик. Вăл темиçе хаçатра ĕçленĕ: «Родина зовет», «На штурм», «Ворошиловец»... Вăл поэзире çеç мар, фронтри лару-тăрура та хăйне майлă ăста. Дивизи е çар хаçачĕн хыпарçи çапăçăва кĕмелле пулман – Яков Гаврилович темиçе çапăçура пулса тухнă. Икĕ хут йывăр аманнă. Уншăн награда мар – редактортан выговор илнĕ!

Çапăçусем хыççăн дивизи Дон хĕррине канма тухсан Ухсай Яккăвĕ чăваш салтакĕсен ячĕпе тăван халăха яма эпикăлла çыру-поэма хатĕрлет. Ăна батальонсемпе ротăсенче вулаççĕ, алă пусаççĕ. Ăнăçлă поэма. Истори докуменчĕ. Чăваш поэзийĕн

паттăрлăх эпосĕ. Кунта чăваш халăх аваллăхĕ, чăтса ирттернĕ ĕмĕрсем, çĕнелнĕ вăхăтăн çĕнĕ вырăнĕ, çапăçу хирĕнчи хурçă çирĕплĕхĕ – йăлтах ахаль салтак, ахаль хресчен, ахаль рабочи чунĕнче упранакан ĕмĕт, ăнтăлу, шанăçпа ĕненӳ. Литература паттăрлăхĕ çакă.

Тăван çĕршыв аслă вăрçине çамрăксемпе пĕрле вată писательсемпе журналистсем хăйсен ирĕкĕпе тухса кайнă. Вĕсенчен Федор Николаев-Сергеев, Михаил Акимов-Аруй, Максим Данилов-Чалдун, Николай Ефремов ячĕсене уйрăм палăртса хăварăпăр.

Федор Николаевич Николаев (Сергеев) (1881-1941) – паллă революционер, педагог, журналист, публицист тата поэт. Шкул ачисем ăна 8-мĕш класра вуланă «Хура халăх» поэма тăрăх пĕлеççĕ (М. Сироткин. Чăваш литератури. 8 кл. вĕренмелли кĕнеке, Ш., 1978, «Чăваш литературин иккĕмĕш тапхăрĕ» сыпăк, 101 ен; Чăваш литератури. Хрестомати. Ш., 1978, 7-мĕш класарăм, 110-111 енсем, «Хура халăх» поэмăн кĕскетнĕ вырăнĕсем; П.В. Денисов пухса кăларнă «Хышарçăсем» кĕнеке, Ш., 1962, «Шупашкар уесĕнчи Апаш» – 70-71 енсем, «Хусан. Ака уйăхĕн 22-мĕш кунĕ. Аслă праçник» – 148-149 енсем; «Хура халăх» – 223-229 енсем) тата ытти те).

Çуркунне. Çутă кăвак
Пĕлĕтрен хĕвел хĕртет;
Çутипе шурă юра
Чуптуса ирĕлтерет.
Пур тĕрлĕ вĕçен кайăк
Çуркуннешĕн савăнать.
Эс анчах, хура халăх,
Тĕнчери пур чĕрĕ чун
Савăннă çак вăхăтра
Тамăкри пек пурăнан!» –

тенĕ 1907 çулта «Хура халăх» поэмăра Федор Николаев. Тăван çĕршыв Аслă вăрçин асапĕсем те çутçанталăкран мар, влаçри çынсенченех килнĕ. Гитлер халăхсене тамăка чикнĕ. Пачах урăх сăлтавпа калани çĕнĕлле илтĕнсе кайнă.

Федор Николаев (Сергеев) 1881 çулхи январĕн 21-мĕшĕнче Тутар республикинчи Пăва районĕнчи Шемекре çуралнă. Ку ял тата Тайăр Тимкки 1889 çулта çуралнипе паллă. Хăйĕнчен 8 çул

кĕçĕн Тайăра Федор Николаев вулама, çырма, шутлама вĕрентнĕ. Федор Николаевич пурнăçĕн чылай енĕсене К.К. Петров кăларнă «Тайăр Тимкки – революционер» (Ш., 1967) кĕнекере вуласа пĕлме май пур. 1894-1898 çулсенче Хĕветĕр Чĕмпĕрти Чăваш шкулĕнче вĕреннĕ, революци юхăмĕнче палăрса тăракан паллă çынпа – Михаил Демьянович Демьяновпа пĕр парта хушшинче ларнă. Чĕмпĕрти шкултан вĕренсе тухсан Ф.Н. Николаева халь хи Ульяновск облаçĕнчи Чăнлă районĕнчи Каша шкулне ĕçлеме яраççĕ. М.Д. Демьянов вара Пăва районĕнчи Пимĕрселти шкул учителĕ пулса тăрать. 17 çулти учителе, Хĕветĕре, кĕçех ĕççĕр тăратса хăвараççĕ, вара вăл пĕр хушă ашшĕ патĕнче пурăнать. М. Демьянов ăна хăй патне чĕнсе илет, анчах вырнаçтарма май килмест – хăйне те хĕсĕрлеме тытăнаççĕ. Федор Николаев 1904 çулта Спасск хулинчи çутĕç пайĕнче инспекторта ĕçлеме пуçлать. Хĕл каçма çеç май килет, кунтан хăваласа яраççĕ. Çулла вăл Шупашкар районĕнчи Иккассинчи икĕ класлă училищĕне вырнаçать. 1906 çулта, январьте, Апашри хресченсем хытă пăлханма пуçлаççĕ. Н.Ф. Беляевпа Ф.Н. Николаев çак ĕçре хастарлăх кăтартнă. Хĕветĕр арăмĕ, Платка ялĕнчи учительница Агапия Алексеевна Николаева (Кармачева) революци юхăмне хăюллăн хутшăнать. Ăна «Хыпар» хаçатăн улттăмĕш редакторне çирĕплетеççĕ. «Хыпар» хаçата Ф.Н. Николаев çырса тăрать. Ун патне Иккассине Тайăр килсе каять.

Ф.П.Павлов çапла çырнă: («Сунтал», 1928, 11) «Н.Ф.Беляева.... 1906 çулта революци ĕçне тунăшăн Çĕрпӳ тĕрмине хупса лартрĕç, тепри – Ф. Сергеев (ун чухнехи хушамачĕ Николаев), ăна та çав ĕç çумне çыпăçнăшăн вырăнтан кăларса янă...» Эпир пĕлетпĕр, Н. Беляев кун хыççăн (1909 çулта) К.В. Ивановпа пĕрле Сызрантьи Коптевка ялĕнче çĕр виçсе çӳрет. Ф. Николаев М. Демьянов патне Хирти Кушкăна вĕçтерет, унтан Хусана каять. М. Демьянов вара Йĕпреçе Мĕтри Юманпа пĕрле тухса каять (кунта революционерсен ют çĕршывсенчен килекен литературипе докуменчĕсене пытарса пурăнмалли вырăн пулнă). Хĕветĕр «Хыпар» хаçатăн яваплă секретарĕнче ĕçлеме пуçлать. Анчах хаçат часах хупăнать. Арăмне редактор пулма ирĕк панă пулин те, редакцие полици тустарса каять, Тайăра тĕрмене ăсатать.

Тĕнче вăрçинче çӳренĕ Хĕветĕр революци хыççăн, 1919 çулта, Хусана çаврăнса çитет. Ăна кĕпĕрне комитечĕн чăваш

секцийĕн тĕп бюровне суйлаççĕ. 1921-1924 çулсенче Тĕп Комитет çумĕнче Чăваш секцийĕн секретарĕнче ĕçлет, 1922 çулта Мускавра «Ĕçлекенсен сасси» журнал йĕркелесе ярать.

1924 çулта Самара куçса каять, кĕпĕрне комитетĕнче вак халăхсен секцине ертсе пырать. 1928 çулта Чаллăпуç райкомĕн пĕрремĕш секретарьне суйлаççĕ. 1929 çулта ВКП (б)Тĕпкомне чĕнсе илеççĕ, Томск чугун çулĕн политпай заведующине яраççĕ, 1935 çулта Тĕпком лекторĕ туса хураççĕ.

1941 çулта, 60 çулхи çын, Ф.Н. Николаев-Сергеев Мускаври рабочисен батальонне çырăнать. Ăна батальон комиссарĕ туса хураççĕ. Мускава хӳтĕлесе, Волоколамск çулĕ çинче паттăррăн çапăçса вилет.

Волоколамск çулĕ çинчи хаяр çапăçусем çинчен каярахпа Сергей Юшков, Георгий Орлов фронтовиксем романсем çырса кăларчĕç. Мускав патĕнче чăваш салтакĕсем ытти çĕртинчен йышлăрах пулнă – чи йывăр вăхăтра вĕсем кунта курсантсемпе, салтаксемпе пĕрле вута кĕнĕ. Вĕсен паттăрлăхне чăваш литератури тивĕçлипе кăтартайман-ха.

Мускав, Сталинград, Ленинград ячĕсем чăваш чĕлхи çинчен кайман вăрçă çулĕсенче. Блокадăри Ленинградран илсе килнĕ ачасем чăваш ялĕсенче пурăннă, Ишекри ачасен çуртĕнче вĕреннĕ.

Ленинград çыннисем чăваш халăхне уйрăммăн сума сунă. Çĕр-çĕр тĕслĕх пур Ленинград тухтăрĕсем чăваш каччисене вилĕм аллинчен туртса илни. Иван Одюков фольклорист Ленинград госпиталĕнче сывалать, Александр Гармонщиков учитель-краеведа ура çине тăратаççĕ. Мухтав орденĕн тулли кавалерĕ пулса тăнă чăваш ачин Александр Парминов пуçĕ вĕçĕнче Социализмла Ĕç Геройĕ Владимир Воячек врач арăмĕ виçĕ талăк çĕрĕпе хуралта ларать. Çак пĕр тĕслĕх хăй кăна паттăрлăх эпосне тивĕçлĕ пулăм.

Блокадăри Ленинградра «За Родину» дивизи хаçатĕнче редакторта Федот Ситта – сумлă-ятлă çар çынни вăрах вăхăт ĕçленĕ. Фронтри хаçатсен редакцийĕсемпе ирттерекен канашлусенче тухса калаçнă вăл. Ун патĕнче Ленинградри паллă писатель-фронтовиксем В. Саянов, Мих. Дудин, П. Журба, А. Прохоров, И. Авраменко çырса тăнă. 1944 çулхи февралĕн 23-мĕшĕнче Федот Ситта фронтăн малти йĕрĕ çинче артиллери вучĕ айне лексе вилнĕ.

Вырӑсла та, чӑвашла та ҫырнӑ Алексей Чистяков, Борис Шашков, Сергей Макаров, Николай Бусыгин, Владимир Алатырцев вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче ҫырнисем — вӑхӑт киветеймен хайлавсем, журналистикӑпа литературӑн ҫӗнтерӳ летопиҫӗ.

Борис Шашкова халалланӑ сӑвӑра унӑн журналист — тусӗ Сергей Макаров сӑвӑҫ ҫапла каланӑ:

Погиб он в первый час войны,
Душою лирик,
Сердцем летчик,
И в биографии страны
Его звезды остался росчерк...
Чтоб жить спокойно нашим детям
Погиб он в первый час войны.

Борис Шашков — К.В. Ивановӑн вилӗмсӗр «Нарспине» вырӑсла куҫарнӑ пӗрремӗш сӑвӑҫ. Паттӑр Борис Шашков летчик-журналист ҫинчен сӑвӑпа ҫырлахни сахал. Кӑштах вӑхӑт иртсен, Борис Шашков кӗнекисене курӑпӑр. Вӗсене пухса пичетлессе шансах тӑратпӑр. Тепӗр поэтӑн — Николай Бусыгинӑн Чӑвашгизра «Земля в цвету» кӗнеки икӗ хут тухрӗ (1941, 1960). Поэтӑн суйласа илнӗ сӑввисем. Ахальтен мар вӑл «Ҫӗр чечекре» ятлӑ. Тепри - «Счастье» (1980). Ҫӗр ҫинче тӑнӑҫ пурнӑҫ чечеклентӗр тесе, Тӑван ҫӗршыв ҫинче ирӗклӗх ялавӗ вӗлкӗштӗр тесе Ржев патӗнче вута кӗнӗ Николай Бусыгин, Пӑрачкавӑн чӑвашла пӗлекен вырӑсӗ. Вӑл «Красная Чувашия» хаҫат корреспонденчӗ пулнӑ.

Николай Бусыгин — талантлӑ сӑвӑҫ. Вӑл чӑваш поэзине каҫса кайса юратнӑ, Шелепипе Ухсай сӑввисене вырӑсла куҫарнӑ. «Земля в цвету» кӗнекене Шелепин «Чӑваш» «колхоз», «Максим Горькие», «Пирӗн Хӗрлӗ Ҫара» тата Ухсай Яккӑвӗн «Ҫураҫу сӑввисене кӗртнӗ». Вӗсене Николай Иванович Бусыгин килӗшӳллӗ те янӑравлӑ куҫарнӑ.

«Комсомольская правда» хаҫатӑн фронтри хыпарҫи Алексей Талвир — чӑрсӑр, хӑюллӑ, тӳрӗ чунлӑ ҫыравҫӑ. Унӑн Аркадий Гайдар вилӗмӗ ҫинчен ҫырнӑ очеркне пӗтӗм ҫӗршыв вуласа пӗлнӗ. Александр Яндаш, Семен Минеев, Трофим Майоровпа Михаил Якимов, Василий Долгов журналистсем литература туртӑмӗпе паха хайлавсем пичетленӗ. Нумай мар вӗсем, анчах — хаклӑ. Хаклӑ, мӗншӗн тесен ҫав хӗрӳ вӑхӑтӑн хӗмне сапса тӑраҫҫӗ.

Вĕсен репортажĕсенче, хыпарĕсенче сыхланса юлнă ятсем паян та, ыран та пирĕншĕн хаклă. Вĕсен хальхи йĕрĕпе çаврăнса тухса çĕнĕ тĕрленчĕксем çырма та пулать. Тĕслĕхрен: В.А.Долговĕн «Снайпер Григорьев» очеркĕн геройĕ — Пушкăртстанри Слакпуç çынни Федор Павлович Григорьев, вăрçăччченех шофер пулнă хастар этем (Чăв. Коммуни, 1943, март, 10; Илемлĕ литература, 1944, 16).

«Тăван çĕршыв сана аса илетĕп, сана асра тытатăп», — тенĕ Василий Долгов хăйĕн прозăлла сăввинче. Вăл пин-пин салтак шухăшĕпе пĕр килнĕ, пин-пин салтака тăван кĕтесне, çывăх вырăнсене, çынсене аса илсе лăпланма пулăшнă.

Хв. Уяр кăкăрĕ çинче те — çар наградисем, Мухтав орденĕ. Вăл хаяр çапăçусен малтанхи кунĕсенчех çар темипе калавсем пичетленĕ, кĕнекесем пухса кăларнă.

Тылра юлнă писательсем — Н. Шелепи, С. Элкер, Иван Мучи, И. Максимов-Кошкинский, М. Трубина, К. Турхан, К. Чулкаç, А. Ĕçхĕл, С. Шавлы, А. Кăлкан, Н. Айзман тытте канăç пĕлмен. Вĕсем хаçат-журнал, кĕнеке кăларас ĕçе йĕркелесе пынă, тылри халăхăн паттăр ĕç-хĕлне кăтартакан хайлавсем пичетленĕ.

1942 çулта хастар сăвăç Ив. Ивник вăхăтсăр çĕре кĕнĕ. Вăрçă пулман пулсан вăл сывалнă та пулĕччĕ. Вăрçă никама та шеллемен. Тĕрĕссипе пăхсан, чăваш ялĕнчи тылри пурнăç çартинчен те йывăртарах килнĕ: апат-çимĕç çитмен, тум-тир пулман, кил-çурт сивĕ, ача-пăчана пăхакан юлман...

Вăрçă хирĕнче пысăк хайлавсем çуралма пултарайман. Сăвăсемпе калавсем, статьясемпе тĕрленчĕксем, çырусемпе очерксем килнĕ фронтран. Пăшалпа пĕрле алла кăранташ тытса çапăçнă писательсенчен Л.Агаков, Илпек Микулайĕ, В.Ржанов, А.Талвир, Я.Ухсай, П.Хусанкай, Хв.Уяр, В.Алентей, А.Алка, А.Артемьев тата ытти çыравçăсем вăрçă хыççăн та çар темипе хастар ĕçленĕ. Малтанах вĕсем вăрçă паттăрĕсене мухтакан калавсемпе очерксем, сăвăсемпе поэмăсем, тĕрленчĕксемпе повеçсем çырнă. Каярахпа пысăк повеçсемпе романсем те çуралнă. Вĕсенчен паллăраххисем: М.Кипекĕн «Паттăрсем хыпарсăр çухалмаççĕ», В. Сатайăн «Летчиксем», Л.Агаковăн «Шанчăк», А.Алкан «Хĕçпе çурла», А.Афанасьевăн «Юманлăх сулçă тăкмарĕ» романĕсем, А.Артемьев, В.Алентей, В.Алакер, В.Сатай повеçĕсем, Н. Евстафьев, Н.Сандров, Я.Ухсай, П.Хусанкай, А.Воробьев, А.Тимпай поэмисем.

Пĕтĕмлетсе шутласан, Тăван Çĕршыв Аслă вăрçинче пулнă, вут айĕнчен таврăнса литература ани çинче малалла ĕçленĕ çыравçăсем йышлă. Вĕсене те Хисеп хăми çине кĕртме вăхăт çитрĕ: Леонид Агаков, Михаил Акимов-Аруй, Василий Алакер, Владимир Алатырцев, Александр Алга, Василий Алендей, Филипп Андреев, Александр Артемьев, Алексей Афанасьев, Михаил П. Белов, Михаил Ф. Белов, Валентин Бурнаевский, Иван Вашки, Евстафий Владимиров, Алексей Воробьев, Филипп Вуколов-Эрлик, Владимир Грибанов, Николай Дедушкин, Василий Долгов, Николай Евстафьев, Николай Ефремов, Николай Илпек, Владимир Канюков, Мĕтри Кипек, Григорий Краснов-Кĕçĕнни, Иван Малгай, Алексей Медведев, Николай Мишутин, Никифор Мранькка, Георгий Орлов, Кузьма Пайраш, Тихăн Петĕркки, Константин Петров, Вениамин Погильдяков, Василий Ржанов, Леонид Родионов, Владимир Садай, Геннадий Сидоров, Михаил Сироткин, Николай Стуриков, Алексей Талвир, Александр Тимбай, Илле Тукташ, Валентин Урташ, Яков Ухсай, Хветĕр Уяр, Герасим Харлампьев, Петĕр Хусанкай, Алексей Чистяков, Петĕр Чичканов, Петĕр Ялгир, Александр Яндаш.

## IV. АСЛĂ ВĂРÇĂ ВĂХĂТĔНЧИ ЧĂВАШ ПОЭЗИЙĔ

***1941-1945 çулсенчи сăвăсем***

**Александр Алка** *(çарта 1939 çултанпа; фронтра рота командирĕ; 4 хут йывăр аманнă; Берлина çитнĕ):* Июнĕн 22-мĕшĕ. - Халь чунри ăшă кăмăл. - Ас ил-ха, юлташăм. - Аманнисене курсан. - Ырă ят. - Днепр. - Бранденбург хапхи умĕнче. -Çĕнтерӳ ялавĕ. -Дунай хумĕсем. - Майăн 9-мĕшĕ.

**Александр Артемьев** *(фронта вăтам шкултан кайнă; анăçра нимĕçсемпе, тухăçра яппунсемпе çапăçнă; виçĕ хут йывăр аманнă)*: Юлашки каç. - Салтак амăшĕ. - Тăшман çĕрĕнче. - Чура-хĕр юрри. - Киле таврăнни (баллада).

**Марк Аттай** *(фронтра 1942 ç. паттăрла вилнĕ):* «Ах, мĕскершĕн этемĕн вăй-халĕ...» (Юптарусемпе такмаксен кĕнекисем - «Хĕрлĕ сăнă» 1929); «Çамрăк хунав», 1932).

**Алексей Афанасьев** *(Карели фронтĕнче 1943 йывăр аманнă):* - Гвардеец ӳкрĕ. - Вырăс капитанĕ.

**Валентин Ахтубай** *(Мускаври журналистика институтĕнче вĕреннĕ, фронтран йывăр аманса таврăннă пирки пултарулăх ĕçне çĕнĕрен тытăнайман, Тюмень облаçĕнчи Викулово районĕнчи Кӳлĕ ялĕнче вилнĕ).-* Украина. - Тĕнче касса çӳрерĕм (ТА.,1988,11).

**Николай Базанов**. У бывшей границы;

**Владимир Бараев** *(лейтенант; 1941 ç. Мускава Малоярославец патĕнче хӳтĕленĕ, 1942 ç. Сталинградра пуç хунă):* «Сӳнми хĕлхем» (1961) кĕнекери сăвăсем. Арăслан ывăлăма.

**Николай Бусыгин**. «Родина» тата «Земля в цвету» (1960) кĕнекери сăвăсем.

**Федор Ванин** *(1941 çулта Мускав патĕнчи çапăçусем вăхăтĕнче вилнĕ):* юптарусем.

**Серафим Васильев** *(Пушкăртстанри Туймаса чăвашĕ, Чалтан вăрçинче утлă çарта çапăçнă):* Тăван çĕршыв (сăвă).

**Василий Васькин** *(Фронта хăй ирĕкĕпе кайнă. 1942 Конотоп хулине ирĕке кăларнă чухне паттăрла вилнĕ):*

«Сăвăсем» (1963) кĕнекери «Вилĕм тăшмана!», «Поход юрри», «Тăван çĕршĕн çĕклен, паттăр халăх» сăвăсем.

**Иван Вашки** *(аслă вăрçăра çапăçнă).* Пăрлă пĕлĕт айĕнче.

**Иван Викторов** *(халăх ополченийĕпе Мускава хӳтĕлеме тухнă; Белоруссири партизансен отрядĕнче разведчик пулнă; тыткăна лекнĕ, фашистсем шартлама сивĕре шывпа пăрлантарса вĕлернĕ):* «Юлашки сăмах» сăвă.

**Алексей Воробьёв** *(1942 ç. Сталинград патĕнче йывăр аманса тавăрăннă):* Салтак. - Тупа.

**Василий Давыдов-Анатри**. Çутă хĕç.

**Илья Думилин** *(1941 çултанпа фронтра, отделени командирĕ. 1942 Сталинград патĕнче пуç хунă):* - Юрă.- Салтак тӳмисем (хĕр йĕрри).

**Николай Евстафьев** *(1939 - Халхин-Гол патĕнче Япони самурайĕсене хирĕç, 1945 - Маньчжурие ирĕке кăларнă çĕрте çапăçнă):* Военкоматра. - Ылхан сăмахĕ. - Амăшĕн пилĕ. - Вилĕмсĕр юман. - Тӳремлĕх. - Хăрушă вăрçă – пысăк ту пек…

**Ехрим Иванĕ** *(Иван Ефремов, 1906-1946, вăрçăччен «Çамрăклăх» кĕнеке кăларнă, фронтра йывăр аманса таврăннă, Шупашкарта вилнĕ; биографийĕ А.Еграшкинăн 2002 çулхи «Кайсарово» кĕнекинче пур).* Пурте пĕриншĕн!

**Иван Ивник**: Ылхан. - Халь те, малашне те.

**Александр Катай** *(1937-1966 çулсенче çарта пулнă, вăрçăра аманнă).* «Вăл вилмен», «Берлинти палăк» сăвăсем.

**Кашкăр Микули**. Тĕп пултăр фашист. – Атăл. - Çĕнĕ гимн. - Сехет çитет пĕтесси.

**Александр Кăлкан.** Фашизма – вилĕм!

**Константин (Кĕçтук) Кольцов** *(Карели фронтĕнче çапăçнă.1943 йывăр аманнă, госпитальте чĕри тапма чарăннă):* Йытта – йытă вилĕмĕ. - Чăн сăмах.- Манăн çăлтăр. - Кĕт мана, эп таврăнатăп, хĕрĕм. «Фронтра» (1979) кĕнеке.

**Григорий Краснов–Кĕçĕнни** *(Пулемёт взвочĕн командирĕ. Ленинград блокадине татма хутшăннă):* Амăшĕпе ывăлĕ. Ваттисем çапла каланă, Фашист килсен.

**Иван Малкай** *(Тăван Çĕршыв аслă вăрçин ветеранĕ):* Амăшĕн сăмахĕ. - Шурă кăвакарчăн. - Тăлăх ача. - Манас çук эс ăна.

**Николай Митта** *(фронтра вилнĕ):* Манăн тупа.

**Иван Михайлов** *(1912-1941, кулăш ăсти, сăвăç, Сталинградра пуç хунă; Н.Розовăн «Нихçан манас çук», 2008, кĕнекине пăхăр).* Сĕмсĕр сысна.

**Арсений Орлов** *(Вăрçăн малтанхи кунĕсенчех çапăçăва кĕнĕ; взвод командирĕ. 1942 ç. паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ):* «Сăвăсем» (1960).

**Афанасий Павлов** *(Трак-Аслă Чуллă каччи; взвод командирĕ, 1944 çулта Витебск патĕнче пуç хунă).* Асилӳсем.

**Александр Пермяк** «Çук, çук! Тăван анне пекех...»- Тусăма. – Пиши мне письма.

**Андрей Петокки** *(аслă лейтенант; 1942 ç. Витебск хули патĕнче çапăçура пуç хунă):* Тăвата кĕнеке пичетленсе тухнă: «Çирĕм иккĕ» (1932), «Вунă çул» (1936), «Сăвăсемпе поэмăсем» (1964), «Андрей Петтоки: пурнăçĕпе пултарулăхне çĕнĕлле ăнланни» (2005).

**Николай Пиктемир** *(фронта хăй ирĕкĕпе кайнă; взвод командирĕĕ 1943 ç. хаяр çапăçура вилнĕ):* Тавăру.

**Николай Сандров** *(Ленинград, Новгород, Двинск, Рига хулисене ирĕке кăларнă çĕре хутшăннă):* «Вăйăра юрлаççĕ», «Вутра» сăвăсем.

**Илья Семенов** *(учитель, фронтран йывăр аманса таврăннă, 1943 килте вилнĕ):* Артиллерист сасси. - Тăшмана - вилĕм!

**Александр Тимпай** *(1943 çапăçусене кĕнĕ,. 1944 ç. Орша хулине ирĕке кăларнă чухне виççĕмĕш хут йывăр аманнă):* «Суран» поэма сыпăкĕсем.

**Илле Тукташ** *(чирлĕ ӳпкепе хăй ирĕккĕн фронта кайнă; дивизи хаçачĕн тĕременĕ.):* Ăсату. - Ăмăрткайăк.- Çĕр-паттăр. - Лантăш. - Сывлăм. - Хĕç. - Пурнăçпа юрату. - Андрей Петтокие асăнса. - Шурă кăвакарчăн. - Шăпчăк. - Кĕмĕл тополь. - Çĕнтерӳ юрри.- Тăван çĕршыв.

**Вениамин Туртуш** *(учитель, вăрçăра 1943 вилнĕ):* Малалла, анăçа! - Юн чĕнет тавăрма.

**Уйăп Мишши** *(вăрçă вăхăтĕнче Самарпа Мускав хулисенче вăрттăнлăх хĕсметĕнче тăнă):* Хаярлăх çуралчĕ.- Сталинград. - Наступлени. - Ан ман.

**Валентин Урташ** *(1941 ç. шкул пĕтернĕ хыççăн çара çулĕсене пысăклатса кайнă; 1943 ç. йывăр аманнă):* «Çыру çырмашкăн аллăм çуккă», «Аппа патне», «Парне» сăвăсем.

**Василий Усли** *(лейтенант; кăнтăр-хĕвеланăç фронтĕнче çапăçнă, Киев патĕнче 1941 ç. хыпарсăр çухалнă):* «Герой амăшне», «Мăшăрăма» сăвăсем...

**Яков Ухсай** *(çар хаçачĕсен хыпарçи; темиçе хут йывăр аманнă):* Мускав. – Çыру – Чăваш чĕлхи. - Çумăр. - Çырă куçăм... - **Шăпчăк**.- Карти-карти кикак хуркайăк. - Шăллăм. - Капитан Гастелло.- Хуркайăксем. - Винтовка.- Куккук. - Танкри тĕлĕк. - Вăрçă хирĕнче.

**Петĕр Хусанкай** *(çар хаçачĕсен хыпарçи, йывăр аманнă):* Хăюллăн малалла! – Поэт тăпри çине.— Памастпăр ирĕк хулана! – Тăван Мускавшăн. - Орден. - Делиев маттурлăхĕ. - **Ширшов** комсомолец паттăрлăхĕ. - Арам Петросян. - Мунча шăрши. - Ман çăлтăр. - Таня. – Çĕнтерӳ юрри. – Фронтпа тыл пĕр пулсан – çĕнтереймĕ тăшман. - Аптраман тавраш (роман сыпăкĕсем).

**Стихван Шавлы**. Гитлер çамки çине. - Вырăс салтакĕ. - Мускав.- Парăнман Раççейĕн çĕрĕ. - Титенков Мускава сыхлать. - Реквием.

**Борис Шашков**. (Çапçура вилнĕ). Другу.

**Николай Шелепи**. Чĕнетĕп! - Тăршшĕ икĕ метр, урлăшĕ пĕрре территори кирлĕ Гитлере. - Паттăр летчик юрри. - Фашистсене вилĕм.

**Семен Элкер:** Юншăн - юнĕ - Хаярлăх сăмахĕ. - Фашизм йăхне - çĕр тĕпне. - Тавăрăр тăшмана!

**Вархуш Энжей**. (Фронтра пуç хунă). Тăван çĕршыв.

**Аркадий Эсхель**. Халăх хаярлăхĕ. - Савни парни. - Амăшĕн пилĕ. - Ăмăрткайăк.

**Степан Этмин**. (вăрçăра пуç хунă). Вĕрен эс, ачам! Çĕнĕ Çул сăвви.

**Петĕр Ялгир** *(1941-1944 çарта хĕсметре тăнă):* «Салтак пултăм», «Шыравçăсем», «Туссем», «Çапăçу умĕн», «Тивĕç», «Тавăрмалла» сăвăсем.

**Максим Ястран** *(1942 ç. Сталинград патĕнче паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ):* «Пахчари калаçу, «Вилнĕ тусăма» сăвăсем. «Çĕнтерӳ ялавĕ» (1941), «Сăвăсемпе поэмăсем» (1986) кĕнекесем.

* * *

Çичĕ çулхи, Çĕр çулхи вăрçăсем çинчен кĕнекесем çырнă пекех, Иккĕмĕш тĕнче вăрçи çинчен этемлĕх çырма пĕрре те манса каймарĕ: асилӳсем нумай тухрĕç, кинокартинăсем ӳкерчĕç, пĕтĕмлетӳллĕ энциклопедисем кăларчĕç.

Фронтран таврăннисен ăрăвĕ кайса пĕтрĕ. Вĕсем ĕмĕр тăршшипех вăрçă вутне асра тытса пурăнчĕç. Хăш поэт манса кайнă вăрçă çулĕсене? Петĕр Хусанкай-и, Ухсай Яккăвĕ-и е Илле Тукташпа Валентин Урташ-и? Пĕри те манман.

Ăрусене самана çуратать. Вăрçă чăваш пуçĕ çине сиксе аннине чăваш историйĕпе хытă кăсăкланакан сăвăçсем 1937-мĕш çултах биссе илнĕ – ун чухне ака уйăхĕн 26-мĕшĕнче нимĕç фашисчĕсен «Кондор» легионĕн бомбардировщикĕсем ирĕке хытă юратакан баск халăхĕн Герника хулине тĕппи аркатса тăкнă. Н.Я.Марр академик «Басксем чăвашсемпе тăван» тесе каланине астăвакан чăвашсемшĕн хура хыпар пулнă çакă.

Çĕнĕ самана пуçланнă. Вăрçă алăкран шакканă. Вăрçă ачисен самани, вăрçă çыннисен ăрăвĕ ура çине тăнă. Урăх ăрусем литературăна хăйсен сăмахĕпе, сăнарĕсемпе, урăхларах илем (эстетика) çулĕпе пырса кĕреççĕ, хăйсен саманин нимпе ылмаштарми сăнне ӳкерсе хăвараççĕ.

Кăштах хăйне майлă халлă-хапăллă çамрăк çыравçăсен эстетикăпа сăнарлăх программи палăрсанах çав виç-тăват çынна тĕпчевçĕсем литература ушкăнĕ е юхăмĕ теççĕ. Тĕслĕхрен, XX ĕмĕрти «утмăлмĕшсем» (Г.Айхи, Ю.Скворцов, Г.Юмарт, В.Станьял) е каярахри «сӳрреалистсем» (Б.Чиндыков, М.Карягина, В.Степанов) ушкăнланса тухнă. Кирек хăш ĕçри пекех, поэзире те аслă ăстасемпе пĕрле çак ăру тапиинче çунат сарса ĕлкĕреймен нумай-нумай ытти ĕçченсем пулаççĕ. Литература ăрăвĕ те

аслисемпе вёсен çумӗнчисемсӗр пулмасть, анчах сӑмахлӑх ӳсӗмне талантлисен хайлавӗсемпе хакласçӗ. Аслӑ литература умӗнче ăшши-ватти çук. Талант пур. Чалтан вăрçи пиçӗхтернӗ çыравçӑсене пӗр-пӗринчен татса уйӑрни килӗшӳллӗ пулмӗ. Вӗсем пурте танах «вилӗмрен тăватӑ утӑмра тӑнӑ». Вӗсем пурте пӗрле кӑна вăрçӑ саманин сӑнне палӑртса тӑраççӗ.

Тăнăç вăхăтра литература ӑрăвне йӗркеленсе çитме вуншар çулсем кирлӗ. Ваттисем вырӑнне яшшисем çитӗнсен те çӗнӗ ӑру пулаймасса пултарать. Çӗнӗлле пулӑмсем, ӗççем, шухӑшсем, сӑнарсем тупӑнмасан çӗнӗ ӑру çинчен калама çук. Вăрçӑ поэзийӗн вăхăчӗ – кунпа те сехетпе çуралнӑ пулӑм. Вӑл – уйрӑм вăхăт, уйрӑм тапхăр, уйрӑм пулӑм. Вăрăма тӑсӑлакан йӗр хӑварнӑ тăватӑ çул.

Анăç Европăра вăл маларах пуçлансан та, СССРта çӗнӗ поэзи календарь кунӗпех çуралнӑ. Вӑл - 1941 çулхи июнӗн 22-мӗшӗ. Июнӗн 23-мӗшӗнче «Правда», «Известия», «Красная звезда» тата ытти мӗнпур хаçатсенче вăрçӑ сӑввисемпе хӑтавӗсем пичетленнӗ. Илле Эренбург вăрçӑ пуçланнӑ кун 5 хăтав çырса хаçатсене яне. Илле Тукташ – 2 сӑвӑ.

Вăрçӑ поэзийӗ 1418 куна, вăрçӑ ӑрӑвӗ ХХ ӗмӗр тӑршшӗпех тӑсӑлнӑ.

Аслӑ Чалтан вăрçинче халӑхпа пӗрле чăваш поэзийӗ чӑнласах паттӑр кӗрешнӗ. Фронтра та, тылра та. Чăваш публицистикипе поэзийӗ чăннипех вичкӗнлӗх кӑтартнӑ. Хуласене «герой-хула» ятне панӑ пекех, чăваш поэзине паттӑрлӑх медальне ним иккӗленмесӗрех пама юрать. Ку вăл хăйне пӗр тапхăр, хăйне расна пӗр шухӑшлӑ литературăн паттӑрлӑх тапри. Вӑл хаярланакан, хӳхлекен халӑх чунне чӑтӑмлӑхпа шанчӑк, ӗненӳпе ӗмӗт парса тӑма пултарнӑ. Харӑссӑн пӗр тӗллевпе, пӗр хавхаланупа çӗкленнӗ, алла пăшал тытнӑ поэзие нимле урӑх юхӑма та, нимле шкула та, нимле ушкӑна та кӗртме май килмест – ку вăл ***çар паттăрлăхӗн поэзийӗ***. Фронтри чăвашсен ӑна вырӑсла сӑмахпа аталантарма та тивнӗ. Чăваш литературине чунтан юратакан яшсем – Борис Шашков, Николай Базановпа Николай Бусыгин,

Владимир Алатырцев, Владимир Грибанов выраспа Иван Пиняев ирçе чăваш сăввисене çар хаçачĕсемпе листовкисем валли куçарнă.

Тăван Çĕршыв аслă вăрçи вăхăтĕнчи поэзире урăхла эстетика е меслет ушкăнĕ çук. Вăрçă вăхăтĕнчи чăваш поэзийĕ – нумай жанрлă, нумай илемлĕх мелĕсемлĕ, анчах пĕр ĕмĕт-шухăшпа, пĕр хавхапа тĕвĕлесе çыхнă поэзи.

## 4.1. 1941-1945 çулсенчи лирикăн тĕп жанрĕсем, туртăмĕ-кĕвви, шухăшпа илемлĕх пахалăхĕсем.

Вăрçă пуçланиччченех совет поэзине романтикăлла паттăрлăх витĕмĕ çирĕп ярса илнĕ. Çак кĕвĕ вăрçă тапранса кайсан татах вăйланнă, вара питĕ хăвăрт ылханпа, тарăхупа, курайманлăхпа вĕресе кайнă. «Вставай, страна огромная, вставай на смертный бой!» - пĕтĕм çĕршыв тăрăх В. Лебедев-Кумачăн чĕнĕвĕ вăрçă пуçлансан тепĕр кунах тĕнче тăрăх янăраса вĕçнĕ. Питĕ тĕл, тĕрĕс тивнĕ çак сăмахсем этем чунне. Ку вăл халăх хăйне хăй панă приказ. 1941 çулта совет поэчĕсемшĕн çăлтăр çути вырăнне, камертон вырăнне пулнă çак юрă. «Тăшман тăсрĕ кунта юнлă алă, Юн ĕçме шуса тухрĕ çĕлен. Пăшал тыт çапăçма, паттăр халăх, тăван çĕршĕн пĕр çын пек çĕклен!» – тенĕ çав кунсенчех Василий Васькин. Константин Симоновăн «Жди меня» тата «Убей его!», Алексей Сурковăн «Землянка», Анна Ахматован «Ветер войны», Михаил Дудинăн «Соловьи» сăввисем пичетленнĕ. Вĕсене пĕтĕм çĕршыв пĕлнĕ, илтнĕ, вуланă. Чăваш поэзийĕ çав шайпа рет тытма тăрăшнă.

Вăрçă пуçламăшĕнчи поэзи – чĕнӳ, йыхрав, хушу поэзийĕ. Чăваш поэзийĕ те çав кĕвĕпех кĕрленĕ. «Чĕнетĕп!», «Ан ман!», «Ан чак!», «Тавăрар тăшмана!», «Тĕп пултăр фашист!», «Хăюллăн малалла!», «Памастпăр ирĕк хулана!»... Аслă çар пуçĕн хушăвĕсем пек илтĕнеççĕ сăвă ячĕсем. «Юншăн – юн! Ирсĕр вилĕмшĕн – вилĕм! Вăй-хăват тупĕ хурçă-тĕрек. Асра пирĕн çĕршывăмăр пилĕ: Малалла, тăшмана çĕмĕрме!» *(Кĕçтук Кольцов. Фронтра. 1941).*

Лайăх-и çак сăвăсем, япăх-и? Мĕншĕн вĕсене яланах аса илетпĕр? Тăн-пуç пăлхавлăн, уçăмсăррăн пăтранса кайнă кунсенче çуралнă хайлавсемшĕн «лайăх-япăх» виçе каймасть. Ку сăвăсем – строя тăратнă салтаксем. Вĕсем пичетленнĕ, вĕсем кам патне те пулин çитнĕ, кăмăла вăркатнă, шухăша вăртанă, сĕнӳ выраннe пулнă. Пĕрисем часах манăçнă, теприсем паян та пурăнаççĕ. «Умри мой стих, умри как рядовой...» *(В.Маяковский сăмахĕсем).* Антив, чылай сăвă вăрçăн малтанхи кунĕсенчех вилнĕ Пултăр. Анчах вĕсем – историн чи паллă самантĕнчи палăксем, паттăрлăх паллисем. Çавăншăн кăна та хисепе тивĕç. «Мы, писатели, в 1941-1942 годах дали народу чудовищный заряд ненависти к врагу, – тенĕ Всеволод Вишневский. – И конец войны, мир будет ознаменован не истреблением, не призывом «Убей его», а мудрым практицизмом и гуманностью». Чиксĕр хаярлăх пысăк юратăвăн тепĕр вĕçĕ пулса тăнă.

Тĕнче кĕрленĕ чухне ***çул сăмахĕ, пил сăмахĕ,*** ашшĕ-амăшĕн ***хушу сăмахĕ,*** яш-кĕрĕм ***тупа туни*** тата халăх сăмахлăхĕн авалхи ытти жанрĕсем çĕнĕрен чĕрĕлсе тăнă, поэзи шайне хăпарнă. Çирĕпленнĕ пуплев çаврисем, авалхилле шухăшлавпа сăнар, халăхри символсем (улăп паттăрсем, урхамах, ăмăрткайăк, кăвакарчăн, çăхан, çĕлен-калта, кашкăр тата ытти те) сасартăках чи витĕмлĕ те кирлĕ танлаштарусем пулса тăраççĕ. Вĕсем Николай Шелепи, Кашкăр Микули пек ватă сăвăçсен сăввисене те, Николай Пиктемир, Иван Ивник, Иван Малкай, Илле Тукташ пек çамрăксен пултарулăхне те харăссăн кĕреççĕ.

***Такмак*** вăрçă пуçлансанах хурапа шурă, ырăпа усал тĕссене мала кăларать. Такмак паттăрланать. Фронтри, ĕçри хăюллă çынсене мухтать. Такмак хаярланать. Нимĕç хурахĕсене, Гитлера питлекен такмаксем плакат пек курăмлă пулса тăраççĕ.

Сĕмсĕр вăрă пăсара
Вăрламасан мĕн çитĕр!
Çап фашиста сăмсаран –
Ют картана ан кĕтĕр! –

тесе, сёмсĕр сыснапа, пăсарапа, çĕленпе, кашкăрпа танлаштарса питленĕ тăшмана халăх такмакĕ.

Шăршлă шурлăх варринче
Хура çĕлен йăви пур.
Тискер тăшман çĕрĕнче
Çынна çиен Гитлер пур.

Ватă сурăх макăрать
Пуçĕ мăкла пулнăран.
Гитлер пуçĕ анăрать
Ăсĕ кĕске пулнăран.

Çĕнтерÿ утăмĕсем нумайланса пынăçемĕн питлев такмакĕсем çумне мухтав сăввисем хушăнса пыраççĕ.

Çÿл ту çинче çичĕ юман,
Çиччĕшĕ те пĕрешкел.
Манăн аттен çичĕ тăван,
Çиччĕшĕ те кĕреш пек.

Хăйне майлă уйрăмлăх пур чăваш халăх сăмахлăхĕн – хуçăлман шанчăк. Вăл калле-малле вылямасть. Чи йывăр, шикленмелле уйăхсенче те правур такмакпа юрă хайлать. Кăна çÿлтен хушнипе тума çук. Хушнипе çырнисен чунĕсем, витĕмĕ курăнмасть, юри туни тÿрех палăрать. Колхоза е Сталина мухтаса юри çырнă хайлавсем вăрçăчченех пичетленнĕ, анчах вĕсене сцена çинче кăна юрланă.

«Ан вĕр, йытă, нимĕç-йытă, Çырттарас çук эп сана. Ан йĕр шăлна, фашист-йытă, Парăнас çук эп сана!» Çак такмакăн темиçе тĕслĕхне тĕрлĕ çĕрте çырса илнĕ-вĕсем пĕри тепринчен вичкĕнрех. «Автан сиксе авăтать Тул çутăлса килнипе. Манăн чунăм савăнать Нимĕç чакса пынипе!»

Нумай поэт питлев такмакĕпе кăна çырлахман. Вăрçă сăвăллă публицистикăна вăйлатма хистесех тăнă. Сăвăлла фельетонсем, памфлетсем, эпиграммăсем, кулăшсем пичетленсех пынă. Ятарласа кулăшпа питлев кĕнекисем кăларнă.

Вăрçă çулĕсенче такмакпа пĕрлех ***халăх юрри*** чăнласах пĕтĕм çĕршыв сассине çавраннă. Чĕнÿпе хушу хушшинче лирикăлла юрăсем çĕнĕлле янăраса кайнă. «Çĕнĕ çĕре каякансен юрри» ку хутĕнче пачах тепĕр йышши шухăшпа тулать:

«Анне, ма пăхатăн арча çине
Хĕрӳ арча ыйтать теетним.
Кирлĕ мар, кирлĕ мар мана арча–
Ман хамăнах арча – кутамкка...

«Хветĕр мучисен Верккин юрри» тесе юрлаççĕ çак юрра Етĕрне районĕнчи Мăн Пакăш ялĕнче, ăна вăл вăрçа тухса кайнă чухне юрласа хăварнă. Çавнах Йӳçпансем те юрлаççĕ. Тăван яла, çĕре-шыва, кил-йыша, тăвансене, ял-йыша пуç таять вилĕме хирĕç каякан хĕр. Çĕнĕ çĕре каякансен сăмахĕсем пур сăвăра, унтах хĕрĕн туйри хӳхлевĕ те уççăнах сисĕнет. Çакă юрă витĕмлĕхне тата хытăрах ӳстерет. Çавăнпа вăл таврари халăх асне кĕрсе юлнă.

«Леш айккинче, сăрт айĕнче аманнă салтак выртать...» юрă, тĕслĕхрен, ача-пăчапа хĕрупраçăн юратнă юррине тухать. «Шурă кăвакарчăн», «Шур перчетке», «Асилетни, тăван, асилместни» тата ытти юрăсем анлă сарăлнă. Вĕсем – таса лирикăн кивелми тĕслĕхĕсем.

Халăх сăмахлахĕ – чи вăйлă агитатор, чи шанчăклă пропагандист. ***Ваттисен каларăшĕ*** кĕттерсе тăман: «Кашкăр сурăх пăвать, Гитлер çынна пăвать», «Фашист паян ура çинче, ыран – çăва çинче», «Юнпа килнĕ – юнпа пĕтет», «Пирĕн йывăр ĕç – тăшман пуçне хĕç!». Вăрçă пуçланнă çулах халăх сăмахлăхне пухса (истори халапĕсем, паттăрлăх юмахĕсем, легендăсем, сăвă-юрă, ваттисен сăмахĕсем, каларăшсем пухса) Г.Краснов-Кĕçĕнни «Фашизма хирĕç фольклор» ятпа ятарлă пухчă кăларать. Вăл йывăр хуйхăпа касăлнă халăх чунĕ çине сиплĕ эмел тумламĕ пек лекнĕ. Сăмах йывăр шухăша, тухтăр юнлă сурана сиплесе ярать!

Халăх сăмахлăхне юратакан сăвăçсем Илле Тукташ, Иван Ивник, Максим Ястран, Александр Кăлкан пухма пулăшнă çак кĕнекене. Иван Мучипе Иван Патмар хастар пулнă. Вĕсен пултарулăхне ку вăхăтра халăх сăмахлăхĕн витĕмĕ витĕр тивнĕ. Вĕсен хайлавĕсем халăхăнни пек пулса пынă. Г.Краснов–Кĕçĕннин «Пĕртăвансем» сăвви, тĕслĕхрен, халăх юрри пекех: «Шурă акăш çийĕнче Хура çăхан явăнать. Хура çăхан

явăнать – Шăллăм ухă авăрлать. Шăллăм уххи вут тăкать, Сăхă çăхан çук пулать. Шăллăм шăнкăрч, чĕри кăвар – Мĕншĕн шăллăм, ай, теес мар!» Унтан анлă мăшăрлăх мелĕпе тепĕр çаврăм майлашăнать. Тăшман самолетне тупăран персе ÿкерекен пиччĕшне сăвăç «Пиччем мерчен, чĕри кăвар – Мĕншĕн пиччем, ай, теес мар!» тесе вĕçлет.

Халăх сăмахлăхĕн пуянлăхĕ вăрçăн малтанхи уйăхĕсенче çыравçăсемшĕн питех те пĕлтерĕшлĕ пулса тăнă. Ĕмĕрсенче упраннă хайлавсенче вилмен, кивелмен шухăшсем упраннă. Вĕсем – пурнăç тума, Çĕршыва упрама чĕннипе, халăхшăн пуçа хуни те сăвапла иккенне ăнлантаракан тĕслĕхсемпе чуна çирĕплетнĕ. Çакăн пек паттăр поэзи кашни халăхăнах (тăшмана паранна çĕршывсенче уйрăммăнах) пулман. Пирĕн çар поэзийĕ Болгари, Серби, Венгри поэзийĕпе пĕр евĕрлĕ.

Ӳнерсен аталанăвĕнчи тĕпрен çĕнĕ тапхăрсем пуçланнă чухне (çырулăх пуçламăшне, пăлхавăрсен вăхăчĕсене аса илĕр) литература пăрăнми икĕ курăмлă йĕрпе каять: пĕри – халăх сăмахлăхĕпе, тепри – вăйлăрах тапса тăракан литературăсен витĕмĕпе пыракан çулсем. Чалтан вăрçи вăхăтĕнче те çаплах пулса иртнĕ.

Халăх сăмахлăхĕн авалхи жанрĕсем – пачах кĕтмен, унччен тĕппи тăпăлтарнă жанрсем – вăйлăн тапранаççĕ. ***Ылханпа ухăт, тархаслупа тупа, пуçтайпа халал*** халăх чĕринчен никам хистемесĕрех хашлатса тухаççĕ. ***Вĕрÿ-суру чĕлхисем*** çĕнĕ сăмахсемпе, çĕнĕ ĕненÿпе чĕрĕлеççĕ. Вĕсенче суккăр тĕшмĕш мар, тарăху, талпăну, вĕри туйăм тапса тăрать.

Ку поэзие, паллах, пухса илме шикленнĕ. Анчах вăл вилĕмсĕр. Йывăр вăхăтсем килсе çитсен вăл каллех чĕрĕлсе тăма пултарать.

Авалхи сăмахлăхăн хитре çаврисем, сăнарĕсемпе сăнлăхĕсем, паттăрлăхпа хурлану кĕввисем, шухăшпа туйăм ытарлăхĕ, тем тĕрлĕ танлаштарăвĕсем, юратупа курайманлăх сăмахĕсем сăвăçсен шухăшлавне кĕрсе хайлавĕсене халăха çывăх та юрăхлă тума пулăшаççĕ. Тĕслĕхĕсене аякра шырама кирлĕ мар. Иван Ивник

юррисемпе сăввисемех çавăн пек. «Ылхан» сăвви – халăх сăмахлăхĕнчи пысăклату мелĕн паха тĕслĕхĕ.

Ылхан сана, хура ылхан, Тилĕпеле сысна йăхне. Ылхан сана, виç хут ылхан, Çĕлен-калта йăхне-тĕпне... Çĕр хут ылхан... Пин хут ылхан!

Пурнăçа аркатакан вăрă-хурах фашизма чун-чĕререн тарăхса ылханать çамрăк сăвăç. Халăх сăмахлăхне тĕпчев институтĕнче ĕçленĕ чухне лайăх ăнкарса илнĕ Иван Ивник капланса килнĕ тарăхăвне ыттисенчен чылай вирлĕреххĕн уçса панă:

Çĕр çĕклейми ылхан сана
Пур ĕмĕр-ĕмĕр тăршшипе!
Аça кикен те тăпруна
Шăтса ан палăрттăр санне!

Вăрçă пуçланнă чухне поэт вырăнпах выртнă. Алла пăшал тытма пултарайманшăн хытă пăшăрханнă. Кăмăлĕпе хытă пăшăрханнăран ылтăн сентре çине лартмалли сăвăсем çырса хăварнă. Чăнахах та чун витĕр кăна тухайрать çирĕп шанчăкпа таса поэзи! «Шăммисем çеç выртса юлĕç урнă йытă фашистран» тенĕ вăл «Халь те, малашне те» (1941) сăввинче. 28-ти каччă 1942 çулта Шупашкарта куçĕсене хупнă.

Çын пурнăçĕ çак çĕр çинче йăпăртлăх кăна. Пĕчĕк е пысăкрах йĕр хăвармалăх. Истори çеç пĕр вĕçĕмсĕр тăсăлнă, малалла та тăсăлĕ. Вăл савăнăç та парĕ этемлĕхе, хурлăхпа асап та пайтах кăтартĕ.

Çапах та, хаярлăхпа кăна пурăнмасть этем. Сивве хирĕç ăшă пур. Тĕттĕме хирĕç çутă пур. Поэзире те çавах. 1941-1942 çулсенчи плакатла ***одăсем*** хыççăн кĕçех ***уйланăшсемпе*** (балладăсемпе) ***лирикăллă юрă*** жанрĕсем вăйланса кайнă. Тарăхупа хаярлăха пусарма этеме чун-кăмăл туйăмне çемçетекен юрă нимрен те меллĕрех иккенĕ ĕмĕртенех паллă. Çакна ӳпке чирĕпе аптракан Илле Тукташ лайăх пĕлнĕ. Унăн пултарулăхĕ мĕскĕнлĕхпе найкăшу патне мар, çĕкленӳллĕ хаваслăх еннелле туртса тăнă. Илле Тукташăн халĕ те асрах упранакан юрă сăмахĕсене асăрхăр: шурă кăвакарчăнĕ, паттăр ăмăрткайăкĕ, пахчари таса чечекĕ – йăлтах чĕрĕ («Ăмăрткайăк», «Пурнăçпа юрату», «Шурă кăвакарчăн»,

«Ăсату» тата ытти теçетке юрă). Тăван çĕр сăнĕ, таса асилӳсем, чунра упранакан сăнарсем… Вĕсем куçран пăхаççĕ, çĕнтерме чĕнеççĕ, таврăнасса кĕтеççĕ. Пурнăçа, юратăва, çынсене шанни, ĕненни, лайăххине ĕмĕтленни хура кунсен тискерлĕхне вăхăтлăха та пулин аяккалла сирсе тĕнче анлăшне курма хистет. Тата мĕн кирлĕ çав вăхăт поэзийĕшĕн?

Чăваш юрă лирикин шедеврĕсем – «Лантăш» (1942), «Шурă кăвакарчăн» (1943), «Пурнăçпа юрату», «Сывлăм» (1944), «Хĕç» (1945). Ансат вĕсем. Халăх хавалĕпе, нумай-нумай çынсен кăмăлне пĕрлештерме, чунĕсене йăпатма пултарнипе, туспа тус, савнипе савни, арăмĕпе упăшки калаçнă пек тухакан ăшпиллĕхĕпе хăватлă.

*Ыйтăвĕ:* «Шурă-шурă кăвакарчăн Ма вĕçетĕн пĕр-пĕччен? *Хуравĕ:* «Хурчăка тытса аркатрĕ Манăн савнă мăшăра». Сĕнӳ: Çук, ан йĕр-ха, шур аппаçăм, Ан юхтар тек куççульне. Çилçунат ут йĕнерле те Тухса вĕç тăшман çине. Нимĕн шиксĕр, çĕкленӳллĕн Çапăç эсĕ тăшманпа. Пуçне хунă мăшăрушăн Çакă пулĕ ыр парне». Пĕр шутласан, пурнăçа хирĕçле ĕç хушать юрă: хĕрарăмăн кил-йышпа, ватти-вĕттине пăрахса çапăçу хирне каймалла! Жанна д. Арклă, Бастилие илнĕ Франци е Мария Мнишеклă Польша хĕрарăмĕсем каппа сĕннине йышăнас çук. Унта урăх менталитет. Пирĕн çĕршыв халăхĕ çапла хушнине хапăлласа кĕтсе илнĕ. Юрра юратаççĕ. Ку чăваш несĕлĕсен авалхи вĕрентĕвĕпе тӳрĕ килет – Тăван çĕршыв, тăван ял-йыш хăрушлăхра чухне кашнин юлашки юн тумламĕ Çĕнтерӳ алтăрĕ çине тумламалла! Çапла пулнă Ахратпа Тĕкĕр шывĕсем çинче, çапла пулнă Пăлхаш кӳлли хĕрринче, Тянь-Шаньпе Тибет тăвĕсем патĕнче, çапла çапăçнă Пăлхар, Сăварпа Пӳлер хӳмисем çинче.

Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамблĕ 1943 çулта виçĕ уйăх фронтсем тăрăх концертпа çӳренĕ. Репертуарта тĕрлĕ халăх юррисем пулнă. Паллах – чăваш юррисем те. «Белая голубка» юрра («Шурă кăвакарчăн» юрра В. Воробьев кĕвĕленĕ, ăна вырăсла юрланă) салтаксем темиçе хутчен юрласа пама ыйтнă *(Кесарий Михайлов учитель-фронтовик. Вăрçă çулĕсенчи юрăсем. – Кӳкеç райхаçачĕ. «Ленинец», 1975, апрель, 10).* Салтаксене

мĕншĕн килĕшнĕ-ши юрă? Шанчăк, мăнаçлăх панипе. Мăшăрĕсем вĕсен паттăрлăхне вут-тăвăллăн малалла тăсма хатĕр чухне боец мĕскĕн пулма пултараймасть! Çакна окопри салтака ăнланмалла ытарлă та сăнарлă çавăрса калама пĕлнĕ талантлă Илле Тукташ!

Тăван Çĕршывăн никама пăхăнманлăхĕшĕн, ирĕкĕшĕн, танлăхĕшĕн çичĕ ют тăшманпа ним турткаланмасăр хаяррăн çапăçмаллине, аçа-çиçĕм, вутлă тăвăл пулма тивĕçлине И.С.Тукташ сăвăсен «Иçĕм çырли пахчи» ярăмĕнче каллех халăх сăмахлăхĕн мелĕсемпе, çыруллă поэзин ытарлăхĕпе çыхăнтарса пыма майсем тупса çитернĕ. Ярăмри сăвăсем кашни уйрăм виçеллĕ, уйрăм сунăмлă. Эпитетсем, метонимисем, синекдохăсем, сăпатлантарусем, танлаштарусем кунта халăх сăмахлăхĕнчи пекех йышлă.

Лирикăлла романтика çĕкленӳлĕхĕ Илле Тукташăн ***прозăлла сăввисен*** ярăмĕнче лайăх палăрать. «Шăпчăк», «Савăнăç хĕвелĕ», «Салтак амăшĕ», «Аманнă салтак» ***верлибрсенче*** (прозăлла сăвăсенче) лирикăлла герой хăй те çирĕп те хастар чунлă, уçă кăмăллă, таса ĕмĕт-шухăшлă салтак сăнарĕпе тухса тăрать. Тĕпчевçĕсем «Шăпчăк» прозăлла сăвва тĕслĕхе илме килĕштереççĕ: «Ку вырăнта чечекленсе чие пахчи ӳсетчĕ, чие пахчинче кашни каç, кашни ир шăпчăк юрă шăрататчĕ... Анчах хура инкек килсе çапăнчĕ кĕтмен самантран. Хаяр аслати кĕрлерĕ те çурăлса вут тухрĕ. Тĕнче тӳпинчен çĕр çине вутлă сăнăсем çума пуçларĕçĕ» Çак пĕчĕк ӳкерчĕкре – халăх эпосĕсен, дастансен, олонхон, былинăсен сулмакĕпе пĕтĕмлетĕвĕ. Ку вăл мифла ӳкерчĕкĕн паянхи кун çине таянтарнă сăнĕ.

Прозăлла сăввăн тепĕр тĕслĕхĕ – Василий Долговăн «Тăван çĕршыв» монологĕ. «Хĕрелсе, шуралса çутă ир килет-и, колхоз каччи-хĕрĕсем çĕнĕ юрă юрласа чечек çырне утаççĕ-и, сарă ыраш хушшинче кĕлте çыхаççĕ-и, çурласене çĕклесе яла таврăнаççĕ-и... Тăван çĕршыв, сана аса илетĕп, сана асра тытатăп!» Салтак çырăвĕсенче куллен тĕл пулакан тунсăх. Анчах сăмахăн хăвачĕ тĕрлĕрен çаврăнса тухать. Кунта – çепĕçлĕхпе çирĕплĕх,

юрату кĕввипе тупа таппи. Асра юлать сăвă, ун çумне хăвăн ӳкерчĕкӳсене тăсса кайма çăмăл.

Чăваш поэзийĕн вăрçă пуçламăшĕнчи тепĕр çунатне вырăс поэзийĕ тĕслĕх парса тăнă. Ку витĕм – пĕтĕм Совет Союзĕшĕн пĕр пекех пăрăнми пулăм. Ăна тиркесе сивлени тĕрĕс мар. Унпа мухтанмалла кăна: пĕр пек нуша халăхсене пĕрлештерет, алла-аллăн тыттарать, пĕрле ташлаттарать!

Кĕнекеллипле поэзире малтанхи тапхăрта пĕчĕк жанрсем (маршпа поход юррисем, сăвăллă репортаж, сăвăллă плакат, питлев юмахĕ-халапĕ, вичкĕн юптару, вирлĕлетнĕ каларăшсемпе çунатлă сăмахсем) хăвăртрах пичетленеççĕ. Малти вырăна агитаци йышăнать: йыхрав, чĕнӳ, хушу, халал, тупа, çирĕплетӳ сăввисем тухаççĕ. Икĕ туртăм вĕсенче – тăшмана курайманни, Тăван Çĕршыва хӳтĕлеме чĕнни. Ку – самана приказĕ. Талантлисем ку приказа та паянчченех чуна витермелле пурнăçлама пултарнă.

«Я, убивший тебя под Моздоком, Так мечтал о вулкане далеком. Но ведь я не пришел с пистолетом отнимать итальянское небо», – тенĕ Михаил Светлов *(«Итальянец»)*. Чăваш сăвăçи Николай Пиктемир та çав шухăшах калать: «Кам хушнă сана пăшалпа килме. Тавăру пулатех! Эс тивĕç вилме!» *(«Тавăру»)*. Сăвăсем оратор сăмахĕ пек тӳрĕ те вичкĕн, приказ пек хаяр: «Пăшал тыт, юлташăм, Пĕр утăм та ан чак!» Е тата: «Фронта мĕн патăн эс, Мĕн турăн, Мĕн ĕçлерĕн. Кунта тăшман килсен мĕнпе çĕнтерĕнĕ».

Фронтпа тыл хушшинче ***сăвăллă çыру*** нумайланать. Вĕсем вырăссен «Жди меня» (К.Симонов), «Бьется в тесной печурке огонь» (А.Сурков) тата ытти паллă сăвă-юрăсен кĕввипе пĕр пекех сĕмпе харкамланса, халăх сăмахлăхĕн çаврисемпе илемленсе пынă.

Кама асра тытнă окопри салтак? Аппĕ-амăшне, килпе ял йышне, мăшăрĕсене, ачи-пăчине, савнисене... «Лев-Арăсланăма, ывăлăма» сăвăллă çырура Владимир Бараев хăй çапăçура мĕншĕн вилнине ывăлне ăнлантарса хăварать: «Вăл вĕри чунпа юратнă, чунăмçăм, сана, Çавăнпа та вăрçа тухнă паттăр çапăçма, Телейӳшĕн, çĕршывушăн хăй пуçне хума». Киле ачи патне янă çыру

кăна.. Çав вăхăтрах – самана сасси, пин-пин салтак шухăшланă сăмах.

Сталинград фронтĕнченех, чи хура кунсенче Петĕр Хусанкай амăшĕ патне çыру ярать. «Сан таса сĕтне эп манмăп нихăçан, анне. Мĕнпĕн йăпшăнмăттăм мамăк çунату айне» *(«Аннене» сăвă,* 1942) Çук, йăпшăнма май çук. Тăван Çĕршыв вута сикме хушать!

Тепĕр çултанах салтак лирики улшăнать. Унта ăшă туйăм, шӳт, танлă лăпкăлăх вăй илет. «Хурăнлăхра мунча шăрши кĕрет, чăваш мунчи шăрши. Ай-хайччĕ, çапăнасчĕ те – хăçан кĕрĕпĕр-ши? ... Каçкӳлĕм тупă ахăрчĕ тепре. Пăшал тĕрĕслесе чăваш каларĕ: «Пар ăшшине шепрех! Тĕп пулччăр эсрелсем!» *(Мунча шăрши, 1943, Брянск вăрманĕсем)*

«Аса илсе, савниçĕм, куçна хуп эс,
Курсам-илтсем мана çак сехетре:
Сан тунсăхна ĕненнĕ сĕрме купăс
Йĕрсе юрлать фронтри сив çĕрпӳртре.

Купăс юрлать йыхравлăн та пăлхавлăн:
Ăçтан пĕлес, тем пулĕ-ха ыран...
Кашнин чĕри сикет-çке хал-хаваллăн,
Кашнин – тулли хаярлăх та ылхан.

Аса илсе, савниçĕм, куçна хуп эс:
Тĕлĕкӳнте пулин сана курнас килет.
Сан тунсăхна ĕненнĕ сĕрме купăс
Çĕнтерӳпе сунать çитме киле»

*(Александр Артемьев. Сĕрме купăс: сăваллă çыру, 1943, июль, Курск пĕкки).*

Александр Артемьев 1945 çулхи ака уйăхĕнче Германирен янă «Салтак амăшĕ» çырăвне ятарласа çăмăл виçепе çырнă. Анчах унти ырату темрен те йывăр. Халĕ те йывăр. «Эй, мăнтарăн, ан кĕтсем, Ан çунсамччĕ ун пекех. Пĕр пуç хунă йĕкĕтсем Таврăнмĕç киле текех... Сарă хĕр те савнине Манĕ-ха урăхпалан... Анчах амăш ывăлне Кĕтсе пурăнĕ ялан».

Тӳрех курӑнать: фронта каярах килнӗ йӗкӗтсен сӑввисем урӑхла. Текех аслисен пек чӗнӳ-йыхрав хайлама кирлӗ мар. Тӗллев тахҫанах уҫӑмланнӑ, халӑх хумӗ тахҫанах тӑшман ҫине сулӑннӑ. Хӗври ӑшӑ туйӑмсем, асилӳсем, ӗмӗтсем ҫыру пулса хут ҫине ӳкеҫҫӗ. Вӗсенче философиллӗ ӑнкарту та тарӑнланать, шахвӑртуллӑ систерӳ те сисӗнет. «Ҫурхи вӑхӑт. Ҫилӗ ӑшӑ – пирӗн ҫийӗн вӑшӑн-вӑшӑн... Нимӗҫ пуля сапалать... Мана тусӑмҫӑм калать: – Кур-ха, тусӑм, епле чаплӑ, Украина тараватлӑ, пирӗн Атӑл енӗ пек, епле уҫӑ та тӳлек. Украина пикисем те пирӗн Нурӑс хӗрӗсем пек. Кунти капӑр Ганнӑсем чисти пирӗн Аннӑсем... Эп каларӑм: – Тӗрӗс, тусӑм. Сӑмахна ӑнланчӗ пуҫӑм. Украина пит аван, Саншӑн-маншӑн та тӑван. Сан аҫу та кунта пӗтнӗ, ман атте те кунта ҫӗтнӗ. Юн тӑкатпӑр эпӗр те ирӗкшӗн ҫак уй-хирте» *(В. Ахтубай, «Украина» сӑвӑ, Ҫапӑҫури ҫар, 1944).* Ку сӑвва пуҫкасан Бендерӑна наци геройӗн ятне панӑ вӑхӑтра Эзоп чӗлхинчен куҫарса вуласан унӑн пӗлтерӗшӗ тата тарӑнрах пулса каять.

1944 ҫулта Карпат тӑвӗсем ҫинчи тӗтресене тиркесе («тӗтрене хитрелӗх теме ҫук»), талантлӑ сӑвӑҫ Валентин Ахтубай тӑван ялне «Инҫетре пулсассӑн та - чӗреҫӗм саншӑн ҫеҫ ҫӗр хӗлӗхпе чӗтрет» тесе ҫырать.

«Тӗнчене ҫил пек касса ҫӳрерӗм,
Ыр кӗтес шырарӑм ют ҫӗрте.
Уйсенче ӳсет пиҫен те эрӗм,
Садсенче ҫӗлен-калта ӗрчет...

Европа анисем ҫинче эрӗм чашкӑрса ларманни, пахчисенче ҫӗленсем шӑхӑрса ӗрчеменни хутла пӗлекен кашни ҫыннах паллӑ. Анчах Ахтупай сӑввинче ҫак танлаштарусем тӗп-тӗл выранлӑ, ытарлӑ та сӑнарлӑ. Икураллӑ ҫӗлен-калтасен ют ҫӗрӗнче ирӗксӗртен «тӗнче касса ҫӳрекен чӗкеҫшӗн» ырӑ ӳкерчӗк курӑнас ҫук, виличчен унӑн тӑван Атӑла курас килет.

Эс кӑна чипер, тӑван кӗтесӗм –
Шупашкар та шурӑ пӑрахут.
Ют ҫӗрте вӗҫсе ҫӳрен чӗкеҫӗн
Сире ҫеҫ курасчӗ пӗрре хут.

Салтак çырăвĕсем нумайăшĕ пĕр евĕрлĕ, мĕншĕн тесен шăпа пĕр пек, шухăшсем пĕр пек, лару-тăру пĕрех. Валентин Ахтупайăнни пекех Ехрим Иванĕн Украинăри Жолнев хулинчен 1944 çулхи августăн 19-мĕшĕнче ывăлĕ патне янă сăвви.

Пĕр кĕвĕллĕ, çав вăхăтрах кашнин чунри ыратăвĕ раснарах. Валентин Урташ сăвви:

«Çулăмра тултартăм эп вунсаккăр,
Каччă-терĕш пултăм темелле.
Çут тĕнче каларĕ: орден çакăр,
Паттăр çыннăн орден илмелле.

Çăмăл мар салтакăн кунĕ-çулĕ,
Ман каллех вута ак кĕмелле.
Аппамсем халь каç лараççĕ пулĕ,
Авăрлаççĕ пулĕ кĕнчеле.

Савнă ялăм, савнă Тăхăр ялăм,
Чи хакли эс çакă çĕр çинче.
Саншăн пăшал тытрĕ çирĕп аллăм
Хам Тăван Çĕршывăм вăрçинче»

*(Валентин Урташ. «Чун çунать, çунать халь çĕрĕмшывăм». 1943, Брянск фрончĕ.)*

Чăваш поэзийĕн çыру жанрĕпе 1942 çулта çуратнă тепĕр шедеврĕ – Ухсай Яккăвĕн «Пĕр дивзири чăваш боецĕсемпе командирĕсем тăван халăхне янă çырăвĕ» (1969 çулта «Хурçă та çуннă чух» кĕнекере ятне улăштарса, «Чăваш дивизийĕ çинчен каласа паракан поэма: 141-мĕш дивизири боецсемпе командирсем чăваш халăхне Воронеж фронтĕнчен янă çыру» тенĕ). Асамат кĕперĕ пек нумай тĕслĕ çыру. Хаяр та вăл, çепĕç те. Салтакăн тупа сăмахĕ пек çирĕп. «Эх, тăван çĕршыв, аннемĕр, хытă шан, ĕнен пире – Пурăнма килет пĕр ĕмĕр, Вилĕм те килет пĕрре. Чĕрĕ юн тумлам-тумламăн Тăкăпăр вутра-хĕмре, Сыхлăпăр вилсен те хамăр Çĕршыва-аннемĕре. Тĕтĕм витĕр, çулăм витĕр Çитĕпĕр çитес çĕре, Пирĕн хĕç хăвачĕ витĕ, Ваклĕ ирсĕр Гитлере!» Поэмăна 1975 çулта, Воронеж атом станцийĕн Культура Керменĕнче тата Олень-Колодезь станицинче чăваш фронтовикĕсем тепĕр хут вуласа алă пусрĕç.

Валентин Ахтубайӑн, Александр Артемьевӑн, Валентин Урташӑн, Петӗр Хусанкайӑн, Александр Алган, Иван Малгайӑн, Яков Ухсайӑн чылай сӑвви – ***лирика дневникӗсем,*** вӑрҫӑ кунӗсен чун витӗр тухнӑ летопиҫӗ.

1941-1945 ҫулсенчи поэзи мӗнле шухӑш-туйӑмпа, мӗнле тӗллевсемпе утӑмласа пынине чӑваш халӑх поэчӗн Петӗр Хусанкай пултарулӑхӗ тӑрӑх уҫҫӑн курма пулать.

Петӗр Хусанкай «XX ӗмӗрӗн талантлӑ поэчӗ, паттӑр гражданинӗ, халӑхсен элчи» ятпа кӗрсе юлчӗ Ҫӗршывӑмӑр историне.

Малтанхи агитаципе ӑнлантару уйӑхӗсенче вӑл та ыттисем пекех чӗнӳпе тупа сӑввисем ҫырнӑ. «Тӑван Ҫӗршывшӑн, ирӗклӗхшӗн, чысшӑн!», «Хӑюллӑн – малалла!», «Фронтпа тыл пӗр пулсан – ҫӗнтереймӗ тӑшман!» сӑвӑ ячӗсем хаҫатсен малти енӗсенче кунсеренех пичетленсе тӑнӑ. Кӗҫех ҫапӑҫури паттӑрсене мухтама пуҫлать сӑвӑҫ. Тӗрлӗ халӑх ачисене – чӑвашӗ, вырӑсӗ, эрменӗ, грузинӗ – ятран асӑнса сӑвӑсем ҫырать вӑл. Пӗр ҫӗршывӑн пӗр шӑпаллӑ ывӑлӗсене чӑваш поэчӗ пӗр чӑмӑра, пӗр йыша пуҫтарӑнма чӗннӗ. Ку вӑл партипе патшалӑх лозунгӗ кӑна мар, ку вӑл поэтӑн ӑсӗ картнӑ, чунӗ ӗненнӗ тӗрӗслӗх. Ҫакӑ «Тупа» (1942) кӗнекинче витӗр тапса тӑрать. Ӗрет-нӗсепӗн виҫӗ енне тупаҫҫӗ кӗнекере: Ҫӗнтерӗве шанни. Арканми туслӑх. Аптраманлӑхпа паттӑрлӑх. Аманнӑ грузина Георгадзе снайпера вут айӗнчен Ильин вырӑс йӑтса тухать, чӑваш ачине Сурбанов лейтенанта карел хӗрӗ хӑтарать. .. *(«Аслӑ туслӑх» сӑвӑ).* Ыран ҫапӑҫӑва кӗрес салтаксем тӑнӑҫ пурӑннӑ чухнехи самантсене аса илсе калаҫаҫҫӗ. Вӗсен ҫав вӑхӑта – телейлӗ ӗҫ вӑхӑтне – ҫухатас килмест, ҫавӑнпа тӑван ҫӗршӗн вута кӗме хатӗрленсе тӑнӑ *(«Ҫапӑҫу умӗнхи каҫ» сӑвӑ).* Ансат. Репортажри пек. Вӑхӑт ҫавӑн пек сӑмаха кӗтнӗ.

Хаяр питлев сӑввисем – поэзи хавхин тепӗр вӗҫӗ. «Сӳтӗк Гитлер ухмаххин сӳтӗлен суя ҫӑмхи», «Геббельс е Кукша Йӑван. Вуласан пӗлен аван», «Арӑсланпа Кушак ҫури» – кусем сарказм сӑввисем. «Гитлера Наполеонпа танлаштарни – кушак ҫурине арӑсланпа танлаштарнинчен ытла мар», – тенӗ Сталин. Хусанкай

ку каларăшпа сăвăра туххăмрах питĕ вырăнлă усă курнă.

Кам мана ĕнентересшĕн
Юрă вăл тӳлек тесе!
Муза, тупă кĕрлесесĕн,
Чĕлхине çыртать тесе.

Ыран мар – халех пул хатĕр,
Туп эс кирлĕ кĕвĕсем:
Чăн сăмах тăва хускатĕ,
Пăслантарĕ тинĕсе! *(«Орден» сăвă)*

Сăмаха çапла хаклани – Петĕр Хусанкайăн çирĕп шухăшĕ. Ăна вăл малтан та, кайран та темиçе хут çирĕплетсе каланă: Сăмахпа çынна çапса ӳкерме те, ура çине тăратма та пулать!

Çухатусемпе çĕнтерӳсем фронтри çыравçăсене пин-пин тĕслĕх кăтартнă, пин-пин салтакпа тĕл пултарнă. Çар уставĕ пуриншĕн те пĕрре пулсан та – кашни салтакăн хăйĕн чунĕ, хăйĕн тĕнчи пур. Паттăрлăх та кашнин хулпуççийĕ çинче лармасть. Паттăрсен уйрăмлăхне пайтах сăнанă П.П.Хусанкай. Сăвва кĕртнĕ. «Ахмед Делиевăн маттурлăхĕ», «Салтак вилĕмĕ», «Разведчик», «Арам Петросян», «Ширшов комсомолец паттăрлăхĕ» – сăвă ячĕсем. Кĕрхи юханшыв пăртан та сивĕ. Ширшов салтак, хăй суранлă пулсан та, виçĕ хутчен шыв урлă ишсе каçать, виçĕ тусне вилĕмрен хăтарать. Çапла çуралать ***чăнлавлă*** *(документлă)* ***поэзи***. Ăна хаçатсем хапăлласа йышăнаççĕ. Фронтри П.Хусанкайăн «Виçĕ ывăл» сăвви 1942 çулхи февралĕн 23-мĕшĕнче, Совет Çарĕн кунĕнче, «Чăваш коммуни» хаçатра пичетленнĕ. Поэзи документлă сăвăсемпе çырлахса тăраймасть. Кĕçех çепĕç туйăмлă «Ытарайми сестра» тухать. Вут айĕнче салтаксемпе юнашар çӳрекен, кирек хăш самантра та пулăшу паракан шураппасене нуша чăтса курнă çыннăн ăшă сăмахпа тав тăвасах килет. Петĕр Хусанкай çав сăмаха тивĕçлипе калама ăсталăх çитернĕ.

Паянхинчен ĕмĕрлĕхе куçакан туйăмсемпе шухăшсене çавăрса илме пултарнă чăваш поэзийĕн лайăххрах сăввисем. Ахальтен В.Алатырцев, А.Алга, П.Хусанкай,

Я.Ухсай тата ытти сăвăçсен хайлавĕсене тĕнче классикин шайне лартман пулĕччĕç. Мускав 1975 çулта пичетленĕ «Великая Отечественная война: стихотворения и поэмы» икĕ кĕнекеллĕ кăларăма Вл. Алатырцевăн «Песня и черемуха», Александр Алган «Кровь» (1-мĕш том), Яков Ухсайăн «Родной язык», П.Хусанкайăн «Журавли» сăввисене кĕртнĕ. Ытти вырăсла кăларăмсенче те чăваш çар поэзийĕ самаях пур.

Салтак паттăрлăхĕ, чăтăмлăхĕ, вилĕмсĕрлĕхĕ – Александр Алга поэзийĕн теми. Вăл вăрçă пуçланиччен «Пĕр эпĕр тивĕçлĕ кирек ăçтан та Çĕнерӳпе мала тухма!» тесе тупа тума пултарнă. Ытти офицерсем «Тăшмана хăйĕн çĕрĕ çинчех çапса хуçатпăр!» тесе шуйхашнă чухне чăваш поэчĕ çапла çырма пултарни вăл вичкĕн тавракурăмлă та ăслă пулнине кăтартса тăрать. А.Е.Алга – çар командирĕ. Анчах унăн сăввисем – салтак сасси. Таса та тĕрĕс сасă, çулăмри çулсен дневникĕ, çар поэзийĕн ылтăнĕ-кĕмĕлĕ.

Çар ретне Александр Егорович 1939 çулта тăнă. Чалтан вăрçинче малтанхи кунран вĕçне çитиччен Çапăçури (Дейстующи) çарта пулнăĕ Чун витĕр кăларнă сăввисем – çав çулсен юратăвĕпе ыратăвĕ. Вĕсене окопра, командир блиндажĕнче, çапăçусем хыççăн дивизие сипленме кăларнă кунсенче тата госпитальте выртнă чухне çырнă. Вăрçă инкекĕн чи хăрушă суранĕ – пуçран аманни. Музыкант пӳрнисем татăлсан та пурнасшăн пулманни тем чухлĕ сиксе тухнă. Этемĕн пуç аркансан мĕн тумалла? Алган, çапах та телейĕ пур – вăл сăвă ăсталăхне çухатман.

А.Алган çар сăввисен дневникĕ «Июнĕн 22-мĕшĕнчен» (1941) пуçланать те «Бранденбург хапхи умĕнче» «Майăн 9-мĕшĕнче» (1945) канса илет. Татăлмасть. Ĕмĕрĕпех тăсăлать.

«Асил-ха, юлташ» сăвă «Чăваш коммуни» хаçатра 1943 çулхи февралĕн 4-мĕшĕнче пичетленнĕ.

«Çуралнă Çĕршыв çул тавра тăрса юлчĕ,
Сип-симĕс вăрман, чечекленнĕ çаран...
Кашни чĕрĕ йывăç пуç тайрĕ, ал сулчĕ,
Хаяр вăрçăран çĕнтерсе килме сунчĕ,

«Эс паттăр пул, – терĕ, – вĕлер тăшмана,
Ун юнлă алли ан варлатăр мана!»

Сăвă вырăс поэчĕн Константин Симоновăн «Ты помнишь, Алеша, дороги Смоленщины» (1941) сăввипе юнашар тăрать, пĕр кĕвĕллĕн янăрать, чуна тивет. Çакăн пек сăнарлă та шухăшлă çаврасем Александр Алган «Тăвата çулталăк» кĕнекинче – йĕркерен.

«Ула улăхра урнă тупă улать,
Уяр тӳпере çухăрать хурçă кайăк.
Эпир юратса тăнă лăпкă хула
Вутра ялкăшать-çке. Мĕнре унăн айăп?
*(«Хăрушлăхпа хаярлăх» сăвăран, 1941).*

А. Алга – калавласа пыракан лирик. «Асаплăх çеç татти-сыпписĕр Яватчĕ вăрçăллă тĕнче. Кунсем иртетчĕç кун çутисĕр Тăвăр траншея тĕпĕнче...» тесе лăпкă каланă çаврасенче этем тунсăхĕ, шухăшĕ, эрлĕкĕ юратăва кĕтсе пурăннипех, саркайăк сассине итленипех çуталса кайнине урăхла нимле калама çук сăмахсемпе систерет: «Ирпе кăвакарсассăн шуçăм, Илтсен саркайăк сассине, Кĕтетĕп эп – мана эс, тусăм, Хăçан кĕтсе илессине» *(А.Алга. Сăввăмçăм-сăввăм. 2-мĕш том. 1976, 64 ен).*

Н.С. Дедушкин тĕпчевçĕ «Чăваш халăх поэчĕ Александр Алга» кĕнекере (1973) «хăшпĕр сăввисенче час-часах тĕл пулакан танлаштарусем, эпитетсем, ăнланма е вулама йывăртарах пуплевсем çук мар» (28 ен), «пĕтĕмпех ăнăçлă пулса тухайман» (29 ен) тесе тиркет пулсан та, поэтăн хăйĕн тĕнчи, хăйне çеç тивĕçнĕ поэзийĕ пур. Вăл вутра пулман поэтсен чуххăм сăввисенчен чылай пуянтарах та пахарах. Хисеплĕ сăвăçăмăра Н.И.Шелепие «Паттăр летчик юрри» (1942) сăввишĕн Н.С.Дедушкин «Чăн-чăн поэзи!» тесе мухтанă пулсан та *(Аслă Çĕнтерӳ çулĕпе, 1985, 45 ен),* «Аслă Мускав патĕнчен сехри хăпса Гитлер тарчĕ куçне чалăртса» тени поэзирен те, Мускав патĕнчи çапăçусен чăнлăхĕнчен те аякра пулнине асăрхамах тивет. Куç умĕнчи, чун çинчи ĕççем çинчен воин-поэтсем авалхи халапсен шайĕпе каласа ларма пултарайман, калама май та пулман ăна вутри çынсен. Гитлер çарĕ Мускав патĕнчен куçне чалăртса мар, пирĕн ыран-паян ăслă

офицер пулас ылтăн пек хаклă курсантсен пуçĕсем урлă, Зоя Космодемьянская тантăшĕсен чĕрисем витĕр чакса пынă. Умри вăрçă çинчен эпосла каласси – кайранхи, XX1 ĕмĕрти, пĕтĕмлетӳллĕ вăхăтăн тивĕçĕ.

Çапла калани чăваш поэзийĕ вăрçă вăхăтĕнче анлă, эпикăлла шухăшсене сăвва кĕртме пултарайман тенине пĕлтерместĕ Александр Алга пултарулăхĕнче шăпах эпикăлла туртăм ыттисенчен ытларах палăрать.

Александр Алга – тимлĕ поэт, çирĕп салтак. Тăлăххăн ӳснĕскер, Тăван Çĕршыв уншăн мĕнле хаклине вăл ыттисенчен кая ăартса виçме пултарайманĕ Хăшпĕр чавсаллă тантăшĕсем пек тылри хӳтте е хаçат тĕременлĕхне лекме тапаçланман. Малти ретре, Çапăçури çарта çырнă «Тăвата çулталăк» кĕнекине. Унăн курăмĕ, шухăшĕ, танлаштарăвĕ – салтакла: хаяр çĕнтерӳ, юратнă пăшал, хура çулăм, шанчăклă ĕмĕт... Сăпайлăччĕ, лăпкăччĕ Александр Егорович, ватăлсан тата шухăшлăрах пулса пычĕ. Тар шăршине пĕлмен, йĕрке кĕввине ăнкарайман чавсаллисем ун урлă сиксе халăх поэчĕсен ятне илнĕ пулсан чĕри чăтаймасăр çурăлатчĕ тесех шутлатăп.

Сасартăк тревога янрарĕ ирпе.
Сасартăк пĕр харăс тăрса
Эпир вăрман витĕр, сăрт урлă, хирпе
Вĕçтертĕмĕр аслă вăрçа.
Эпир малтисемччĕ, эпир çĕкленсе
Шăтартăмăр çулăм ăшне, –
Ак çиçрĕ çанталăк, хĕрсе, чĕтренсе,
Çил шăхăрчĕ: хăшĕ – хăшне! –
Вăл ухă-снаряд-мĕн ухлатрĕ çумра,
Ялтан-мĕн сӳ килчĕ хĕрӳ...

Çакă – эпика, анчах аваллăх эпосĕ марĕ Чăн ӳкерчĕкĕ «Пăшал лăпланмасть алăра» текен, «хаяр çĕнтерӳ çӳрет пирĕнпех» тесе хавхаланакан хӳтĕлевçĕ сăмах. *(А.Алга. Шанчăклă ĕмĕт).*

Тăвата çул çар командирĕнче, çапăçури командирта çӳренĕ Александр Алга. Тăваттă аманнă. Юратман командира салтаксем вутран туртса кăлармаççĕ. Александр Егоровича пĕрре кăна мар сĕтĕрсе тухнăĕ

Поэт пулнишӗн-им? Ашшӗ выранне пулнишӗн? Çынлăхӗшӗн.

«Нумай çӗршыва çитсе куртăмăр», – тенӗ сăвăç шурлăхра выртнă чухне. Хăй ураран ӳкнӗ, анчах чыса, тивӗçе ӳкермен.

«Тăван Белоруссри те ылтăн Украйнă,
Тус-йышлă Раççей ял-хули çийӗпе,
Хир-улăхӗ урлă хура çулăм кайнă,
Çӗр çуннă вутра çӗрӗпе, кунӗпе,
Шăваранна ятсăр салтак юнӗпе.

Çӗршыв паранман. Хамăр çапнă хăюллăн
Усал вилӗме куçа куçăн тăрса.
Тустарнă тискер тăшмана шалăн-тулăн;
Çитес ăрусемшӗн те чап хăварса,
Вăя хурçăланă, туптанă ăса»
*(«Çӗнтерӳ ячӗпе» сăвăран).*

Сайра хевте вăл хура хаярлăхра чунри ачашлăха çухатманни. Окопри пурнăç, Ухсай каларăшле, çын чунӗпе шухăшне çул тусанӗн шайне антарса лапчăтать. Алган та, Ухсайăн та чунӗсем пусăрăнса сӳнмен. Алга сăввисен тӗп сăнарӗ – çапăçусен хаяр çулӗ çинчи кашни хăлаçа хӗçпе-пăшалпа уçса пыракан чыслă салтак. «Пит вăрăм çулсем пулчӗç юнлă, тар-шурлă, Çапах ӳкермерӗмӗр хамăр чыса!» – тивӗçлипе мăнаçлăн каланă поэт Берлинта, Бранденбург хапхи умӗнче. Юнлă тăвата çулталăкра чӗрӗ юлнисен шухăшӗ мала вӗçнӗ, ӗмӗчӗсем телей суннă. «Пурнăçпа ӗмӗт», «Дунай хумӗсем», «Çуралнă çӗршыва» сăвăсем – çав ӗмӗтсен хавасӗ.

Ухсай Яккăвӗ юрату сăввисем нумаях çырман. Унăн çутçанталăк, асилӳсем, çыру-хыпар сăввисем эпосла анлă шухăшлавпа, историлӗх туртăмӗпе, пӗтӗмлетӳллӗ çывăх сăнарсемпе палăрса тăраççӗ.

Шăваймӗ вăр-хурах çӗленӗн.
Саланӗç унăн шăммисем.
Тасалӗ çӗр! Пире ӗненӗр,
Янравлă саслă тăрнасем!
*(1942)*

«Пĕр утăм та тăрса юлмасăр вилĕм
Çӳрет, пăхать вăл ман çине.
Тен, килĕ вăл, вара мана хам килĕм
Кĕтсе уçаймĕ сăрлă хапхине.

*(1943)*

Хĕмлĕ-вутлă вăрçă çулĕсенче те, унччензи сĕрĕмлĕ-тĕтĕмлĕ тĕрме çулĕсенче те наци аваллăхĕн ыйтăвĕсемлĕ хайлавсем пичетленеймен. Вĕсем «виççĕсен» суд протоколĕсенче туллиех – Юманăн та, Миллин те, Краснов–Аслин те, ыттисен те! Анчах çакă çыравçăсене историлле шухăшлавран хăтарайман, тăван халăх шăпи çинчен шутлама чарайман. Поэзире çакна Хусанкай пекех тарăн та майлашуллăн Ухсай Яккăвĕ çавăрса хăварма пултарнă. Тата ăна вăл лирикăн тĕрлĕ жанрĕсемпе – сонет, октава, триолет, пентима, секстина тата ытти сăвă хаписемпе хайланă: «Асап сахал-и пирĕн çул çинче» – сонет, «Çумăр» – пентима...

Ухсай Яккăвĕ – витĕмлĕ историк, витĕмлĕ баталист-эпик, Пултарулăхĕ нумай енлĕ, нумай жанрлă. «Хурçă та çуннă чух» кĕнеки тăван çĕре сыхлакан, несĕлсен асне упракан салтака мухтать. «Гастелло капитан», «Пĕр дивизири чăваш салтакĕсемпе офицерĕсем чăваш халăхне янă çыру» тата ытти пысăк хапаллă хайлавĕсем хушшинче çухалса юлман лирика сăввисем илĕртеççĕ. Ухсай Яккăвĕн фронтри лирики – тĕнче классикин шайĕнче. Вăл Р.Гамзатовран, П. Хусанкайран *(«Кĕрхи хуракăш сассине илтетĕп...», 1944, Польша),* чылай малтан «Журавли» (Тăрнасем,1942) сăвă çырни хăйех унăн талантне кăтартать. «Хуллен-хуллен эсир иртетĕр,
Ĕшеннĕ-мĕн çунатăрсем.
Чуна татса çӳлте йĕретĕр
Эсир, мăнтарăн тăрнасем!»

Çунат сулса пире чĕнетĕр:
Мала! Мала! Мала! – тесе,
Полксем çинчен эсир иртетĕр,
Янравлă саслă тăрнасем.

Полксем, полксем, полксем шăваççĕ,
Тусан куратăр çул çинче.
Штыксем илемлĕ ялтăраççĕ
Ирхи хĕвелĕн çутинче.

«Çыру», «Çумăр», «Çырă куçăм...», «Карти-карти кикак хуркайăк» тата «Вăрçă хирĕнче» (1943) кĕнекери ытти сăвăсем – Ухсайăн ***лирикăлла монологĕсем***. Вăл вĕсене тĕрлĕ çаврасемпе, тĕрлĕ кĕвĕпе те сыпăксемпе çавăрса калать. Калать те музыка пек, ваттисен сăмахĕ пек янăракан тăвать. «Пире таптасшăн ӳхĕрчĕç куллен Танксем çĕршер-пиншер те мар-и? Анчах та пирĕн пысăк чĕререн Вăйли пĕрре те тупăнмарĕ» (1945). Çакă – чун пуянлăхĕ, ăс вичкĕнлĕхĕ, çакă – талант! Юрату лирикин йăлана кĕнĕ теми – пейзаж, савăшу, хыпар, çыру, халал тата ытти те Ухсайăн эпос анлăхĕнче, çакă унăн хăйнеевĕрлĕхĕ. Çамрăк сăвăçсем унран çак лайăх енсене илме тăрăшнă. Тĕслĕхрен, Алексей Воробьев «Кĕске çыру» сăвăра *(Чăваш коммуни, 1944, февр., 11)* пĕччен калаçу мелĕпех пысăк туйăмпа шухăша палăртма пултарнă. «Çĕршывăн пур инкекĕ-терчĕ

Капланнă пек пĕр пӳлĕме.
Кунта мăн хуйхă каснă алăк,
Туллин валеçнĕ хура-шур:
Хăрах ура, пĕр мăшăр алă
ик–виç çынна... Тата мĕн пур.
Ăнлантăм эп: пур пек хаш сывлăш
Тухас пулсан пĕр кăкăртан
Çĕр çухрăм çӳллĕш, тинĕс анлăш
Ылхан хускатĕ çил-тăманĕ
Хаяррăн явăнĕ çак тăвăл
Тăшман йăви кĕллениччен»

*(Алексей Воробьев, Салтак. 1942, Сталинград).*

Ывăлĕ Тăван Çĕршыва аса илни, тăванĕсемшĕн хурланни, пулни-иртнине чат тĕрĕссĕн сăнарлани, çывăх тăванĕсемпе юлташĕсене ятран асăнни чуна пăчăртаса илет. Уççăн палăртман ачашлăх, чăтăмлăн упранса пурăнакан юрату, этем çинчен мар, халăх сăмахлăхĕнчи пек çут çанталăкпа çут тĕнче урлă каланă сăмах чат чăваш чунне уçса тăрать.

Тăван Çĕршыв туйăмĕ Аслă вăрçă вутĕнче тата вичкĕнрех, тарăнрах палăрса пынă. Поэзи çавна ытти çынсем те сисмелле уççăн та ытарлăн калама пултарнă. Ухсай тăван çĕрсем çинчен çырнă чухнех таçти аякри вырăнсене чунпа ăнланса хĕрхенет, юрататъ. Уншăн Воронеж хули те, Дон шывĕ те, Дунай çыранĕ те тăван. Ытти чăваш поэчĕсемшĕн те тĕнче çавăн пекех аслă та тăвăр, ют та, çывăх та. Фронтра пулнă чăваш сăвăçисен поэзи ӳкерчĕкĕсене пĕрле пухса пăхас пулсан умма хĕçпе вутра пĕтмен пĕтĕм Европа илемĕпе тискерĕ тухса выртать. Шутланă-ши чăваш сăвăçисем вăрçă хирĕнче чухне нацисен хăйнеевĕрлĕхне упрасси, тăшманăн аслă çыннисене мухтасси çинчен – вăл пурин те палăрмасть. Петĕр Хусанкайпа Ухсай Яккăвĕн вара – куç кĕретĕнех янăрать. Тăван чĕлхе, тăван сасă хисепĕ вĕсемшĕн нимĕç, акăлчан е вырăс сăмахĕ пекех хаклă, вырăс е акăлчан пăшалĕ Пурнăçа хӳтĕленĕрен хисеплĕ те хаклă. Тавăру пăшалне чăваш та, ытти халăх та пĕрле туптанă.

### 4.2. 1941-1945 çулсенчи лиро-эпика

Вăрçă вăхăтĕнче чăваш литературинче сăвăллă лиро-эпика хăвăрт аталанса кайнă – сăвă ярăмĕсенчен пуçласа сăвăллă роман таранах. Вăхăт васкатнă. Кунсем уйăхсенчен вăрăмрах, уйăхсем çулсенчен пăллăрах пулса тăнă. Чун пĕр самант та канăç курман, шухăш пĕр каçлăха та пулин лăпланса ларайман.

Тĕрлĕ ӳсĕмри сăвăçсене вăрçă хирĕ сасартăках пĕр тан рете тăратнă – вĕсем чунра кӳтсе çитнине çырнă. Çакă вара çынна каласа парас енне – эпика енне – туртнă. Капланса тăракан туйăмсемпе шухăшсем кĕске сăвва шăнăçайман, вĕсем сыпăнса пынă та, калавсем пулса кайнă. Çавсенчен сăвăллă халайсемпе (повеçсемпе) эпикăллă поэмăсем çуралса тухнă. Паллах, хаçатсенче «писатель» должноçĕнче ĕçлекенсен пысăкрах хапаллă хайлавсене тĕп хаçатсемпе журналсенче пичетлесе тăма майсем пулнă. Серафим Васильев пек ватă салтаксен «шелепилле» сăвăласа каланă поэмисем вăрçă хыççăн кăна пичетленме пултарнă.

«Вăрçă вăхăтěнче 16 поэма пичетленнě. Тăвата çул хушшинче çакăн чухлě поэма çырни чăваш литературин историйěнче урăх пулман» – тесе палăртнă Н.С. Дедушкин тěпчевçě.

16 поэмăран паллăраххисем çаксем:

П. Хусанкай. Таня. Аптраман тавраше – Я. Ухсай. Шăпчăк. Çыру. Влтава шывě хěрринче. – М.Уйăп. Салтак амăшě. – С. Элкер. Вăл вилěмсěр. – А. Эсхель. Ăмăрткайăк. – С. Шавлы. Зоя. Маттур Якур. Киев пионерě. – Иван Мучи. Тавăрпи (юмах-поэма).

Чăваш каччисен фронтри паттăрлăхě çинчен вěсем. Çапăçусенче паттăра тухнă çынсем поэмăсен геройěсем пулса тăраççě. «Таня» поэмăра – Совет Союзěн Герой. Зоя Космодемьянская партизанка, «Ăмăрткайăкра» – Совет Союзěн Геройě Федот Орлов летчик, «Вăл вилěмсěр» халайра – Иван Смирнов пулеметчик. Чăваш хěрарăмěн вăрçă вăхăтěнчи иксěлми чăтăмлăхě çинчен («Салтак амăшě» поэмăра Куçук амăшě, «Зоя» поэмăра – Зоя Семенова радистка), Салтак çулне çитмен ачасем («Маттур Якур», «Киев пионерě»). Çěнтерěве çывхартни çинчен. Пурнăçăн ырă хăвачě тěнче тискерěсен усалне юнлă вутра мěнле çěнтерсе пынине кăтартаççě вěсем.

Вěсем хушшинче лирикăлла поэмăсем нумай мар. Ахаль чухне эпика енне мала кăларса пыракан Ухсай Яккăвě вăрçă хирěнче лирикăлла «Шăллăм» ***поэма-реквием, поэма-эпитафи*** кěвěлет. Тăван шăллě, тахçан килте «пуканесен бригадирě» кăна пулнă Кирле танкист çапăçура паттăрла вилет. Поэтăн чун ыратăвě поэмăра тăванлăх картинчен тухса пěтěм халăхăн хуйхи-суйхине палăртать, пěтěм халăхăн Çěнтерӳшěн тумалли паттăрлăхне кăтартать, чăтма, çěкленме чěнет. «Шăллăм» поэма вырăс литературинчи О. Берггольцăн «Памяти защитников», П. Антокольскин «Сын», А.Прокофьевăн «Россия» поэмисемпе тан тăрать. Ку халай кěвви патне Ухсай вăрçă хыççăн чылай вăхăтран тепре таврăнать те «Шурă хурăнпа калаçни» лирикăллă поэма çырать.

Тăшмана хăвалама тытăнсан пысăкрах хапаллă хайлавсем çырма вăхăт та, хавха та ытларах тупăнса пынă. Таня комсомолка паттăрлăхě çинчен хыпарлани

алла лексенех Петĕр Хусанкай поэма çырма тытăнать. Эпосла лирикăра «Таня» (1942) поэма уйрăмах вăхăтлă, пысăк пĕлтерĕшлĕ, шухăшпа илемлĕх енчен вăрăм ĕмĕрлĕ пулса юлнă.

Мускав патĕнчи ялсенче, тăшман тылĕнче, хăюллăн çӳренĕ диверсант-партизансен – Зоя Космодемьянскаяпа унăн тантăшĕсем çинчен çырнă хайлавсем сахал мар. Чăваш поэчĕн лиро-эпики – лайăххисенчен пĕри, вĕренӳ кĕнекисене кĕнĕ поэма.

Вăтам шкултан вĕренсе тухнă çамрăк хĕр–партизанкăн халапри пек паттăрлăхне анлăн сăнарласа панă чăваш поэчĕ. Поэмăна çырма пуçланă чухне Таня комсомолкăн чăн ячĕпе хушамачĕ те паллă пулман-ха. Вырăс хĕрĕн паттăрлăхĕ çĕршыври пайтах сăвăçа хускатнă. Теçеткипе сăвă çак паттăрлăх çинчен, сахал мар поэма. Вĕсенчен М. Алигерăн «Зоя», А. Халитăн «Татьяна» поэмисем ун чухнех вырăс вулаканне паллă пулнă; П.Хусанкайăн «Тани» çав паллă хайлавсем хушшинче те палăрса тăрать. Вăл ăнăçлă пулса тухнă.

Эсир мана халех çакатăр,
Анчах та эп пĕччен çĕ мар.
Пурне те пурпĕр çакаймастăр-
Час килĕç маншăн тавăрма!

Тавăру çитнĕ. Çĕршыв тăшманран тасалнă. Паттăрлăх манăçмасть.

«Çак чаплă произведени П.Хусанкай пултарулăхĕнче çеç мар, пĕтĕм чăваш совет литературинче те паллă вырăн йышăнать. Ăна поэт чăн пурнăçри фактсемпе усă курса çырнă. Поэмăра паттăр вырăс хĕрĕн Зоя Космодемьянская (Таня) комсомолкăн ăс-хакăлĕпе чунчĕре вăйĕ, унăн характерĕ мĕнле социаллă-психологиллĕ сăлтавсене пула йĕркеленсе çирĕпленнине кăтартса парассине тĕп вырăна хунă, унăн кĕске те илемлĕ пурнăçне, вăл Тăван Çĕршыва чунтан парăнса юратнине, çутă ĕмĕтлĕ, кăвар чĕреллĕ пулнине тараннăн туймалла сулăмлăн уçса панă... *(Н.Дедушкин).* «Поэмăн 16-мĕш пайне, «Ĕнтĕ кун иртет, ĕнтĕ çĕр иртет» тесе пуçланаканнине, вăрçă çулĕсенче чăваш ялĕсенче хĕрсем кĕвĕлесе юрланă» *(М.Сироткин).* Поэмăна А.Эсхель,

А.Новиков, С. Шавлы, М.Фетисов тата ытти тĕпчевçĕсем тĕплĕн тишкерсе ырланă. Вăл вăтам шкулăн вĕренӳ кĕнекисене кĕрсе юлнă.

Ухсай Яккăвĕн «Хурçă та çуннă чух» кĕнекине кĕнĕ поэмисем – чăваш çар литературин ылтăн фончĕ, поэтăн аслă Çĕнтерĕвĕ. Вĕсем чăваш поэзийĕн пуянлăхне пур енчен те туллин палăртса тăраççĕ. Пĕр дивизири чăваш салтакĕсем тăван халăха янă ***сыру-поэма*** литература пурнăçĕнче çул палли пек курăнса юлнă. Ăна хирĕç Н.Шелепипе С.Элкер, А.Эсхельпе Ст. Шавлы сăвăçсем пĕрле пулса «Чăваш халăхĕ фронтри ывăлĕсем патне янă çыру» (1943) поэмăна кĕнекелесе кăлараççĕ.

«Влтава шывĕ хĕрринче» (1945) хайлава тĕпчевçĕсем ***поэма-хроника*** тесе палăртнă. Лирикăлла герой чех хĕрĕпе калаçать. Калаçура çынсен ĕçĕ-хĕлĕ, хакĕ, çĕршыв кун-çулĕ курăнса тăрать. Влтава-и унта, Одер-и е урăх юханшыв салтак умĕнче – уншăн пĕрех чи хакли, чунри – тăван юханшыв, Атăл, Сĕве, Сăр е Ункăпа Çавал – çакна пин-пин йĕрке, çĕр-çĕр хайлав пĕр ывăнмасăр тепĕр хут калать. Ку вăл тоталитарлă вăхăт хушнипе, çӳлтен ыйтнипе пулнă тесе калани тĕрĕсе килмĕ. Ку вăл – этемĕн чунĕ, унăн çынлăх туйăмĕ. Вăл ĕмĕрсенчен килнĕ, вăл ачаран пиçнĕ, çав юрату вилĕм умĕнчи салтака аякри çĕрсенче тата витĕртерех сисĕнсе тăнă.

Уйăп Мишшин «Салтак амăшĕ» (1943) поэми вулакан чунне тивмелле витĕмлĕ. Халай ĕрти (сюжечĕ) ансат, ĕçсем кулленхи ăнланмалла пулăмсем урлă пулса иртеççĕ. Фронтри кунсем тылри пурнăçпа уйрăлми пĕрлешсе пыраççĕ. Ывăлĕ пуçне хуни çинчен хуг килсен «Чул пек йывăр хуйăх пусрĕ Салтак амăш чĕрине. Унтанпа вăл пуçне усрĕ, Хурланать кунсеренех». Кĕçех çапăçусенче тăванланнă, «пĕр чĕреллĕ те пĕр чунлă» салтаксем пуç хунă Куçук амăшĕ патне хăйĕн ывăлĕ вырăнне йышăнма ыйтса çыру яраççĕ. Кĕçĕн командир Хĕветĕр, пулеметчик Пурхиле, боецсем Ваçук та Петĕр» янă ăшă сăмахсем урлах амăшĕ хăйне валли хӳтлĕх тупать, малалла пурăнма вăй илет. «Куçук амăшĕ те

тухрĕ Çĕнтерӳшĕн ĕçлеме. Мĕнпур тарăх çилне пухрĕ. Вăл ырма-канма пĕлмест».

Амăшне ырлани, уншăн пуç хума хатĕр тăни – вăрçă литературинчи чи палăрăмлă, пархатарлă тема. Сергей Васильев якутăн «Благословение матери», Аал Токомбаев кăркăсăн «Благословение», Якуб Колас белорусăн «Возмездие» поэмисем «Салтак амăшĕ» поэмăпа пĕр вăхăтрах пичетленнĕ, вĕсем пурте ывăлĕсен паттăрлăхне, амăшĕсен чăтăмлăхне мухтанă.

Вăрçă вăхăтĕнчи поэзи публицистикăпа танах талпăнса пырать. Поэмăсем те ун хыççăнах туртăнаççĕ. Семен Элкер Ленинграда хӳтĕлесе пуç хунă чăваш каччи Иван Смирнов çинчен хаçатсем çырсанах (П.Лукицкий – «Рождение бессмертия», К.Турхан – «Пулеметчик Иван Смирнов», И Курчавов – «Чăваш халăхĕн ывăлĕ – Иван Смирнов пулеметчик» *(Чăваш коммуни, 1942, май, 1)* анлăрах хайлав йĕркелеме ларать, вара Каçал каччине «Вăл вилĕмсĕр» поэмăра мухтавлать.

«Хăйĕн поэминче С. Элкер çамрăк герой сăнарне, ун ĕç-хĕлне, çапăçури хастарлăхне ĕненмелле те витĕмлĕ кăтартса панă. Хăйсен взвочĕ тытса тăракан рубежа хӳтĕлесе, Смирнов юлашки патрон, юлашки граната юлмиччен тăшманпа чăрсăррăн кĕрешет. С.В.Элкер поэминче вăл вулакан умне чăн-чăн Улăп-паттăр пек тухса тăрать. Ку поэма патриотла çав тери пысăк сисĕм-туйăмлă. Вăл хамăр Тăван Çĕршыва тата ытларах юратма вĕрентет, ăна çĕр çинче пуринчен ытла хака хурса, кирек мĕнле тăшманран та паттăррăн хӳтĕлеме хушать. Пирĕн совет çамрăкĕсем Смирновăн вилĕмсĕр сăнарĕнчен пурăнма, кĕрешме, тăшмана çĕнтерме вĕренеççĕ», – тесе хакланă поэма пичетленичченех И.С.Тукташ халăх поэчĕн ĕçне.

Поэмăна кĕнĕ тепĕр паттăр – Совет Союзĕн Геройĕ Федот Орлов. Халай «Чăваш коммуни» хаçатра 1943 çулхи мартăн 19-мĕшĕнче пичетленме пуçланă. Аркадий Эсхель геройĕ – тăлăх ӳснĕ кĕтӳç Хветут, «ялти чи ятсăр Мĕкĕте ачи Орлов» Фронтра вăл – Ăмăрткайăк. Сывлăшри матросовец Гастелло капитан ăна хăйĕн

самолетне пиллесе панă, вăл унăн ĕçне малалла тăсаканĕ, тăшман çине вут-çулăм сапакан «Сенкер – 2» пилочĕ. Улатăр вырăсĕ Сарсков колхозник ăна хăй укçипе çĕнĕ самолет туянса парать. Федот Орлов пек ăмăрткайăксем Тăван çĕршыв тӳпинче сахал мар. Поэмăра çакă лайăх курăнать. Унпа пĕрлех тăшмана тустараççĕ Габидуллин тутар, Винокуров вырăс, чăваш ачисем Лаптев, Васильев, Ефимов... Çĕнтерĕве вĕсем пĕрле туптаççĕ! Ăнăçлă поэма вĕренӳ кĕнекисенче нумай çул тытăнса тăчĕ.

С. Шавлын «Киев пионерĕ» халайĕнчи Николай Лещук чакса пыракан çар полкĕн ялавне аманнă салтакран илсе тăшман аллине лекмелле мар пытарать. Икĕ çултан Хĕрлĕ Çар каялла таврăнать, нимĕç тыткăнĕнчен тарса килнĕ пионер ялава совет генералне тавăрса парать.

XXI ĕмĕртен пăхсан хайлаври ĕçсен пĕлтерĕшĕ пысăккăн курăнмĕ. Икĕ çулччен мар, ик эрне те кĕттермĕç ялав çухатнă çынсене – вĕсен шăпи мĕнле килсе тухнин тĕрĕссине вăрçă пĕтсен чылай кайран кăна истори кăштах уçса пачĕ. Ача-пăча валли çырнăскер, вăрçă вăхăтĕнче ӳснĕ ачасене çакăн пек хайлавсем кирлĕ пулнă. Урăхли пичетленме пултарайман. Вăрçă саккунĕсем хаяр та тӳрĕ. Литература ăна салтак пек пăркаланмасăр пурнăçланă.

12 çулхи Якур тимĕр-тăмăр, кĕл, пучах пухать. Головатый колхозник самолет илме укçа пухнине пĕлсен амăшĕн тухйине сутса ярать те, «пин çурă укçапа Сталина рапортлама» васкать. Паллах, кунта мухтава тивĕçлĕ паттăрлăх та, чăнласа вăй хурса тунă ĕç те çук. Чăн пурнăçра вунпĕр çулхи ачасем вăкăрпа суха туни те пулнă. Анчах вĕсем çинчен поэт е пĕлмен, е пĕлсен те çырма хăяйман. Чăваш ялĕ, чăваш ачисем, чăваш хĕрĕсем выçăллă-тутăллă пурăнса фронтшăн ĕçленине, ĕçрех тӳнсе кайнине вăрçă вăхăтĕнче, паллах, ӳкерсе пама пултарайман. Ун пек çырнăшăн мĕн кĕтни каламасăрах паллă. Юрий Скворцовăн «Уках хурăнĕ» е Леонид Петриковăн «Время черного солнца» хайлавĕсем кайран кăна пичетленме пултарнă.

1941-1945 çулсенче чăваш поэми васкавлă аталану самантне чăтса ирттернĕ. Малтанхи кĕске поэмăсем – документлă сăвăллă репортажсем пек. Вĕсем чĕнӳ, тупа, ылхан сăввисен ретĕнчех тăраççĕ. ***Репортаж-поэма*** – чи васкаварлă та витĕмлĕ жанр. Чăваш лиро-эпики Александр Твардовский пек «Василий Теркина» çуратайман пулсан та, вăрçă хирĕнчен тĕреклене тавраннă, малалла вăйланса пынă. Çакна Петĕр Хусанкайпа Яхсай Яккăвĕн пултарулăхĕсем питех те çирĕппĕн кăтартса пачĕç.

Тăван Çĕршыв аслă вăрçи вăхăтĕнчи сăвăсемпе поэмăсен пĕлтерĕшне хальхи хакпа пахалама май килмест. Çав вăхăтăн сасси вĕсенче, çав вăхăтăн синкерĕпе сенкерĕ.

Çĕршыв урăх саманара, урăх идеалсемпе пурăннă чухне, халăхсемшĕн урăх сурансем татах тупăнса пынă вăхăтсенче эпир çав еткерлĕхрен мĕн илме пултаратпăр. Пире юрăхли халĕ те пур пулсан (вĕсем чăнласах та пур!), хайлавсем кивелмен, вĕсен илемлĕхпе сăнарлăх тĕнчи литературăна пуянлатса тăрать теме пултаратпăр? П.Хусанкайăн «Таня», Уйăп Мишин «Салтак амăшĕ», С.Элкерĕн «Вăл вилĕмсĕр», А.Эсхелĕн «Ăмăрткайăк» поэмисем çар литературин çӳлĕкĕ çинче тусанланса юлмĕç.

# V. АСЛӐ ВӐРҪӐ ҪУЛĔСЕНЧИ ЧӐВАШ ПРОЗИ

## *5.1. 1941-1945 ҫулсенчи публицистикӑпа тĕрленчĕксем*

**Леонид Агаков** *(рота командирĕ, 1942 ҫ. ҫуркуннерен-дивизи хаҫатĕнче), 1944-1946 ҫҫ.- Чӑваш кĕнеке кӑларӑшĕн тĕременĕ)* . Амӑшĕн сӑмахĕ. -Захаров сержант. - Ҫĕлĕк вырӑнне - ҫĕтĕк йĕм. - Нимĕҫсем ҫынсем мар, ҫынҫиенсем. - Чӑваш халӑхĕн паттӑр ывӑлĕсем. - Манӑн туссемĕ - 20 ҫулти капитан; - Убийцы. - По следам зверя. - Русская женщина. - Ярость.- Слава разведчика. - Огонь по детоубийцам. - Абикей истребляет немцев. - Песня.

**Василий Алагер**. Тӳррĕн тĕллесе персе. - Паттӑр воин (Семен Завялов).

**Филипп Андреев**. Чӑтма йывӑр.

**Степан Аслан** *(ҫарта 1942 ҫулччен пулнӑ).* Гварди капитанĕ Кириллов. – Засадӑра. - Юлташ ҫинчен. - Гвардеец Захар Дмитриев. - Разведчик Комков.

**Валентин Ахтупай**. Ӳкерчĕксем (ТА.1944,18)

**Михаил Белов**. Окопра. - Шӑпчӑк. - Дунай хĕрринче. - Вӑрҫӑ хирĕнче эп ҫӳрерĕм.

**Максим Данилов-Чалдун** *(1941 ҫ. салтака хӑй ирĕкĕпе кайнӑ, Калинин фронтĕнчи полкра рота командирĕ. 1943-1944 ҫҫ. Белоруссипе Балтика тӑрӑхĕнчи хуласемпе ялсене ирĕке кӑларнӑ ҫĕре хутшӑнать. 1944 ҫулхи хĕлле йывӑр аманнӑ, пуш уйӑхĕн 2-мĕшĕнче Калинин облаҫĕнчи Кувшиновка хулинчи ҫар госпиталĕнче операци сĕтелĕ ҫинче вилсе кайнӑ).* Лизавета Егоровна» (1943).– Иккĕн 20 фрица хирĕҫ. - Антун ҫемйи (1943), - Каллех фронта (Илемлĕ лит., 1941,8). - Кочетков фельдшер, - Тĕлпулу, - 34-мĕш атака умĕн, - Красноармеец Самсонов. - Вилĕмрен хӑтӑлнисем.

**Василий Долгов** *(дивизи хаҫачĕн литература ĕҫлевҫи, тĕп тĕремен ҫумĕ, Ленинградран Прагӑна ҫитнĕ).* Ҫĕлене вĕлермелле. - Шкул ачисене. - Григорьев снайпер. - Вырӑс салтакĕ. – Виҫĕ паттӑр. – Анчар. - Хӑюллӑ сержант. - Вӑрҫӑ пĕтнĕ кунсенче. - Коммунист юнĕ. - Тĕлĕнмелле винтовка. - Лӑпкӑ ҫын. - Радисткӑсем.

**Трофим Майоров**. Пулеметчиксем. – Вилĕмсĕр вилĕм. – Юратнă хĕçпăшал. – Командир связнойĕ. – Снайперсем патĕнче.

**Илпек Микулай**.. Пĕчĕк Клавди. – Амăшĕпе ывăлĕ. – Хĕрӳллĕ кун. – Шипка таврашĕнче. – Аслă утăм (ЧК,1942, июль,4).

**Мĕтри Кипек**. Чăрсăр Антун.

**Иван Мучи**. Ыран. - Фотограф.

**Василий Ржанов** *(Мускав çар округĕнче политруксен курсĕнчен вĕренсе тухнă; Калинин, Брянск, Белоруссi фрончĕсенче полк агитаторĕ тата çар хаçачĕсен корреспонденчĕ).* «Шурă кăвакарчăн».

**Хветут Çитта**. *(1938 ç. Хĕрлĕ Çарта: дивизи хаçачĕн ответлă секретарĕ, редакторĕ; 1944 ç. нарăс уйăхĕнче Ленинград фронтĕнче вилнĕ).* Паттăр салтак. – Артиллеристсем. – Фронтри патриотка. - Паттăр разведчик.

**Алексей Талвир** *(«Комсомольская правда» хаçатăн çарти хыпарçи).* Натиск. – Танки идут. – В Сталинграде.

**Илле Тукташ**. Халăх çилли. – Ылтăн Çăлтăр (Иван Поляков). – Павел Лаптев.

**Куçма Турхан**. Пулеметчик Иван Смирнов. – Халăхăн мухтавлă ывăлĕсем. – Юлташ. - Хĕрлĕ тутăр.

**Хветĕр Уяр**. Тăвансем кĕтеççĕ.- Шурлăхри вилĕм. – Сунарçă. - Çыру.

**Петĕр Хусанкай**. Тăван Çĕршыв. - Мы идем. – Смелее на врага. – Встреча друзей.

**Аркадий Эсхель**. Юн витнĕ комсомол билечĕ. – Сарсков колхозник самолечĕ. – Тăван çĕршĕн.

**Михаил Якимов**. Артиллери вучĕ. - Фронт линийĕ леш енче. - Çапăçу пуçланас умĕн. - Халăх ывăлĕсем.

**Сергей Ялавин**. Дутова хирĕç «чаплă ĕç».

**Александр Яндаш**. Тăван çĕршĕн.

Аслă вăрçă çулĕсенче публицистикăн тĕп сăмахĕ – çарти салтаксемпе ĕçри халăх Тăван Çĕршыва, Ирĕклĕхе чун-чĕререн юратни, тăшмана хаяррăн курайманни, боецсемпе партизансем оккупантсене шелсĕррĕн лăскани,

тылри ӗҫченсем пӗтӗм вӑй-халпа фронта пулӑшни, фронтпа тыл пӗрлӗхӗ, халӑхсен тӑванла туслӑхӗ. Паллах, вӑрҫӑ кунӗсенчи публицистикӑн темисем, тӗллевӗсем пин тӗрлӗ вылянса тӑнӑ, анчах тӗп шӑнӑрӗ пур ҫӗрте те пӗрре пулнӑ: йӑлтах - Ҫӗнтерӳшӗн!

Хаҫат-журнал, листовкӑсем, ТАСС чӳречисем, эфир публицистикӑлла статьясемпе пуӑннӑ. Тарӑхуллӑ, кӑшкӑруллӑ, ылханлӑ, кулӑшла, синкерле тата тем тӗрлӗ те пулса тухнӑ вӗри сӑмахсем - ҫыракансен литература е жанр тасалӑхӗ ҫинчен шутлама вӑхӑт пулман. Вӗсем вичкӗн шухӑш, вичкӗн тӗслӗх ҫынсен чунне часрах ҫиттӗр те кӗрешӗве ҫӗкленме вӑй-хӑват патӑр тенӗ.

Эвакуаци йӗркипе килнӗ журналистсемпе ҫыравҫӑсем е Шупашкарти госпитальсенче сывалакан поэтсем (Кайсын Кулиев) Чӑваш республикинчи пичет ӗҫне хутшӑннӑ. «Илемлӗ литература» журнал чӑвашла-вырӑсла тухса тӑнӑ. Чӑваш пичечӗ ҫӗршыври хаҫат-журнала май пур таран асӑрхаса тӑнӑ, чи вирлӗ япаласене куҫарса пичетлеме тӑрӑшнӑ. «Чӑваш коммуни» Александр Гитовичӑн «В решающий бой» хаҫатра тухнӑ «33-мӗш атака» очеркне куҫарса пичетленӗ. Унта Вӑрнар районӗнчи Кӳлхӗрри ывӑлӗ Сергей Смирнов паттӑрлӑхне ҫутатса панӑ. «Правда» хаҫатран «Пирӗн ентешсем» рубрикӑпа Н.Ильинских пичетленӗ «Вӑрманти ҫапӑҫу» тӗрленчӗке илсе лартнӑ. А.Хатаевский, А.Подольский тата ыттисен фронтри чӑваш ачисем ҫинчен ҫырнӑ статйисем тухнӑ.

Нумай япала сӑвӑлла ҫуралнӑ. Ик йӗркеллӗ houses калараӑшран пуҫласа салтаксем тӑван халӑха янӑ ҫыру-поэма е халӑх вӗсене хирӗҫ панӑ хурав *(«Чӑваш халӑхӗ хӑйӗн фронтри ывӑлӗсем патне янӑ ҫыру». - Чӑваш коммуни, 1943, июль 7)* таранах – таса публицистика. Унта хушса калани, вӗрентни, васкатни, риторика нумай. Илемлӗхпе сӑнарлӑх енчен, тӗрӗссине каламалла, фронтра ҫырнӑ «Ҫыруран» хавшакрах вӑл. Н.И.Шелепи, С.В.Элкер, К.А.Чулкаҫ, С.А.Шавлы, А.А.Эсхель вирлӗ танлаштарусем тупма пултарайман пулӗ-и? Ахӑртнех, тылри ытла та йывӑр лару-тӑру (сивӗ, выҫӑ, ҫӗтӗк, ҫуклӑх) пушӑ сӑмахсемпе павӑрма чарса тӑнӑ пулӗ.

Узбекистан, Туркменистан, Грузи, Кăркăстан халăхĕн çырăвĕсем ытларах та, çăтăрах та... Апла пулин те чăваш халăхĕ хăйĕн вутри ывăлĕсемпе хĕрĕсем патне чунри сăмахне калама пултарнă. Кĕтнĕ сăмах пулнă вăл. Кĕтнĕ сăмах кирек хăçан та хаклă.

Публицистика пăшалпа тан пулса тăнă. Чăваш кĕнеке кăларăшĕ 1941 çултах фашизма питрен çупакан питлевпе кулăш хайлавĕсене пухса «Çĕлен-калтасем» кĕнеке кăларать. Унти памфлетсемпе фельетонсем, питлевпе тарăху калавĕсем шăпах çав вăхăтра, çав лару-тăрура халăх хушшинче кирлĕ пулнă – хаçат-журналпа радио майĕсем кашни яла çитмен чухне кĕнеке малти вырăна йышăннă. Кĕнекере вырăсларан куçарнă хайлавсем нумай. Малта литература ыйтăвĕ мар, малта – Çĕнтерӳ чĕнĕвĕ. 1942 çулта «Паттăрсем» тата «Тăван Çĕршывшăн», 1944 çулта «Чăваш ывăл-хĕрĕсем» кĕнекесем пухса кăларнă.

Вăрçă пуçлансанах хаçатсенче пичетленнĕ е радиопа янăранă калавсем пĕри те таса калав мар – вĕсене очеркла е публицистикăлла калавсем темелле. Вĕсенче халăх сăмахлăхĕн витĕмĕ те нумай мар. Вичкĕн публицистика шухăшĕсем вара – кашнинчех. Ахăртнех, ку вăхăтра çар хыпарĕсем йăлтах вырăсла килсе тăнăран-ши, чăваш çыравçисем пуплевсене вырăсла çаврăнăшсем çине-çинех кĕртсе пынă: «Мурат партизан» мар, «Партизан Мурат», «Сенкер «иккĕ» мар – «двойка», «Разведчик Комков»... Степан Асланăн «Комков разведчик» очеркла калавĕ *(Чăваш коммуни, 1941, авг., 26)* – илемлĕ, сăнарлă хывма тăрăшнă тĕрленчĕк.

Малтанхи статьясемпе очерксем пурте пекех пĕр евĕрчĕ. Унта – тӳрĕ хушу, чĕнӳ, танлаштару. Унта – тарăху, ылхан, тупа. Каярахпа паттăрсен портречĕсем, чăрсăр ĕçĕсене çырса кăтартнисем, вăрçăчченхипе вăрçă вăхăтĕнчине танлаштарса шухăшланисем кĕрсе пыраççĕ. «Юлашки вăхăтра эпир хаçатра час-часах Р.Шашков, М.Якимов, И.Столяров, Т.Майоров, И.Мосеев юлташсен очеркĕсене тĕл пулатпăр. Вĕсем пирĕн тăван литературăн пуянлăхне малалла ӳстереççĕ», – тенĕ писательсен союзĕн председателĕ А.Эсхель «Чăваш литератури Отечественнăй

Аслă вăрçă кунĕсенче» статьяра *(Чăваш коммуни, 1942, июль, 22).* Çартан янă çырусем, тĕрленчĕксем, статьясем кашни номертех пичетленсе пынă. Валентин Ахтупай, Никита Волков, Иван Кашлинкке, Сергей Мерчен çапăçури çарсенчен янă публицистика «Чăваш коммуни» хаçатра тухса тăнă.

Публицистика çинчен каланă чухне фронтовик-журналистсен ятне писатель-публицистсемпе пĕрлех асăнни вырăнлă. Вĕсенчен чылайăшĕ çапăçу хирĕнче выртса юлнă. Çĕнтерӳпе таврăннисенчен «Коммунизм ялавĕ» хаçатра Павел Дубровин, Семен Данилов, Владимир Петров, Анатолий Семенов, Иван Тенюшев, Михаил Якимов, Трофим Майоров, Иван Пинер вăрах ĕçлерĕç. Вĕсем фронтра чухне тăван хаçатпа çирĕп çыхăну тытнă.

«Вăрçă тухни çинчен пире, хальхи Кăнтăр поселокĕ ларакан хирте çар ĕçне вĕренекенсене, Михаил Якимов хуларан чупса пырса пĕлтерчĕ», – тесе çырнă Илпек Микулайĕ каярахпа (Вăрçăпа çĕнтерӳ, 1973, 5) Кĕçех М.Якимов фронтран çырма пуçлать. Унăн «Артиллери вучĕ» калавĕ 1942 çулхи акан 12-мĕшĕнче пичетленнĕ. Каярахпа М.Н.Якимов капитан кулленех пичетленсе тăрать. Паллăраххисенчен çаксем: «Фронт линийĕн леш енче» (чӳк,3), «Çапăçу пуçланас умĕн» (раштав, 30). Çапăçу хирĕнчен янă «Халăх ывăлĕсем» очерк икĕ хут тухать (Чăваш коммуни, 1943, март,13-14; Илемлĕ литература,1944,16).

«Чăваш коммуни» хаçатра 1942 çулта куллен пичетленнĕ тепĕр журналист – Трофим Майоров капитан, Ишлей çумĕнчи Яранкасси чăвашĕ. Унăн «Пулеметчиксем» (ЧК, 1942: июль,12), «Вилĕмсĕр вилĕм» (ЧК,1942, авг.,19), «Командир связнойĕ» (ЧК,1942, сент., 9) тĕрленчĕкĕсем фронтри паттăр чăвашсен сăнарĕсене юратмалла уçса параççĕ. Трофим Емельянович журналист статйисемпе тĕрленчĕкĕсенче геройсен чăвашри адресĕсем пурри лайăх. Вĕсен йĕрĕпе паян та çаврăнса тухма пулать: Авксентьевпа Никоноров сержантсем – Елчĕкри Çĕнĕ Патреккелĕнчен, Елизаров сапер Çавал хĕрринчи Тутаркассинчен, Нурахмет Алихманов – чăваш ялĕнче

ӳснӗ тутар ачи, Илья Иванович Григорьев – Сӗнтӗрвӑррисем, Поснарпоҫ ывӑлӗ. Т.Майоров капитан ҫырнӑ «Веретенино ялӗнчи трагеди» хыпарпа (ЧК, 1943, июль, 13), Леонид Агаков, хӑй каланӑ тӑрӑх, «Ылтӑн вӑчӑра» халай ҫырнӑ чухне усӑ курнӑ. 1942 ҫул хыҫҫӑн тӗрленчӗксемпе очерксем нумайланаҫҫӗ. Жанр тӗсӗсем те тӗрлӗрени – биографи е портрет тӗрленчӗкӗ, ҫар эпизочӗ, ҫул очеркӗ, репортаж, ӳкерчӗксен ярӑмӗ.

Вӑрҫӑн иккӗмӗш тапхӑрӗнче, Мускав, Сталинград, Курск патӗнчи тамӑксенчен ҫӗнтерсе тухнӑ хыҫҫӑн – 1943 ҫулта ҫар публицистики тӗпрен урӑх саслӑ, сӑнарлӑ та витӗмлӗ пулса тӑрать. Публицистика илемлӗ тӗрленчӗксемпе калавсене вырӑн пама пуҫлатьӗ Илпек Микулайӗн, Василий Долговӑн, Федот Ҫиттан, Куҫма Турханӑн, Илле Тукташӑн, Хветӗр Уярӑн, Леонид Агаковӑн, Алексей Талвирӑн, Куҫма Пайрашӑн, Мӗтри Кипекӑн очеркла тӗрленчӗкӗсемпе новеллӑлла калавӗсем хаярлӑхран иртсе ӑшпиллӗ туйӑмсемпе тулаҫҫӗ, ҫынсен шухӑш-туйӑмне шалтан кӑтартса памалли мелсене алла ҫавӑрса илеҫҫӗ. Психологизм туртӑмӗпе кулӑш таппи таймӑк-шаймӑк ӗртине майӗпен кӗрсе пырать.

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи фронт пичечӗ хӑйӗн миссине кунпа шутласа пурнӑҫланӑ. Ку кунсем историе кӗрсе юлнӑ. Вырӑс публицицистикин вичкӗн хайлавӗсем нумай томсемпе пичетленсе тухрӗҫ. 2 томлӑ «От советского информбюро: 1941-1945» пухчӑра Л.Леонов, А.Фадеев, И.Эренбург, П.Лидов, К.Федин, А.Толстой, М.Шолохов, В.Вишневский тата ытти паллӑ ҫыравҫӑсен статйисемпе очеркӗсем паян ҫырнӑ пекех вуланаҫҫӗ. Чӑваш писателӗсен вырӑсла е чӑвашла статйисемпе тӗрленчӗкӗсем ку таранччен те кӗнеке пулаймарӗҫ, вӗсем фронтовиксем ҫинчен ҫырнӑ диссертацисене, ятарлӑ тӗпчевсене лекмесӗрех юлчӗҫ. Кам та пулин ҫар хаҫачӗсене йӗркипе пӑхса тухса тишкерӳ тунине пӗлместӗп. Халлӗхе туллирех тишкерӳ – Н.С.Дедушкинӑн «Аслӑ Ҫӗнтерӳ ҫулӗпе» (1985) кӗнекинче. Леонид Агаков хӑйӗн вӑрҫӑри публицистикине кӑштах пухса «Фронтри журналист ҫырнисенчен» ярӑмпа «Тӑван Атӑл» журналта пичетлерӗ, Ухсай Яккӑвӗ, Илпек Микулайӗ, Василий

Долгов аса илсе каласа хăварчĕç. Ыттисем – дивизи хаçачĕсенче ĕçленĕ е вĕсемпе çыхăну тытнă теçетке ытла çыравçă (Василий Алагер, Илле Тукташ, Петĕр Хусанкай, Иван Саламбек, Хветĕр Уяр, Тихăн Петĕркки тата ыттисем) – вăрçă кунĕсем çине тепĕр хут çаврăнса пăхма кăмăл тумарĕç. Унта илемпе савăнăç шырама çукчĕ ĕнтĕ. Чăнласа çивĕч, кайранхи вăхăта та тивĕçтерекен хайлавсем вĕсем хушшинче сахал. Чăвашран пĕрин те Илья Эренбург е Алексей Толстой пек чикĕ леш енчи тусĕсем валли çырма та, пичетленме те май пулман. Çапах та, Леонид Агаков, Алексей Талвир, Петĕр Хусанкай, Яков Ухсай, Хв.Уяр, Степан Аслан, Максим Чалдун, Мĕтри Кибек, Иван Саламбек çырнисем – вăрçă публицистикин чи лайăх хайлавĕсен ретĕнче тăраканнисем. Вĕсенче – наци историйĕпе шăпи çинчен шухăшланисем, Çĕршывпа пурнăç пĕлтерĕшĕ, халăх философийĕпе кăмăл-сипечĕн тымарĕсем. Вырăс наци характерĕпе пĕрле чăваш халăх кăмăлĕн лайăх енĕсем çыхăнса пынине мала кăларса, ырă туртăмсене çирĕплетни хаклă пулнă хаяр кунсенче. Раççей империйĕ Вак халăхсенчен мăшкăлласа пусмăрлани, пуçиле ярса пинĕ-пинĕпе пĕтерни çинчен çырман фронтри çыравçăсем. Вырăс шовинисчĕсем те вăл кунсенче тупăнман! Тупăнма пултарайман та – Гитлер пуçне татса ывăтнă пек вăркăнтарнă пулĕччĕç ун пек этем пуçне вырăссем хăйсемех! Чăваш публицисчĕсен статйисем – Константин Симонов, Василий Гроссман, Борис Полевой, Федор Панферов çырнисемпе танах. Вĕсенче – ыратакан чунран тухнă вĕри сăмахсем. Вăрçăн малтанхи çулĕнче салтак чунне юрăхлă сăмах тупма уйрăмах йывăр килнĕ. Чăваш çыравçисем ăна тупма пултарнă. Пытармасăр каласан, Мускаври гостиницăсенче пурăнакан, фронта командировкăна кăна кайса килекен çыравçăсенчен те вирлĕрех тупайнă, мĕншĕн тесен салтак пурнăçне хăйсем чăтса, çапăçусенче куллен курса пынă.

Аслă вăрçăра паттăра тухнă чăваш ывăлĕсем çинчен çырнисем ытларах чухне хурлану кăна çуратма пултараççĕ. Хăтавсемпе ґĕрленчĕксен геройĕсем пурте пекех вутлă вăрçăран таврăнман. Вĕсене аса илме

çыравçăсене йывăрччĕ. Хальхи ăрăвăн тивĕçĕ вăл – вăрçă çыннисене тăпра айĕнче шыраса тупасси те, хайлавĕсене хаçатсем тăрăх тупса чысласси те.

Вырăсла пичетленнĕ очерксем 1957-1958 çулсенче виçĕ томпа «Фронтовые очерки о Великой Отечественной войне» пичетленнĕччĕ. 1941-1945 çç. вутра çырнă чăваш тĕрленчĕкĕсемпе калавĕсем те уйрăм кĕнекен тухĕçех тесе тăратăп.

### *5.2. Вăрçă çулĕсенче çырнă калавсемпе повеçсен пахалăх.*

**Леонид Агаков. Ялав**. - Ёнентерчĕç. - Хĕр йĕрри.- Старик.- Кăсăя. - Вилĕмрен те вăйлăрах (повесть, 1943-45). - Фронтри ачасем, - Тăван юншăн. - Пĕчĕк партизансем. - Вăрçă ачисем. - Партизан Мурат (повесть, 1942) . Хĕрача (повесть).

**Степан Аслан**. Аслати (повесть,1942).

**Никита Волков.** Парне (повесть: 1941. - 88 с.)

**Ефрем Еллиев** *(хăй ирĕкĕпе фронта кайнă. 1942 ç. кăрлач уйăхĕнче Калинин хули çывăхĕнчи çапăçура вилнĕ).* Вăрçăччен пичетленнисем - «Хапха», «Вунă çултан», «Юбилей». Фронтран янисем упранса юлман.

**Илпек Микулай**. *(1937-1948 çç. çарта тăнă. полкри комсомол комитечĕн секретарĕ, пулемет взвочĕн командирĕ, дивизион комиссарĕ, дивизи хаçачĕн редакторĕ).* Ирена (1944). - Эпир – совет салтакĕсем, Тăвата кун.

**Михаил Кудрявцев (Кăтра Мишша)** *(1941 ç. фронта хăй ирĕкĕпе кайнă. 1944 ç. Украинăри Тернополь облаçĕнчи Шумы районĕнчи Шумбар ялĕ патĕнче тăванла масарта пытарнă).* «Татăлнă ĕмĕт», «Парне».

**Куçма Пайраш** *(çар госпиталĕн врачĕ, фронтовик).* Катерина Ларина. - Тăван ял.- Пуçламăшĕ. – Партбилет. - Тĕлпулу.

**Иван Саламбек**. Иксĕлми шанчăк (повесть, 1944-45).

**Хветут Çитта:** Артиллеристсем. - Фронтри патриотка. – Паттăр разведчик. - -Хисеплĕ пăшал.– Паттăр салтак.

***Алексей Талвир** («Комсомольская правда» хаçатăн çарти корреспонденчĕ).* «Харсăр çынсем».

**Куçма Турхан**. Пулеметчик Иван. Смирнов (биографи очеркĕ).

**Хветĕр Уяр**. Кĕпер çинче. - Куçук

1941-1945 çулсенчи çар калавĕсемпе повеçĕсем çинчен уйрăммăн çырнă чухне çак кĕске вăхăтрах сасартăк литература жанрĕсем урăх хавхапа. урăх характерсемпе, урăх сюжетсемпе вăйланса, çирĕпленсе кайнине палăртмалла. Вăрçăччен пĕр-ик уйăх маларах пичетленнĕ çар калавĕсем вĕсем çумĕнче айван япаласем пек тăрса юлнă, мĕншĕн тесен фашизм кӳрекен тискерлĕхе, конфликта çыравçăсем маларах ăнкарма та, çырса кăтартма та пултарайман. «Сĕмсĕр тăшмана хăйĕн çĕрĕ çинчех çапса аркататпăр» тенисем юрăхсăр иккенĕ хула хыççăн хула тăшман айне пулса пынă чухне кашни çынна курăнса тăнă. Янкăс сăвă-юрăпа улталаннă литературăна вăрçă сăмахне чăнласа тĕрĕссипе калама ытла та йывăр килсе тухнă. Апла пулсан та, совет литератури мухтанма пултарать: унăн вăрçăн пĕрремĕш кунĕнчех снайпер-çыравçисем шăкăрин палăрса пынă! Чĕнӳ-сăвăран тупа статья патне, статьяран тĕрленчĕкпе новелла таран, унтан калавсемпе повеçсем, унтан та ытлрарх – драмăсемпе трагедисем патне хăвăрт хăпарнă литература. Мĕншĕн тесен Гитлерпа Сталин туслăхне тăнлă çыравçăсем ĕненмен. Тĕнче вăрçă хирĕпе утнине вĕсем курмасăр тăма пултарайман. Çĕршывваскасах вăрçа хатĕрленчĕ. Анчах ку вăрçă çав тери хаяр та шелсĕр пулассине уйрăм ăсчахсем кăна чухласа тăнă.

Вырăс литературинче малтанхи ăнăçлă халайсем – Мускава хӳтĕлекен Панфилов генерал дивизийĕ çинчен А.Бекăн документ чĕлхипе татса çырнă «Волоколамское шоссе» тата Б.Горбатовăн тăшман тылĕнчи парăнман паттăрсем çинчен хывнă çĕкленӳллĕ-сăнарлă «Непокоренные» повеçĕсем, халăх паттăрлăхĕн палăкĕсемĕ Чăваш прози вăрçă хыççăн тин кăтартма пултарчĕ ку сĕрелтĕсене.

Чалтан вăрçи чăваш литературине вилĕмсĕр калавсем нумай парса хăварайман. Вăрçăччен лайăх

калавсем çырса пичетленĕ икĕ теçетке ытла çамрăк çыравçă çапăçу хирне выртса юлнă. Вĕсем хушшинче – талантне палăртма ĕлкĕрнĕ Хветĕр Çитта, Кăтра Мишша, Ефрем Еллиев, Владимир Бараев, Вениамин Туртуш, Борис Шашков, Роман Шашков, Хурнай Мишши... Пĕр ăстăрăмри тус-юлташсем, пĕр çыхăри сăмах ăстисем вĕсем.

*Федот Çитта Хурнай Мишин арăмне Антонина Митрофановăна 1942 çулхи утă уйăхĕн 3-мĕшĕнче янă çыруран.* «Тоня! Сан çырăву манăн ăш-чĕрене çунтарса кăларчĕ. Вăл çырăва илнĕ кун кунĕпе минтресе çӳрерĕм, ал-ура хытса кайрĕ, апат çимесĕр пурăнтăм. Пĕртте ĕненес килмест Миша çук тенине. Вĕт апрель уйăхĕнче кăна Шупашкарти юлташсем Роман Шашковпа Миша Митрофанов гужбазăра политрук пулса ĕçлеççĕ тесе пĕлтерчĕç. Неужели хăвăртах çавăн пек инкек сиксе тухрĕ? Пĕтĕмпе минресе каймалла. Паллах, ку вăрçăра эпĕ чылай хаклă юлташсене çухатрăм. Но тăван пек Мишша çукки мана питĕ хуйхăртать, чĕрене ыраттарать.

Тоня! Тархасшăн тĕплĕ çырса пĕлтер: хăш фронтра пулнă вăл, юлташĕсем мĕн çыраççĕ, мĕнле çапăçура Миша пуçне хунă, кам пулса ĕçленĕ вăл. Сан çыруна питĕ кĕтетĕп. Хам урăх нимĕн те çыраймастăп. Ал-ура чĕтрет. Питĕ пысăк хуйхă маншăн, ăш-чике пусарма çук. Сан çыруна питĕ кĕтетĕп. Сириуса, аçăна, аннĕне, Тамарăна, Анатолие пурне те чĕререн салам. Çыру кĕтетĕп. Çыру кĕтсе юлатăп... Полевая почта № 31. Федя». Акă вăл чун касăлнă самант сасси. Пĕрин хыççăн тепри ӳкеççĕ. Кĕçех Ленинград фронтĕнчи 63-мĕш дивизин «Защитник Родины» хаçачĕн тĕременĕ Федот Ситта хăй те пуçне хурать. Çыравçă вилет те, хайлавĕсем юлаççĕ. «Паттăр разведчик» очерк геройĕ Иван Михайлович Ульянов, вăрçăччĕн парикмахерта ĕçленĕскер, фронтра тăшмана «хырать», çĕршыв геройĕн ятне илет. Тепĕр очерк геройĕ Алексей Иванович Горский чăваш («Паттăр салтак», 1944) каланă сăмахсем киреметри кĕлĕ пекех янăраççĕ: «Хамăрăн телейлĕ пурнăçшăн, юратнă çĕршывшăн, аслă Атăл шывĕшĕн, тăван Çулавăç колхозĕшĕн, ытарайми çемьешĕн эпĕ

вутлӑ вӑрҫа кӗретӗп. Нимӗҫсене ҫӗр тӗпӗнчен кӑкласа тӑкма, пуҫа хӗрхенмесӗр ҫапӑҫма сӑмах паратӑп. Снаряд ман алла татса кайсан хӑрах алӑпа та тӑшмана пӑвса вӗлерӗп; урана татса пӑрахсан хырӑмпа шуса, тӑшмана тупса вӗлерӗп. Куҫӑма чавса кӑларсан чун-чӗремпе тӑшмана витӗр курса мӑйне кӑшласа татӑп» - тенӗ ҫапӑҫу умӗн фронта хӑй ирӗкӗпе килнӗ салтак ҫар журналистне Федот Ҫиттана. Хӑй каланӑ пекех вилет чӑваш салтакӗ. Тапӑнса пынӑ чухне вӑл нимӗҫ дзочӗн амбразурине гранатӑпа чыхӑнтарать. Автоматчиксен сиксе тухнӑ эшкерӗ Алексей Горские алӑран амантать. Сывӑ хулӗпе тепӗр граната пенӗ чухне ӑна кӑкӑртан лектереҫҫӗ. Юлашки вӑйӗпе вӑл дзот ҫумӗнчи окопа сикнӗ, нимӗҫе хӑрах аллипе мӑйӗнчен ярса илсе йӑванса кайнӑ. Юлташӗсем ҫитнӗ ҫӗре вӑл, аллине тӑшманран вӗҫертмесӗрех, куҫӗсене хупнӑ. Ҫапла суворовла кӑтарнӑ чӑваш ачисем «русский рукопашный бой» мӗн иккенне. Ҫавӑнпа нимӗҫ вырӑспа алла-аллӑн ҫапӑҫма ӗмӗртен хӑранӑ!

Ира Община (Фомина) студентка Федот Ҫитта пурнӑҫӗпе пултарулӑхне тӗпчесе 1982 ҫулта паха диплом ӗҫӗ ҫырнӑччӗ. Унтанпа никам та фронтовик-писательсен еткерне пухса тишкермерӗ. Чӑваш халӑхӗн, патшалӑх ертӳлӗхӗн тӳрӗ тивӗҫӗ паттӑр ентешӗмӗрсен ырӑ ятне тивӗҫлӗ картса хурассиӗ. Аслӑ Ҫӗнтерӳ 65 ҫулӗ тӗлне вӑл пулаймарӗ. Укҫана сутӑннӑ ҫӗршыва паттӑрлӑх кирлӗ мар.

Ҫапах та, тылпа ҫарти калавҫӑсен речӗ татӑлмасть. Шупашкарта Иван Мучи («Кӑмӑллӑ старик», «Ыран», «Фотограф», «Пианино» 1944), Хв.Уяр («Ҫыру», 1944), А.Эсхель («Ҫӗр илемӗ», 1944) пиҫӗ калавсем пичетлеҫҫӗ. Фронтри хаҫатҫӑсемпе врачсем, артиллеристсем ҫырма вӑхӑт тупаҫҫӗ. Мӗтри Кибекӗн «Чӑрсӑр Антун» (1943), А.Талвирӑн «Вилмен пулсан» (1945), В. Долговӑн «Тӗлӗнмелле винтовка» (1943), «Хастар пулеметчик» (1945), Иван Вашкин «Тепре куриччен» (1945) калавӗсем ҫар новеллистикин ӳллӗ сентри ҫине тӑма пултарчӗҫ.

Фронтри лару-тӑрура Николай Евдокимов, Куҫма Пайраш врачсем литература ӗҫӗ валли мӗнле майпа

хăват тупнă – ăна вĕсем хăйсем кăна пĕлнĕ ĕнтĕ. Н.Е.Евдокимовăн литературăри шăпи телейсĕр килнĕ–нимĕç тыткĕнĕнче пулнине кура ăна пичетленме май памарĕç, алçырăвĕсем кĕнеке кăларăшне çитсен те çухалчĕç. Кузьма Ильич Пайраш врач, вăрçăченех лирикăлла-психологилле калавсемпе вулакан асне кĕрсе юлнă çыравçă, фронтран Шупашкара çĕнĕ калавсем парса тăнă. Унăн калавĕсем пиçĕ, тирпейлĕ, таса шухăш-туйăмлă. К.Пайраш сăнарĕсем – асра юлакан сăнарсем. Çын шухăшĕпе кăмăлĕн пин тĕрлĕ вылянӑвне кăтартас енĕпе вăл Хветĕр Уяр çыравçа çывăх. Уяр – ăста психолог. Пĕчĕк пайрăм урлах вăл тем пекех пысăк шухăш, тем пекех хаклă сăнар тума пултарать. Нимĕç парашютистне вăрман тăрăх сыхласа пыракан шур сухаллă ватта кăтартса, Уяр тăшманăн пархатарсăр хевтине уçса парать («Шурлăхри вилĕм»). «Тăвансем кĕтеççĕ» калав вăрçă вăхăчĕн йывăрлăхĕсене тăлăха юлнă картпа мăнукĕн шăпи урлă кăтартнă. Хирти сарă чечек пек чипер Стасика нимĕçсем персе вĕлернĕ хыççăн шурă юр пек шурă çӳçлĕ суккăр карт тăр пĕччен тăрса юлать. Вăл юлашки шанчăкĕпе тăван çар çĕнтерсе килессе кĕтет. Тавăру ĕмĕчĕпе ирттерет вăл юлашки кунĕсене. Калав шкул программине кĕме тивĕçлĕ пулнă.

Детектив еннелле туртăнакан Максим Чалдун вăрçă шульăшне витĕр кăтартакан вилĕмсĕр калавсем парса хăварнă. Вĕсенчен пĕри – «Лизавета Егоровна» калавĕ Колхоз председателĕ çинчен вăл. Нимĕçсем ăна пылпа çу сĕнеççĕ – итлемест вĕсене хĕрарăм. Фашистсем унăн икĕ куçне хĕртнĕ пăшатанпа чиксе шăтараççĕ. Хĕрарăм парăнмасть. Пĕтĕм хуçалăха кĕллентерсе тăкма, тăшмана пĕр пĕрчĕ те лекмелле мар тăвать вăл. Пĕр шутласан, ĕненмелле мар. Франци нимĕçсемпе çапăçмасăр парăнать, вырăс çĕрĕ вара паттăр çине паттăр çуратать. Çав паттăрсем çĕнтернĕ тăшмана.

Повеçсем пирки те мухтанса калама май килмест. Ăнăçлă повеçсем Л.Я.Агаковăн пур, ыттисем çирĕп никĕс хывса хăварайман. Илпек Микулайĕн «Госпитальте» (1942) халайĕ – ыттисенчен лайăхраххи, шкул программине кĕме тивĕçлĕ пулни – вăхăтĕнче

пичетленсе тухайман. Вăрçă хыççăн тин (1947) вулакан патне çитнĕ вăл. «Тăвата кун». «Эпир – совет салтакĕсем» – Н.Ф.Илпекăн вăрçă çулĕсенчи лайăх хайлавĕсем.

Вăрçă çулĕсенче çырнă халайсенчен çаксене палăртса хăварăпăр: Н.Волковăн «Парне», С.Асланăн «Аслати», Илпек Микулайĕн «Ирена», Леонид Агаковăн «Мурат партизан», «Вилĕмрен те вăйлăрах», «Хĕрача», Иван Саламбекăн «Иксĕлми шанчăк». С.Асланăн «Аслати» повеçĕ Б.Горбатов хускатнă партизан кĕрешĕвĕн мĕнтелнех хускатать, самаях çивĕч йĕрсем хывать. Павел Призантин сăнарĕ ĕнентерӳллĕ пулса тухнă. Халая кайран «очеркла пулса тухнă» тесе хакланă. Очеркла пулни хайлав япăх иккенне пĕлтермест. Ятарласа очеркла çырнă хайлавсемте сахал мар.

Л.Агаковăн «Хĕрача» повеçĕ 1944 çулта «Тăван Атăл» журналта (19 №) пичетленнĕ. Вăл 12 сыпăклă. Ашшĕ колхоз бригадирĕ, амăшĕ фермăра ĕçлет. Пиччĕшĕ – Ястребов – летчик. Шăллĕпе амăшĕ вилеççĕ, ашшĕ выльăхсене хăваласа каять. Ял пушанса юлать, Улттăмĕш класс хĕрачи Таня юлать ватăсемпе пĕрле. Таня кĕçех ача çуртне лекет, унта хăйĕн пиччĕшĕ Совет Союзĕн Геройĕ иккенне пĕлет. Çыру вăрах кĕттерет, анчах йăмăкне паттăр пиччĕшĕ шыраса тупатех.

Чăваш литература пĕлĕвĕ ку хайлавсене тивĕçлипе хакласа тишкернĕ. «Пурнăçа анлăн сăнласа кăтартас тата геройсен кашнин хăйне майлă характерне уçса парас енĕпе илсен, Л.Агаковăн «Вилĕмрен те вăйлăрах» повеçĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вăл писатель пултарулăхĕшĕн кăна мар, вăрçă çулĕсенчи пĕтĕм чăваш прозишĕн те çĕнĕ утăм пулса тăчĕ темелле» *(Чăваш совет литертури, 1972, 213),*

## VI. 1941–1945 ÇУЛСЕНЧИ ЧӐВАШ ДРАМАТУРГИЙĔ
### *Тăван çĕршыв Аслă вăрçи çулĕсенчи пьесăсем*

**Николай Айзман**. Патриотсем *(Илемлĕ литература, 1941, 11)*. – Паттăрсем (1942, И.С.Максимов – *Кошкинскипе пĕрле çырнă)*. – Лиза Короткова (1943).

**Михаил Белов**. Пурнăç пуçламăшĕ *(И.С.Тукташ калавĕ тăрăх, 7 картинăллă драма. - Ш., 19417-48 ен)*.

**Максим Данилов-Чалдун**. Çăлтăрлă çĕлĕк (3 пайлă, 6 картинăллă пьеса. - Ш.,1941. -32 ен).

**Александр Кăлган**. Иван Кадыков (Октябрь хум.).- *(Сцена çине 1942 çулта кăларнă; Илемлĕ литература, 1944, 11)*. Анисса

**Иоаким Максимов-Кошкинский**. Савнисем. – Улăпсем *(Н.С. Айзманпа пĕрле çырнă)*. – Ăру вĕçĕ (Пугачев парни). – Сенкер иккĕ. – Пирĕн ачасем (Ачамăрсем). – Телейлĕ çуркунне (комеди).

**Никифор Мранькка**. Бурлаксем (Элнет, 4 пайлă, 9 картинăллă драма. - Ш., 1941. - 83 ен). - Юншăн – юн.- Амăшĕн ылханĕ (пĕр пайлă пьеса; *Чăваш коммуни, 1942, ноябрĕн 24-26-мĕшĕсем)*. – Ванюшин сержант.

**Ефим Никитин**. Тăван çĕршывшăн (1941).

**Петр Осипов**. Тăван Çĕршывра (1945).

**Тихăн Петĕркки**. Ĕмĕт (3 пайлă драма. - Ш., 1942, - 50 ен). – Тапрану *(Илемлĕ литература, 1941,5)*.

**Ухсай Яккăвĕ** Тутимĕр *(сăвăллă трагеди; Илемлĕ литература, 1941, 4; вырăсла - 1944, 18)*.

**Куçма Чулкаç**. Масар ялĕсем (пĕр пайлă комеди, Ш., 1941. -38 ен).

**Чаршав уçăлсан** (ялти эстрада сборник.; Н.Айзман пухса хатĕрленĕ. - Ш., 1945. - 111 ен) .

**Семен Элкер**. Чакка (драма, «Хĕн-хур айĕнче» поэма тăрăх Ф. Трофимов йĕркеленĕ) .

**Аркадий Эсхель**. Çĕрпе кăвак тӳпе *(«Çăка чечеке ларнă ир» калав тăрăх, 1942)*.

**Сергей Ялавин**. Çăлăнăç çулĕ *(Илемлĕ литература, 1941, 3)*.

Тăван Çĕршыв аслă вăрçи чăваш дарматургийĕнче паллă йĕр хăварнă. мĕншĕн тесен инçесассăр, инçекурăмсăр, хаçат-журналсăр хĕрӳ кунсенче халăха пĕрлештерсе хыпарласа тăракан вырăн – сцена - пушă тăма пултарайман Малтанхи уйăхсенчех ялти-хулари чăваш сцени (уйрăмах «Капкăн» журнала вулама юратакан шкул ачисем) фашизма питлекен пĕчĕк шилĕк-сценкăсем, паллă хайлавсенчен йĕркеленĕ инсценировкăсем, пĕр актлă пьесăсем, кулăшла юптарусем, драмăллă фельетонсемпе вичкĕн питлевлĕ памфлетсем кăтартнă. Колхоз театрĕсем лăпланман. Ку вăл халăх хастарлăхĕ пулнă. Хăйсемех çырнă, майланă, вылянă. Шилĕк сăмахĕн ăстисем тӳрех вичкĕн хайлавсем çырса пама ĕлкĕреймен. Вĕсен йышĕ те сасартăках сахалланса юлнă: унччен сцена валли çырнă С.Абаш, Л.Агаков, В.Алакер, М.Аруй, М.Белов, И.Викторов, Е.Еллиев, Р. Иванов, Н.Мранькка, Ф.Николаев, Тихăн Петĕркки, Л.Родионов, Я.Ухсай, Г.Харлампьев, С.Ялавин тата ыттисем вăрçа тухса кайнă.

Вăрçă вăхăтĕнчи драматурги фронтра пулман çыравçăсем И.С.Максимов-Кошкинский, Н.С.Айзман, А.А.Эсхель, А.Д.Кăлкан, Е.Н.Никитин, К.А.Чулкаç хулĕсем çине выртнă. Вĕсем ятарласа çар сценкисемпе пьесăсем çырнă. Пьесăсен пахалăхĕ тĕрлĕрен. Ăнăçлăраххисене литература тĕпчевçисем (Н.С. Дедушкин, Н.С.Павлов, Ф.А.Романова) тĕплĕ тишкернĕ тата каярахпа Н.Айзман, А.Кăлкан, И.Максимов-Кошкинский хайлавĕсене шкулти вĕренӳ кĕнекисене кĕртнĕ.

Чăваш драматургийĕ сценăпа, театрпа тачă çыхăннă. Чăваш драматургĕсем сунтăхра упрама çырман, ялан тенĕ пекех сцена ыйтнăран ăшталаннă. Апла пулин те, 1941-1945 çулсенчи театрсемпе драматурги хутшăнăвĕ кăткăс йĕрпе пынă, пур-çук çинчех ăста драматургсене ура хурса сивĕтнĕ. Сăлтавĕ кăткăс мар – театр авторĕсем выçă лармаççĕ. Театртисем ертӳçĕсене хирĕçлеме хăяйман, аякрисен пуç çинче урăх шухăшсем явăннă. Вăрçă вăхăчĕ 37-мĕш çул пекех хаяр та шелсĕр иртнĕ. Тани Юн аса илнĕ тăрăх, ватă драматург-режиссера И.С.Максимов–Кошкинские вăрах вăхăт тĕп

театрпа колхоз театрĕсенче çул памасăр муритленĕ. Пулнă ун пекки. Ухсай Яккăвĕ фронтран ятарласа ярса панă «Кĕпер» драмине (ăна Ухсай вилес умĕн те аса илетчĕ) театр «çухатнă» (Е.Еллиев драмине «çухатнă» пекех). Чăвашсен тĕп театрĕ – хăватлă театр, çавăнпа ун ăшĕнче кирек хăçан та шалти хĕрĕçӳ пытанса пырать.

Çакă пултарулăх шайне хытах чарса тăнă. Паллах, сăлтавĕсем тĕрлĕрен – фронтовик-драматургсен вăхăт пулманни, тылри çыравçăсем чăнласа фактсемпе усă курайманни, театрпа фронт хушшинчи çыхăну хавшакки... Ку пулăм чăваш драматургине кăна пырса тивмен. Ытти нумай çĕрте те çак пăтăрмахах сиксе тухнă.

Вырăс театрĕсенче, вырăсла журналсенче вăрçă вăхăтĕнче халăх умне темиçе çĕр пьеса тухнă, анчах вĕсенчен нумайăшĕ ним йĕрсĕр çухалнă. «За четыре года войны глубокий след оставили, в сущности, лишь некоторые, буквально единичные», – тенĕ нумай нациллĕ литература историйĕнче *(3 том, 105 ен).* Л.Леонов («Нашествие»), А.Корнейчук («Фронт»), К.Симонов («Русские люди») пьесисем çеç литература çӳлĕкĕ çинче ĕмĕр кивелми тăраççĕ. Вырăс драматургийĕн тĕслĕхĕсем чăваш сценарисчĕсемшĕн тӳрех шăл çемми пулса тăрайман. «Фронт» пек япала çырма фронтĕнче пулса курмалла! Фронтри чăваш писателĕсен драма çырас туртăм аталанайман тата çырнисене сăлтавсăр сăлтавпа чăваш театрĕсем йышăнмасăр тăнă.

Сцена валли çырса пичетленĕ хайлавсем икĕ пысăк ушкăна пайланса тăраççĕ. Вăрçăчченхи паттăрлăх хавхиллĕ пьесăсем нумайрах: М.Данилов–Чалдунăн «Çăлтăрлă çĕлĕк», С. Элкерĕн «Чакка», И.Тукташăн «Пурнăç пуçламăшĕ», И.Максимов-Кошкинскин «Пугачев парни», Н.Мраньккан «Элнет», К.Чулкаçăн «Масар ялĕсем», А.Кăлканăн «Иван Кадыков», Ухсай Яккăвĕн «Тутимĕр», С.Ялавинăн «Çăлăнăç çулĕ» тата темиçе пĕчĕкрех инсценировка. Ятарласа Тăван Çĕршыв аслă вăрçи вăхăтне кăтартакан драмăсемпе комедисене Н.Айзман, И.Максимов-Кошкинский, Н.Мранькка,

Е.Никитин, П.Осипов, А.Эсхель пичетлеме, сцена çине кăларма пултарнă. Фронтран янă хайлавсенчен Н.Мранькан драмисем кăна Чăваш академи драма театрĕн сцени çине тухнă.

Шупашкарти драматургсенчен палли – чăваш театрĕн корифейĕ И.С.Максимов-Кошкинский – Тăван Çĕршыв вутра çуннă вăхăтра çулсерен пĕрер пьеса – пурĕ пилĕк пьеса кăларнă: «Пугачев парни» (Ăру вĕçĕ, 1940-1942), «Савнисем» (1941), «Улăпсем» (Паттăрсем, 1942, Н.Айзманпа пĕрле çырнă), «Сенкер иккĕ» (1943), «Ачамăрсем» (Пирĕн ачасем, 1945), тата вăрçă хыççăн - «Телейлĕ çуркунне» камит (1945). «Халăх тăшманĕ» ятне илтнĕ çыравçăшăн çак хайлавсем – паттăрлăх утăмĕсем.

«Савнисем» (1941) пьесăри ĕçсем Карелие пурăнма куçса кайнă чăвашсемпе пулса иртеççĕ. Вăрçă вĕсене партизансен отрячĕсене пĕрлештерет, вăрçă вĕсене курайманлăхпа юрату вутĕнче тĕрĕслет. Паллах, васкавлă çырнă драмăсем вăрçă хирĕнчи е тылри пурнăçа, вăрçă йывăрлăхĕсене, пурнăçпа вилĕм хушшинчи тĕрĕслĕхе, халăх философийĕн тĕшшине тӳрех туллин уçса пама пултарайман. Агитаци плакачĕн шайĕнче пулса тухнă малтанхи пьесăсем. Вĕсен жанрĕсене те драматургсем уççăн палăртма хăюлăх çитерейменни çавăнтанах тухнă.

Пурнăçран илсе çырнă «Сенкер иккĕ» (1942) драма геройĕ – совет Союзĕн Геройĕ Федот Орлов (пьесăра – Фролов) летчик. Унăн ачалăхне, фронтри паттăрлăхне, эскадрильăри летчиксен туслăхне, тăшман тылĕнчи разведчиксен çирĕплĕхне драма витĕмлĕ те ĕнентерӳллĕ кăтартса панă. Чапа тухнă фронтовик спектакле курма (1944) Шупашкара хăйĕн самолечĕпе ятарласа вĕçсе килнĕ. Çакă вăл вăхăтшăн – хаваслă, шанчăк парнелекен, инçех юлман çĕнтерĕве çирĕплетекен пысăк пулăм.

Вăхăт паттăр аваллăха аса илтернĕрен истори хайлавĕсем çуралнă. Истори лăпкă вăхăтра манăçа тухать, канăççăр кунсем çитсен ирĕксĕрех иртнĕ асапсене мĕнле чăтса та çĕнсе иртгерни умма тухать.

И.С.Максимов-Кошкинскин 1940 çулта революци вăхăтне кăтартса çырнă «Ăру вĕçĕ» паттăрлăх драми

1942 çулта «Илемлĕ литература» альманахра пичетленет, анчах шăпах вырăнлă пулсан та – сцена çине тухаймасть. «Ăру вĕçĕ» – кăткăс драма. Пугачев улпутсенчен туртса илсе хресченсене тавăрса панă çĕр çинче каллех çапăçу пырать. Керенскин вăхăтлăх правительстви хресченсене хирĕç пăшал ярать. Абдрахманпа Мухамедьян тутарсем, чăвашĕ, вырăссем Ваня батракпа Трифон, Петр Петров учительпе Глинский пуянсем, чухăнĕ, салтакĕ, Саваламан эсер, Вера Цветкова большевик, хĕрĕ, арĕ – халăх кĕрлет драмăра. Вăл тĕрĕслĕхшĕн, ирĕкшĕн тăрать. Хăйĕн тарпа та юнпа шăварăннă çĕрне улпут майринчен туртса илет. Çĕнтерӳпе вĕçленет халăхăн пĕрлехи кĕрешĕвĕ.

Н.Айзманпа пĕрле çар темипе ятарласа çырнă малтанхи чăвашла тулли пьеси – «Улăпсем» (Паттăрсем, 1942), каярах çырнă пулсан та, ăнăçлă пулса тухайман,- тесе палăртнă тĕпчевçĕсем *(Н.С.Дедушкин. Чăваш совет литератури, 1972, 249 ен).* Драма Чăваш академи драма театрĕн сцени çине 1942 çулхи çу уйăхĕнче тухнă. Драматургсем халăх халапĕ патне таврăнни ăнсăртран мар. Анчах пьеса илемлĕх, сăнарлăх енчен ăнăçлă пулса тухнă теме çук. Вăхăт уçăмлă, фактлă, çивĕч тытăçури чăнлăха уçса паракан хайлавсем кĕтнĕ. Çыравçăсен алă айĕнче Элтешлĕх (граждан) вăрçин асилĕвĕсем кăна пулнă-ха. Хаяр вăрçăн тарĕпе тĕтĕмне, çĕнтерӳ шанăçне вĕсем тĕппи ăнкарса илеймен. Апла пулин те – малтанхи утăма ăнăçлă пуснă, ялсем тăрăх çӳресе халăхпа клубсемпе сарайсенче е кил картинчех куçа куçăн Улăпла хӳтĕленӳ çинчен калаçма пуçланă. Çакă ун чухнехи канăçсăр вăхăтшăн темрен та кирлĕрех пулнă. Çакна артистсем лайăх ăнланнă, халăх кĕтнĕ пек çивĕчлетсе вылянă.

Сцена çине маларах кăларнă Н.Айзманăн «Патриотсем» (1941), Е. Никитинăн «Тăван çĕршывшăн» (1942), Н.Мранькан «Юншăн – юн» (1942), пьесисене кăтартнă чухне çынсем калана сĕнӳсене режиссерсем шута илсе якатсах пынă. «Патриотсем» пьесăра чăваш çыннисем Марьепе ачи тата амăшĕ Малани кил пуçне Ивана нимĕçсемпе вăрçма пиллесе ăсатаççĕ. «Юншăн –

юн!» пьесăра фашистсем картпа карчăка, пĕчĕк ачана, ытти çынсене чиксе те персе вĕлереççĕ. Белоруссия çĕрĕ вутпа çунать. Анчах драма текстĕнче психологизм та, пĕтĕмлетӳллĕ е харкам сăнарлăх та çук. Вĕсене пултаруллă артистсем хăйсенчен кăларса вăйлатнă. Чăваш радио паракан пьсăсене артистсем уççăн вăйлатса вуланине аса илӳсенче темиçе те палăртса хăварнă.

Куçса çӳрекен агитбригадăсемпе шкул ачисен «кустăрма çинчи театрĕсен» агитсценкисене ытларах чухне вĕрентекенсем хаçатсенчи материалсем е радио хыпарĕсем тăрăх хăйсемех майлаштарнă. Унта шӳт те, питлев те, ăшă кулă та çаврăннă. Колхоз хирĕнче, фермăра, аманнисен госпиталĕсенче кăтартнă вĕсене. Килĕшнĕ халăха çав пĕчĕк концерт-пьесăсем. Шел, эпир вĕсемпе тата халăх умне инçесеспа е шилĕк урлă тухнă текстсемпе усă кураймастпăр – вĕсене упраса хăварман, радиопа халăх, колхоз театрĕсен ятран тĕпчевçисем пулман.

С.Элкерĕн «Хĕн-хур айĕнче» поэми тăрăх Ф.Трофимов «Чакка» драма йĕркелет. Чăваш тĕп театрĕ 1942 çулта А. Кăлканăн «Иван Кадыков» (кайранхи ячĕ – «Октябрь хумĕ») историллĕ драмине лартать. Сăвăласа çырнă драма – трагеди шайне çитерме шутланă ĕç. Паллах, трагеди пулса тухайман. Апла пулин те халăхра анлă палăрнă паттăр çын (ун ятне Шупашкар варринчи тĕп урама панă) Иван Кадыков сăнарĕ, 1918 çулта совет влаçĕшĕн чи хаяр кĕрешӳ пынă кунсенче Шупашкар хула Совечĕн председателĕ пулнă, ĕçлекен халăхшăн, рабочисемшĕн пуçне паттăррăн хунă ентеш сăнарĕ куракансене хытă килĕшнĕ. Халăх телейĕшĕн пурнăçа шеллемен çынсене чăваш халăхĕ ĕмĕрсенче хисепленĕ. Паттăрлăх туйăмне хавхалантаракан спектакльсем куракансене канăç, шанчăк, вăй-хăват тупма пулăшнă. «Кадыков сăнарĕ – чăваш литературинчи революционерсен чи вăйлă сăнарĕсенчен пĕри» (Н.Дедушкин).

Ухсай Яккăвĕн «Тутимĕр» трагедийĕ вăрçă кунĕсенче çĕнĕлле илтĕнсе каять. Ăна театрсем, халăх пултарулăх

ушкӑнӗсем пултарнӑ таран ҫӗкленӳпе выля-выля параҫҫӗ. Вӑл сцена ҫине вырӑсла та тухать.

Вӑрҫӑ ҫулӗсенчи чӑваш драматургийӗпе сценин пысӑк утӑмӗ – Н.С.Айзманӑн «Лиза Короткова» (1943) пьесине лартни. Унта синкерсен вӑхӑтӗнче чӑваш хӗрарӑмӗн чӑтӑмлӑхӗпе паттӑрлӑхӗ нихҫанхинчен вӑйлӑ уҫӑлса пынине чӑнласах драматурги ӑсталӑхӗпе туйӑмлӑн та курӑмлӑн кӑтартса пама пултарнӑ. Лиза Короткова – Нарспи, Саламби, Уках ретӗнчи сӑнар.

Ватӑ карт Спиридон Коротков ывӑлне – колхоз председательне Платона авлантарать, ялти чи хитре те правур хӗре Лизӑна кине илсе килет. Туй «Кубанские казаки» фильмри пекех хаваслӑ шавлать.

Туй вӑхӑтӗнче яла тӗрмерен кулак ачи Якур вӑрӑ таврӑнать, ун хыҫҫӑнах вӑрҫӑ тухни ҫинчен пӗлтереҫҫӗ. Ҫапла тӳрех хирӗҫӳллӗ пуҫланать драма. Вӑрҫа тухса кайнӑ упӑшки вырӑнне председателе Лизӑна лартаҫҫӗ. Йывӑр кунсем пуҫланаҫҫӗ. Фронт ялти ватӑ-вӗтӗрен юлашки вӑй-хала ыйтать. Сутӑнчӑк Якура пула фронтра Платон тыткӑна лекет. Килте чӑтма ҫук йывӑр. Ӑш ҫунать. Пӗрлехи хуйхӑ, пӗрлехи ӗҫ яла тӑванлатать. Халӑх председатель тавра чӑмӑртанать. Ватӑ Спиридон кинне хавхалантарсах пырать: председателӗн чакма, нӑйкӑшма юрамасть – ҫынсем ун ҫине пӑхаҫҫӗ, тӗслӗх илеҫҫӗ. «Куҫ хӑрать те алӑ тӑвать».

Н.С.Айзман – ӑста психолог, ӑста ҫыравҫӑ. Аслӑ хирӗҫтӑру ҫӗршывсене ҫапӑҫтарать. Вӑлах ҫынсене картан икӗ енне тӑратать, вӑлах Платонсемпе Якурсене вилмелле хирӗҫтерет. Сутӑнчӑк Якур яла таврӑнать, элек сарать, Лизӑна хапсӑнать. Айзман питех те вирлӗ ӗртӗ (сюжет) тупма пултарнӑ, чылай каярахпа ҫак ӗртӗ А.С.Артемьевӑн «Симӗс ылтӑн» халайӗнче (Актаев, Варсун, Нина сӑнарӗсенче), Леонид Петриковӑн «Время черного солнца» романӗнче тепре курӑнчӗ.

Паттӑрсем хыпарсӑр ҫухалмаҫҫӗ, айванла вилмеҫҫӗ. Кӑткӑс лару-тӑрура тӗрӗс утӑм тума пӗлни, чӑрсӑрлӑхпа хӑюлӑх паттӑра кӑларать те вӗсене. Платон нимӗҫ тыткӑнӗнчен хӑтӑлать, партизансен отрядне лекет. Хӗрлӗ ҫарпа пӗрлешсен киле курма килет, сутӑнчӑка тӑрӑ шыв

çине кăларать. Драматург тĕрĕс йĕрсем, ĕненмелле хутшăнусем тума пултарнă. Платон пекех, Якур – йăнăçлă сăнар. Спиридон мучи, Лиза Короткова, Матрӳне – пĕтĕм драма – Н.Айзманăн литературăри çĕнтерĕвĕ.

Çакăн пекех хивре ёртĕллĕ хайлавсен шутне А.А. Эсхелĕн «Çĕрпе кăвак тӳпе» (Тăван Атăл, 1945, 21) драмине кĕртмелле. Унта 1942-1943 çулсенчи йывăр вăхăтри ял ӳкерĕннĕ. Çарсем Сталинграда тытса тăрас тесе пĕтĕм вăйпа талпăнаççĕ. Тăшман çак вăхăтра Совет Союзĕнчи халăхсене хирĕçтерсе яма хăтланнине, ялсене диверсантсем янине кăтартнă. Чăваш ялне Тиркарпи кулак вăрттăн килсе çитет, анчах та чăваш çынни питех те тĕплĕ çын. Уншăн Тăван Çĕршыв хăйĕнчен те хаклăрах. Вăл Тарас Бульба пекех – кулака кăна мар, сутăнчăк ывăлне те шеллесе тăмасть. Чубукаев мучи тарса çӳрекен ывăлне влаçа тытса парать.

Вăрçă вăхăтĕнче Н.Мранькка фронтран çырса янă «Ванюшин сержант» (1944) драми ял-хула тăрăх çĕр-çĕр хут кĕрлесе çӳренĕ, пьесăна куракансем хапăлласа йышăннă («1944 çулта 147 хут кăтартнă»,-тенĕ ун пирки Ф.Романова тĕпчевçĕ).

П.Н.Осипов «Тăван çĕршывра» пьесине (1945) тĕп театрта ларттарать. Ăна вăл кайран чылай тӳрлетет, улăштарать. Пьеса вăрçă вăхăтĕнчи драматургие пуянлатаймасть. Ăна ача-пăча та лартаймасть.

Чăваш çыравçисен 1944 çулхи пухăвĕнче ачасене хăйсене выляма ачасем çинчен çырнă япаласем ытларах кирли çинчен хытах калаçса илеççĕ. Л.Агаков çак ыйтăва пичетре темиçе хут та хускатать. Вара И.С. Максимов-Кошкинский, калаçса татăлнă пекех, «Пирĕн ачасем» («Ачамăрсем») пьеса çырса парать. Вăрçă ачисем ялта та – вăрçă ачисемех. Вĕсен чунĕсем – пиччĕшĕсемпе ашшĕсем патĕнче, фронтра. Вĕсем фронтшăн ĕçлеççĕ. Чăтаççĕ. Тӳсеççĕ. Хайлава XXI ĕмĕрти шкул ачисем кăмăлласа йышăнаççĕ – вĕсем вăрçă вăхăтĕнчи тантăшĕсен пурнăçне ун тăрăх куç умне кăларса тишкереççĕ. Пьесăна «Чăваш сăмахлăхĕ» (10 класс валли, 1993) вĕрентĕке кĕртнĕ.

«Вăрçă çулĕсенчи чăваш драматургийĕ çĕнĕ темăсемпе, çĕнĕ сăнарсемпе пуянланчĕ. Ун пек произведенисем куракансен патриотла туйăмĕсене ӳстерме нумай пулăшрĕç, совет халăхĕн ирĕклĕ те телейлĕ пурнăçĕшĕн пыракан аслă кĕрешĕвĕнче чăваш халăхне паттăр та хăюллă пулма чĕнсе тăчĕç» (Чăваш совет литератури. Ш., 1972, 251 ен).

# VII. ВĂРÇĂ ВĂХĂТӲНЧИ ЛИТЕРАТУРА КРИТИКИ

Литература критики вăрçă кунĕсенче пĕтĕмпех сӳнсе ларман. Çĕнĕ произведенисем тухсан (А. Эсхелĕн «Ăмăрткайăк» Чăв. кĕнеке изд-ви, 1943) поэмине вулакансемпе писательсем хаçат-журналсенче сӳтсе явнă (Чăваш коммуни, 1943, июнь, 13). Шупашкара куçса килнĕ преподавательсем, госпитальсенче выртакан писательсемпе тĕпчевçĕсем пичетленнĕ (В. Иванов, И.Сутягин, К. Кулиев).

Çĕнĕ кĕнекесем çинчен рецензисемпе критикăлла статьясем пичетленсех пынă. 1941 çулта «Илемлĕ литература» журналта 8-мĕш кĕнекинче В. Долговăн «Геройсем çинчен çырнă кĕнекесем» тишкерĕвĕ тухнă. Вăл А. Эсхель, Ф. Çитта кĕнекисене хакланă.

Д. Данилов писатель-литературовед, ГИТИСра вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ пулнăскер, «Чăваш театрĕн çĕнĕ хунавĕ» статья пичетленĕ (Чăваш коммуни, 1942, авг., 1).

Л. Агаков «Ачасене паха кĕнекесем парар» (Чăваш коммуни, 1944, июнь, 7); «Халăх паха произведенисем кĕтет» (Чăваш коммуни, 1944, авг., 2) статьясем кăларать. Вĕсенче – вăхăт хистевĕ.

Иван Мучи «Чăвашла куçарусем çинчен» статьяра И. Крылов юптарăвĕсене, А. Чехов калавĕсене, вырăс былинисене куçарса кăларнă ĕçсене пахаланă. Литературăна тимлĕ сăнаканĕсенчен пĕри – Хв. Уяр. Сборниксене хакласа статьясем çырнă, вĕсене вăрçă вăхăтне юрăхлă ăнлантарса хăварнă.

Арк. Эсхель «Тăван халăхпа унăн литератури вăрçă кунĕсенче» статья («Илемлĕ литература», 1944, 16) кăларнă. Ку унăн писательсем умĕнче каламалли докладăн пайĕ шутланать.

Вăл Тайăр Тимккин «Сăвăсемпе калавсем» (1944) тата ытти кĕнекесене туллин мар пулин те пăхса тухса хакланă. Ку вăхăтшăн çакă та çителĕклĕ пулнă.

Хаçат-журнал уйрăм рецензисем пичетлесех тăрать. Пахалăхĕ пысăк мар, çавăнпа авторсем хăйсен ячĕсене «М.А.», «М.» кроптонимсемпе пытарса кăна çырнă. 1944 çулхи октябрĕн 23-мĕшĕнче «Тăван Атăл» альманах ĕçне сӳтсе явнă. Унта вăрçă вăхăтĕнче тухнă 12 кĕнекене пăхса тухса хакланă (Чăваш коммуни, 1944, окт., 25). «Паттăрсем» (1941), «Санюк сăвви-юррисем» (1941) тата ытти кĕнекесене вăрçă опычĕпе танлаштарса хак панă.

Критика ĕçĕсенчен палăртса хăвармаллисен шутне çаксене кĕртме юрать: Хв. Уярăн «Çапăçу эпизочĕсем» («Вăрçăра» сборник çинчен çырни) – «Илемлĕ литература», 1941, 8, с. 126-127 пичетленĕ.

В. Долговăн «Геройсем çинчен çырнă кĕнекесем» (А. Эсхель очеркĕсем, Ф. Ситта кĕнеки çинчен) статйи. Вăл «Илемлĕ литература» (1941, 8, с. 120-124) альманахра пичетленнĕ, унта хыпарлав кăна. Теори е истори ыйтăвĕсем çук.

Аслă вăрçă вăхăтĕнче чăваш литература пĕлĕвĕ тунă ĕçсене Н.С. Павлов тĕпчевçĕн «Краткий очерк истории чувашского литературоведения и критики» (1970) кĕнекере уйрăм пай туса тишкернĕ («Литературоведение в годы Великой Отечественной войны», с. 79-82).

Паллах, ку тĕпчев çумне хушса пуянлатмалли пур, анчах вăл çĕннине нумай памĕ – вăрçă вăхăтĕнче халăхпа çĕршыва литература тĕпчевĕнчен темчуль кирлĕрех урăх япаласем ытлашшипех нумай тупăннă, çавăнпа литература тĕпчевĕ валли вăрçă çулĕсенче вырăн та, кирли те пулман. Чăваш хушшинче уйрăмах.

**Вăрçă çулĕсенче пичетленнĕ кĕнекесем**

*(Тишкерӳ валли)*

1941-1945 çулсенче Чăваш кĕнеке кăларăшĕ 836 кĕнеке пичетлесе кăларнă. Вĕсенчен 120 кĕнеке – илемлĕ литература хайлавĕсем. Унта вырăсларан куçарнисем те пур. Чăвашла пичетленнисем – 444, вырăсла тухнисем – 392. Вĕсемпе тĕплĕн «Пичет летопиçĕ» журналта паллашма пулать. Пăрăнми паллашмалли ятсене кăтартса хăварăпăр.

Л. Агаков. Манăн туссем. Калавсем. Ш., Чăвашгосиздат, 1941.; Çапăçу хирĕнче.- Ш., 1944.

Афанасьев А. Телей уççи (сăмах-поэма).- Ш., 1944.

М. Данилов-Чалдун. Калавсем, Ш., Чăвашиздат, 1941

М. Данилов-Чалдун. Суйласа илнĕ калавсем.- Ш., 1945.

В. Долгов (Хударсем) Çурхи калавсем.- Ш., 1943.

М. Кибек. Тăван çĕршывшăн: калавсемпе очерксем.- Ш., 1941.

А. Медведев. Юлташ йĕрĕпе.- Ш., 1941.

Г. Савгай. Тивлет.- Ш., 1941.

К. Сергеев (Турхан). Атакăра.- Ш., 1941.

Ф. Ситта. Фронтри калавсем.- Ш., 1941.

Ф. Орлов Юрататăп эпĕ тăван çĕршыва.- Ш., Чăвашгосиздат, 1943.

Хв. Уяр. Йĕплĕ калавсем, 1941; Çĕлен-калтасем, 1941; Сукмак, 1941; Çулсем-йĕрсем, 1943.

Хĕрлĕ ялавпа: сб., 1941.

Арк. Эсхель. Икĕ герб (очерксем), Ш., 1942

*Вăрçă вăхăтĕнче чăвашла куçарса кăларнă кĕнекесенчен*

*Толстой А.* Кам вăл Гитлер тата вăл мĕн тăвасшăн.- Ш.,1941. - 8с.

Çынçиенсем: калав. – Ш.,1941.

*Симонов К.* Хĕрӳллĕ кунсем. - Ш.,1941.- 7 с.

*Цветков Я.* Танкистсем. - Ш.,1941.-7 с.

*Шолохов М.* Пулеметчиксен команди.–Ш., 1941.- 32 с.

*Вирта Н.* Партизансем. Ш., 1941.- 8 с.

*Кармен Р.* Çапăçу малалла пырать.- Ш., 1941.

Пирĕн вăхăтри чаплă летчик, Совет Союзĕн Геройĕ Валерий Павлович Чкалов: биографиллĕ очерк.- Ш., 1941. - 27 с.

*Рузов М.* Старший лейтенант Хорин танк.: калав.- Ш., 1941.-7 с.

*Савельев Л.,* Никифоров Н. Винтовкăпа та гранатăпа.- Ш., 1941.-24 с.

Карельски перешеекра Совет Союзĕн Геройĕсем каласа пани (Николай Григорьевпа Николай Чуковский çырса илнĕ. (К.Чулкаç куçарнă). - Ш.,1941.

*Злобин С.* Салават (К.Чулкаç куçарнă). - Ш., 1941.

*Катаев В.* Семен Котко: повесть.; Ш., 1941.-64 с.

*Панферов Ф.* Хамăн куçпа: пьеса (И.Пинер куçарнă). - Ш.,1942.

*Тихонов Н.* Ленинград калавĕсем. – Ш., 1942.-56 с.

*Спирин И.,* Совет Союзĕн Геройĕ. Летчик калавĕсем (А.Яндаш куçарнă)- Ш., 1942. - 80 с.

*Лидов П.* Таня (Хв.Уяр куçарнă). – Ш., 1943. 22 с.

*Горбатов Б.* Тарас килйышĕ (Л.Агаков куçарнă). - Ш.,1944.

*Хамăр ентешсем çинчен пичетленнĕ кĕнекесенчен*

*Макаров С.* В гостях у бойцов Красной Армии: делегация Чувашии на Западном фронте (в 324 дивизии). - Чебоксары, 1942.-68 с.

Сыны чувашского народа в Отечественной войне: рассказы и очерки. - Чебоксары,1943,-51 с.

*Макаров С.* Большое счастье: патриоты тыла.- Чебоксары, 1943.–8 с.

*Макаров С.* Мария Ширманова: очерк.- Чебоксары,1943.- 7 с.

*Тукташ И.* Павел Лаптев, Совет Союзĕн Геройĕ. – Ш., 1944.-32 с.

*Элкер С.,* Антонов А. Иван Поляков, Совет Союзĕн Геройĕ. – Ш., 1944.-26 с.

*Антонов А.* И. Поляков. - Чебоксары, 1944.-8 с.

В боях за Родину: знатные земляки – герои Отечественной войны.- Чебоксары, 1942.

*Первенцев А.*, Ивич А. Мирон Ефимов. - Чебоксары, 1944.

Чалтан вăрçи вăхăтĕнчи кĕнекесем хулăм мар. Малтанхи тапхăрта 7-8 страницăллă кăна тухнă вĕсем. Пĕр-пĕр инструкци пек. Ыйту çине васкавлă хурав панă пек. 1941 çулта вырăс публицистикин чи паллă хайлавĕсене куçарнă. Алексей Толстой, Константин Симонов, Михаил Шолохов, Николай Вирта, Федор Панферов, Николай Тихонов, Борис Горбатов, Валентин Катаев... Пурте чăваш вулаканне çывăх хайлавсем. Илле Эренбургăн вирлĕ статйисене чăвашла куçарман, мĕншĕн тесен вĕсене урăх çĕршывсенчи вулакансем валли çырнă. Унта каланă шухăшсем чăваш çыннин чунĕнче ахалех çирĕп ларнă. Кĕнекесен тиражĕсем тĕрлĕрен – 3 пинрен пуçласа 25 пин таран. Чăвашла пĕлекен, вырăсла пичетленнĕ çыравçă Сергей Макаров (1911-1969, педагог, «Красная Чувашия» хаçатра ĕçленĕ журналист, филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ) хастарлăхне палăртса хăвармалла. Вăл З.А.Андреева (ЧАССР Аслă Канашĕн председателĕ) ертсе пынă чăваш делегацийĕ салтаксем патне кайса килнине çырса пани – истори страници. 1942 çулхи

ака уйăхĕн 13-мĕшĕнче 9 çынлă ушкăн Чăваш республикинче йĕркеленĕ, чăвашсем шефа илнĕ 324-мĕш дивизие парнесем пама тухса кайнă. Фронтпа тыл пĕрлĕхне, паттăрĕсен ĕçне-хĕлне, хаяр вăрçă тискерлĕхне тата халăх çирĕплĕхне 11 пайлă кĕнекере журналист уçăмлă çырса пама пултарнă. Вăрçă хыççăн Сергей Макаров Иваново хулинче педагогика институтĕнче вĕрентнĕ, чăваш поэчĕсене вырăсла нумай куçарнă.

...Ятсем, хушаматсем, кĕнекесем. Паттăрлăх паллисем. Майĕпен вĕсем те манăçаççĕ.

Вăхăт вăл вĕç-хĕррисĕр вăрăм:

Çитĕ Кун – асилĕç-ха пире.

Çĕнтерӳ ялавĕпе эп пырăп,

Çитĕп завода та уй-хире! - тенĕ Иван Викторов пĕр сăввинче. Фашистсем ăна, ватă салтака, Д. Карбышев генерала шартлама сивĕре пăрлантарнă пек, пуçĕ çине шыв ярса, шăнтса лартса, кантăк витĕр куçĕсемпе тинкерсе пăхакан чĕрĕ палăк пек туса хăварнă...

Асилӳ уявĕсем нумай пулчĕç, кĕнекисене пухса кăлараймарăмăр. Паттăр салтак Иван Викторов ĕмĕтленнĕ Кун чăваша çитмен-ха. Константин Кольцов фронта тухса кайнă чухне, Максим Чалдун 34-мĕш атакăна кĕрес умĕн, Илле Семенов тăшманпа алла-аллăн тытăçса ӳкме хатĕрленсе каланă сăмахсем тăхăмĕсемшĕн салам та, халал та, ĕмĕтпе уйрăлу та пулса юлчĕç. Малашлăхпа Тăван Çĕршыва иккĕленмесĕр шанса, хăйсем тĕрĕс ĕçшĕн, халăхĕн телейĕшĕн çапăçнине пĕлсе, ячĕсене çĕнĕ ăрусем манмасса чĕререн ĕненсе пуç хунă вĕсем.

1941-1945 çулсенчи чăваш литератури паха хайлавсем нумай парайман, анчах пуррисем – истори чăнлавĕсем. Вĕсем хушшинче сăнарпа илем, хавхапа шухăш енчен пачах та кивелмен, наци ăнкарулăхне каярахпа тата та вичкĕнрех çĕклеме пуçланă хайлавсем те пур. Уйрăмах – поэзире. Вăрçă хыççăн чăваш çар сăввисемпе поэмисене, тĕрленчĕкĕсемпе калавĕсене темиçе хутчен те пухса кăларнă, анчах пĕринче те ĕçе тĕплĕ туман. Алă айĕнче пуррипе çырлахнă тата Граждан вăрçи çинчен унччен çырнисене, Чалтан вăрçи çинчен вăрçă хыççăн

хайланисене кĕртсе хăварнă. Тĕрĕссипе, Тăван Çĕршыв аслă вăрçинчи (1941-1945) литература пуххи хăйне уйрăм туллин те виçеллĕн, тĕнче шайĕнчи çынлăх виçипе, чăваш наци куçĕпе пăхса тухма тивĕç. Тăнăç пурăннă чухне ертӳлĕх кирек хăçан та халăхсен ăнкарулăхне пусарса пырать, хĕстерет, пĕрпеклетме тапаçланать. Анчах тĕнчен хăйĕн сакунĕ пур – пуç çине нуша ӳксен халăхсен танлăх туйăмĕ кăна патшалăха инкекрен туртса кăларма пултарать. Çакна Раççей ертӳлĕхĕ (унпа пĕрле наци территорийĕсен хăшпĕр ертӳçисем те) ниепле те тăна илсе ĕçлеме пултараймасть.

1965 çулта вăрçă вăхăтĕнчи вырăс повеçĕсемпе калавĕсене 2 пысăк томпа пухса кăларнăччĕ. Ытти халăхсем те çавăн пек паха кĕнекесем кăларчĕç. Чăваш хайлавĕсен тулли кăларăмĕ те кирлĕ. Тĕпчев институчĕ, икĕ университет кафедрисем çак ĕçе халиччен тахçанах туса пăрахма пултарнă. Халĕ те пулин тăвасах пулать.

**_Литература:_**


<u>*Хайлавсен пуххисем*</u>

*Хĕрлĕ ялавпа:* калавсемпе очерксем. Ш., 1941.

*Тăван Çĕршывшăн.* Тăван çĕршыв аслă вăрçинче вилнĕ çыравçăсен произведенийĕсем. - Ш.,1956.

*Вăрçă калавĕсем.* Л.Агаков пухса хатĕрленĕ. – Ш.,1958.

*Халăх хăвачĕ.* А.Алгапа Г.Ефимов пухса хатĕрленĕ. Ш.,1965.

*Вăрçăра:* калавсемпе сăвăсем: Л.Агаковпа Г.Орлов пухса хатĕрленĕ. Ш., 1968.

*Вĕçлеймен юрăсем.* Г.В. Лукоянов пухса хатĕрленĕ сăвăсем. - Ш., 1973.

*Сердце, пробитое пулей:* сост. В.Муражковский. Чебоксары, 1975.

*Юлашки юн тумламĕччен:* Г.Орлов хатĕрленĕ. Ш.,1980.

*Паттăрлăх кунĕсем.* П.А.Ялкир пухса хатĕрленĕ. Ш., 1995.

*Вăрçă аркатнă ĕмĕтсем:* П.А.Ялкир пухса хатĕрленĕ сăвăсем. - Ш., 2000.

Чувашская народная академия
Факультет чувашской филологии
ЧГПУ им. И.Я.Яковлева

**Серия «В помощь учителю»**

**Станьял Виталий Петрович**

# ЧУВАШСКАЯ ЛИТЕРАТУРА 1941-1945 гг.

(из серии вузовских лекций)

На чувашском языке

Ответственный за выпуск член-ассистент ЧНК
*А.В.Сорокин*
Компьютерный набор
*Т.А.Архиповой, Э.В.Васильевой*
Верстка *А.Г.Максимовой*

Подписано в печать 28.05.2010. Формат 60x84 /16.
Бумага офсетная. Печать оперативная.
Усл. печ. л. 7. Тираж 200 экз. Заказ № 216.

Отпечатано в типографии ИП Сорокина А.В. «Новое Время».
428034, г. Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, д. 50/1.
Тел.: 41-27-98, 46-43-46 E-mail:newtime1@mail.ru

40.00